С(ЧУВ)
К 19
22781-ЧУВ



АЛЬПĂРТ КАНАШ

# шăпчăксем, эп сире итлесе...

Национальная библиотека ЧР
4-022781
22781 чув

ЧӐВАШ КӖНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1978



Кор
К С(Чув)
К19

АЛЬПĂРТ ҪАНАШ

# Шăпчăксем, эп сире итлесе...

*Шухăшăмпа ĕмĕтĕм*

С (чув.)
К 19

Юхма Мишши пухса хатĕрленĕ

22781-чув

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

ПРОВЕРЕНО
2010

К $\frac{0763-059}{М 136(03)-78}$ 80—78

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1978 ç.

# *«Эп халăхшăн хал пухрăм...»*

## 1

Альпăрт Ҫанаш... Ача чухне вăл хăйĕн вуншар тантăшĕнчен нимĕнпех те уйрăлса тăман. Тен, кам пĕлет, пĕр-пĕр самолет вĕссе иртнине курсассăн ун ҫине ытти сенчен нумайрах пăхса тăнă пулĕ. Ана ун чухне тĕпсĕр тӳпе, инҫет илĕртнĕ... Ӳсерехпе вара унăн тепĕр пысăк ĕмĕт ҫуралнă — скульптор пуласси. Тăван халăхăн аслă та чаплă ывăл-хĕрĕсене чысласа ĕмĕрне манăҫми палăксем лартма ĕмĕтленнĕ вăл. Анчах... сасартăк ăна вуннăмĕш класра вĕреннĕ чухне йывăр чир ҫапса хуҫнă.

Альпăрт хăйсен ялĕнчи, Октябрьскинчи, пульницара выртнă, ăна Шупашкарти, Хусанти ăста тухтăрсем патне те илсе кайнă, анчах унăн чирĕ ҫаплипех иртмен, йывăрланнăҫемĕн йывăрлансах пынă. Акă ĕнтĕ ăна каялла ҫуралнă килне илсе таврăннă. Сиплесе сыватма ҫук ҫурăм шăмми чирĕ маттур чăваш ачине яланлăхах вырăн ҫине пăталаса хунă. «Йывăр-ҫке, йывăр! Ҫаврăнса выртма та, тăрса лармa та ҫук! Пĕтĕм пурнăҫа ҫапла выртсах иртермелле-ши ĕнтĕ? Ҫынсене, тăван халăха, ҫĕршыва ним усă кӳмесĕрех иртермелле-шим ĕнтĕ ĕмĕре? Ҫук, ҫук!..» Шухăш, шухăш, ытла та вĕҫĕ-хĕррисĕр, ытла та пысăк, ытла та вăйлă-ҫке эсĕ! Ниҫталла кайсассăн та чарăна пĕлместĕн. Сирĕнтен юлас килмест те ҫав чирлĕ выртакан чăваш ачин... Альпăрт чун-чĕринче кĕрешӳ кăварĕ тепĕр хут аталанса вăй илнĕ. Анчах йывăр чире ҫĕнтерме унпа пĕр шухăшлă пулса, ăна пулăшса пыракансем кирлĕ. Вĕсем те тупăннă, кĕнекесем ăна пулăшса пыраканĕсем, унăн юлташĕсем пулса тăнă. Николай Островскирен вĕренсе, чирлĕ Альпăрт кĕске корреспонденцисем, статьясем, унтан сăвăсем ҫырма тытăннă.

Кун пирки вăл хăйĕн пĕр сăввинче ҫапла каланă:

Эп ҫуралман поэт пулма,
Поэзи марччĕ «хĕҫĕм».
Савсах саваттăм сăрлама,
Тен, савăччĕ тĕп ĕҫĕм?

Эп çуралман поэт пулма,
Чир çеç перо тыттарчĕ:
Ăна чăн хĕç туса хума
Чун хăй приказ çаптарчĕ.

Альпăртăн малтанхи статйисемпе сăввисем колхозри стена хаçатĕнче, «Район тăрăх крокодил утать» сатирăпа кулăш листокĕнче, Октябрьски районĕнче тухса тăракан «Хĕрлĕ Октябрь» хаçатра пичетленме тытăнаççĕ, часах вĕсене Шупашкарти хаçат-журналсем те хаваспах кĕтсе илме пуçлаççĕ. Пирĕн поэзие çĕнĕ ят — Альпăрт Канаш ячĕ хутшăнать. «Ялав» журналăн 1953 çулхи çиччĕмĕш номерĕнче унăн пĕр ушкăн сăвви пичетленсе тухать. Митта Ваçлейĕ хăйĕн пысăк мар умсăмахĕнче çулăм чĕрелле поэт çинчен сăнарлă та питĕ тĕрĕс çырнă:

«Эпир Октябрьскинче, Альберт Канаш патĕнче. Хăнисем чылай аякран килнĕ пулсан та, хуçи вĕсене хирĕç тухмарĕ... Вăл вунă çул ĕнтĕ вырăнпа выртать.

Пысăк мар чие пахчи. Улмуççисем те пур. Хăмасем тăратса тунă шилĕк. Унта, ирсерен пуçтарма кирлĕ мар вырăн çинче, кăкăр таран витĕнсе, çамрăк сын — çăлтăр куçлă каччă выртать. Ана тăрса ларма та юрамасть. Анчах унăн илемлĕ те хастарлă сăн-пичĕ, чăлтăртатса тăракан куçĕсем халь-халь çĕкленсе каяс пек çамрăк ăмăрткайăка аса илтереççĕ. Шанчăксăр чирпе пăталаннă сын кун пек пулмасть! Ку вăл нихçан та шанчăка çухатман паттăр. Ахаль мар ун юратнă поэчĕ: «Шанчăк пуррисем телейлĕ»,— тенĕ.

А. Канаш, инкеке пăхмасăрах, халăхпа пĕрле, пĕр шухăш-кăмăлпа пурăнать... Вăл активлă ялкор, вырăнти хаçат унăн çивĕч сăмахĕсĕр тухмасть. Çакă ĕнтĕ — пултаруллă пурнăç — этем вăй-халĕн çăлкуçĕ... Чăнах та, этем тени пултаруллăхра иккен! Пултаруллă пулсан, этем сывă...»

2

Альпăрт Канашпа пĕрремĕш хут мана 1956 çулта курса калаçма тӳр килчĕ. Ун чухне эпĕ И. Я. Яковлев ячĕпе хисепленекен Чăваш педагогика институтĕн студенчĕччĕ, иккĕмĕш курс пĕтернĕ хыççăн пире Куславккари çурт тăвакан комбинат пионерлагерьне ĕçлеме ячĕç. Çуллахи пĕр кун вара эпĕ илĕм-тилĕмлех ял-ял витĕр

Куславккаран Октябрьскине, вырӑнпах выртакан тусӑма курма, ҫуранах тухса утрӑм.

Утнӑ май эпӗ Альпӑрт Канашӑн педагогика институтӗнчи литература кружокне килнӗ пӗрремӗш ҫыруне аса илсе пыратӑп. Ун чухне пирӗн литкружок лайӑх ӗҫлетчӗ, хӗрӗх ытла ҫамрӑк сӑвӑҫа пӗрлештерсе тӑратчӗ. Эпӗ литкружок старостиччӗ, те ҫавӑнпа ӗнтӗ Альпӑрт хӑйӗн пӗрремӗш ҫыруне ман ятпа ҫырнӑччӗ. Унта вӑл пире, techинститутри ҫамрӑк сӑвӑҫсене, республикӑри ытти литпӗрлешӳсемпе ҫыхӑну тытма, ялсене час-час тухса ҫӳреме хистенӗччӗ. «Сирте — пуласлӑх. Студентсем вӗсем халӑхӑн ҫунса-вӗресе тӑракан чи маттур вӑйӗ. Сирӗн республикӑри ҫамрӑксене коммунизм ҫӗнтерӗвӗшӗн, халӑх телейӗшӗн ӗҫлеме хавхалантарса тӑмалла»,— тенӗччӗ вӑл хӑй ҫырӑвӗнче.

Ҫавӑнтанпа эпир Альпӑртпа ҫыхӑну тытма пуҫларӑмӑр, пӗр-пӗрин патне ҫыру ҫӳретсех туслашса кайрӑмӑр.

Эпӗ пынӑ чухне те Альпӑрт Канаш чие садӗнче выртатчӗ.

Кӑнтӑрларан пуҫласа ӗнтрӗкчен калаҫрӑмӑр эпир унпа. Альпӑрт студентсен пурнӑҫӗ ҫинчен, techинститутри ҫамрӑк сӑвӑҫсем ҫинчен ыйта-ыйта пӗлчӗ. Ана кашни пулӑм, кашни ӗҫ интереслентерчӗ. Унтан эпир тӑван халӑхӑмӑрӑн иртсе кайнӑ кунҫулӗ пирки чылайччен калаҫрӑмӑр. Таса чун-чӗреллӗ патриотчӗ, малашлӑха курма пӗлекен маттур интернационалистчӗ вӑл. Ахальтен мар ӗнтӗ ҫулӑм чӗреллӗ поэт «тӑван халӑхна... юратмарӑн пулсан, ытти халӑха та саваймӑн нихҫан», «юрат хӑв халӑхна, вилсе кайса юрат, чунри чӗлӗхсене — ун чысӗшӗн янрат!», «Чӑрсӑр туйӑмпала ҫӗнтерсе ҫӗкленем, чаплӑ ӗмӗр ҫинчен сӑвӑсем кӗвӗлем» текен ӗмӗрне манӑҫми йӗркесем ҫыра-ҫыра хӑварчӗ.

Альпӑрт мана хӑйӗн ӗҫ планӗсемпе, ӗмӗчӗсемпе паллаштарчӗ. Ун чухне вӑл «Энӗш енчисем» ятлӑ поэма ҫыратчӗ. Кайран вара эпир сӑвӑсем вулама тытӑнтӑмӑр. Альпӑрт, Чӑваш Хветин, Константин Ивановӑн, Тайӑр Тимккин, Ҫеҫпӗл Мишшин, Митта Ваҫлейӗн чылай-чылай сӑввисене пӑхмасӑр калама пӗлетчӗ.

Юлашкинчен эпӗ вырӑнпа выртакан тусӑма тӗрлӗ районсенче хам ҫырса илнӗ чӑваш халӑх пултарулӑхӗн чи лайӑх тӗслӗхӗсемпе паллаштартӑм, ӳлӗмрен те ҫав ӗҫе туса пырас тесе ӗмӗтленнине каларӑм. Ку ӑна питӗ савӑнтарчӗ, вӑл мана ҫак ӗҫре пысӑк ҫитӗнӳсем тума вӑй-хал сунчӗ.

Çур кун ытла эпир унпа çапла пĕр канми калаçрăмăр, çапах калаçса тăранаймарăмăр. Альпăрт тусăмпала калаçса, мана çĕнĕ вăй, иксĕлми хăват хутшăннă пекех пулчĕ. Унран питĕ уйрăлас килместчĕ, анчах тепĕр кун ирех манăн ĕçе тухмаллаччĕ. Каçа хирĕç вара эпĕ, тусăмăн çутă сăнне чĕремре тытса, ун патĕнчен тухса кайрăм.

Унтанпа ёнтĕ эпир Альпăрт Канашпа сахал мар тĕл пулса калаçнă; кашни тĕлпулу мана телей, çĕнĕ вăй, çĕнĕ пултарулăх хушатчĕ.

3

Альпăрт Канаш (Кожанов Альберт Георгиевич) 1928 çулхи августăн 2-мĕшĕнче хальхи Сĕнтĕрвăрри районне кĕрекен Октябрьски (Ёсмĕл) ялĕнче çуралнă.

«Саккăр тултарсан эпĕ хамăр ялти шкулта вĕренме пуçларăм, вĕренессе вăтамран авантарах вĕренсе пыраттăм. Вуннă тултарсан пионера, вунпиллĕк тултарсан комсомола кĕтĕм. Обществăлла ĕçе эпĕ ялан кăмăллаттăм: 3-мĕш класран пуçласа мĕн вĕренме пăрахиччене е класри, е пĕтĕм шкулти стена хаçачĕсен редколлеги членĕ пулнăччĕ, кунсăр пуçне — юлашки çулсенче — комсомол комитетне те суйланăччĕ. Хаçатра ун чухне эпĕ пĕртен-пĕр художник ĕçне çеç туса тăраттăмччĕ, заметка тавраше çырма — пачах именеттĕмччĕ...»,— тесе каланă вăл хăйĕн аллипе çырса хăварнă автобиографийĕнче.

Альпăрт çемьери иккĕмĕш ача пулнă. Унăн икĕ çул аслăрах пиччĕшĕ тата шăллĕпе йăмăкĕ пулнă. Вĕсен ашшĕ, хĕрлĕ командир, ӳпке чирĕпе хĕне кайса вилнĕ. Тăвата ачине вара пурне те амăшĕ, колхоз ĕçĕнче ырми-канми ĕçлекен ырă кăмăллă, сăпайлă хĕрарăм, пăхса ӳстернĕ.

Хăйĕн çăмăл мар ачалăхĕ пирки поэт çапла çырса хăварнă:

«Шăмă туберкулезĕ манăн, анне каланă тăрăх, тăвата çула пуссассăнах пуçланнă... Чире аталанма хамăн канăçсăр кăмăл та («лара-тăра пĕлменни!») — сахал мар пулăшнă пулĕ: нимĕнле ача-пăча вăййинчен те пăрăнса юлмастăмччĕ, уй-хир ĕçне те çиччĕ-саккăртанах хутшăнма пуçланăччĕ (уйрăмах тырă вырма питĕ юраттăм, ĕççи вăхăтне шкула каймалли куна кĕтнĕ пекех уявла туйăмпа пăлханса кĕтеттĕм). Çавă чире вăйланса

пымашкан, паллах, вăрçă тапхăрĕнчи выçăллă-тутăллă пурнăç та пайтах пулăшнă ĕнтĕ... Çапла çултан-çул вăйланса-пусахласа пычĕ те вăл мана, 1946 çулхи январĕн 15-мĕшĕнче вара — вунсаккăра кайнăскере — вырăн çинчен тăраймиех туса хучĕ...»

Йывăр чирлесе ӳкнĕ хыççăн çамрăк чăваш ачин пуçĕ лаштăрах усăннă, вăл тем тĕрлĕ кулянса та пăхнă, тесе çырчĕç хăшпĕрисем Альпăрт Канаш çинчен. Çук, капла калани пачах та тĕрĕс мар, вĕсене хуравласа çулăм чĕреллĕ поэт хăйĕн автобиографийĕнче çапла çырнă:

«Мана мухтава тухнă Ленинла комсомолпа совет шкулĕ, совет литератури воспитани парса çитĕнтернĕ, мĕн ачаран эпĕ хăйсен пĕтĕм пурнăçне халăх ырлăхĕшĕн пурăнса иртнерне паттăрсен çутă сăнарĕсемпе хавхалана-хавхалана ӳснĕ: «пурнăç вăл кĕрешӳ» текен ăнлану — манăн ăс-хала ир кĕрсе йăва çавăрнă, хама çуратса ӳстернĕ ĕçчен чăваш халăхĕн аптраманлăхĕ те ман чĕрене кĕмесĕр юлманах. Çавăнпа ĕнтĕ пурнăçра хама пысăк инкек çитсе çапни маншăн хĕвел çути тĕксĕмленсе килмеллĕхех хăрушă пулаймарĕ, вунçиччĕри пуçпах вырăн çине тăлланса ӳкнĕ хыççăн та, тухтăрсен «шанчăк çук» текен приговорне итлеме тивнĕ хыççăн та, этемĕн пĕтĕм вăй-халĕпе ĕмĕт-туртăмне пăркăчласа хуракан хура вăй, пессимизм, манăн чуна самантлăх та йăпшăнса кĕреймерĕ, пурнăçа, «çакă çутă тĕнчене» юратас вĕри туйăм нимĕн чухлĕ те сивĕнмерĕ, вăйсăрланмарĕ. Павел Корчагин, хăйĕн маннинчен те хăрушăрах чирне пула «çамрăклăхпа кĕрешӳ ырлăхĕн» тулашне тухса ӳкнĕскер, малтанхи тапхăрта умри кунçулĕ пирки час-часах салху шухăша каять, самантлăха тенĕ евĕр хăй çине хăй алă çĕклес кăмăл та хускалать ун. Çавă парăнуллă йăшăк кăмăла вăл чăн-чăн коммунистла çĕнтерет, татăклăн сирсе ывăтать. Çапах та малтан çав кăмăл амаланса пăхать-пăхатех ун. Манăн вара — хам ума çавнашкал асаплăран та асаплă «кирлĕ-и тек пурăнни? е кирлĕ те мар-и?» ыйтусем лартас шухăш пуçа та пырса кĕмерĕ,— чи йывăр вăхăтра та самантлăха та пырса кĕмерĕ. Мĕншĕн тесен Павел Корчагин (хам мĕн пĕчĕкрен каçса кайса, пĕр савăнса та пĕр тĕлĕнсе юратнă паттăр этемĕм!) вăл ыйтусене тахçанах татса панăçке: хăйшĕн те, маншăн та татса панă!..»

Альпăрт Канаш, пысăк инкеке пăхмасăрах, халăхпа пĕрле ĕçлес шухăш-кăмăлпа пурăнать... Унăн тусĕсем питĕ нумай, тăван республикăн, аслă çĕршывăмăрăн пур

кĕтессинчен те ҫырусем килсех тăраҫҫĕ ун патне. Шкул ачисем, колхозниксем час-часах тĕрлĕрен канаш ыйтма ҫӳреҫҫĕ. Ун пӳлĕмне телефон кĕртеҫҫĕ, телефон унăн куҫĕпе хăлхи тата ури пулса тăрать. Районти комсомолецсем ăна шефа илеҫҫĕ. Чăвашсен паллă писателĕсемпе поэчĕсем те час-часах теветкел чун-чĕреллĕ ҫамрăк патне пыра-пыра килеҫҫĕ. Ҫав вăхăтра ĕнтĕ Альпăрт Ҫанаш райхаҫат тавра литпĕрлешӳ чăмăртама тытăнать. Малтан сăвă ҫыракан ҫамрăксем районта виҫҫĕн-тăваттăн кăна пулнă пулсан, халĕ вĕсем вăтăрăн-хĕрĕхĕн ĕнтĕ. Вĕсене пурне те хавхалантарса-ҫунатлантарса пыраканĕ — Альпăрт Ҫанаш.

Ҫаярахпа вара кăвар чун-чĕреллĕ поэт ертсе пынипе Октябрьски ялĕнче уйăхра пĕрре «Энĕш» ятлă нумай экземплярлă алҫыру журналĕ тухса тăма тытăннăччĕ.

Альпăрт Ҫанаш ертсе пынă литпĕрлешӳ членĕсенчен чылайăшĕн ятне эпир халĕ лайăх пĕлетпĕр. Петĕр Вашаватăн, Евгений Толстов-Шанарăн, Савватий Михайловăн, Альберт Юртăн сăвви-калавĕсем пирĕн хаҫат-журналсенче час-часах пичетленеҫҫĕ.

1956 ҫулта поэта коммунистсен партине илеҫҫĕ. Ҫав ҫулхинех тата Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ ăна хăйĕн инкекĕпе хăюллăн кĕрешнĕшĕн, литература ĕҫĕнче ăнăҫлă утăмсем тунăшăн Хисеп Грамоти парать.

Хăй пурăннă чухнех Альпăрт Ҫанаш ҫинчен Мускаври тата ҫĕршывăн тĕрлĕ кĕтессинче тухса тăракан хаҫат-журналсенче чылай ҫырчĕҫ, унăн пурнăҫĕ, кĕрешĕвĕ совет ҫамрăкĕсемшĕн ҫутă тĕслĕх пулса тăчĕ.

1960 ҫулта Альпăрт Ҫанашăн «Сăвăсем» ятлă пĕрремĕш кĕнеки тухрĕ. Ăна поэт чăваш комсомолне халаларĕ.

Хăйĕн пĕрремĕш кĕнеки тухнă вăхăтра Альпăрт Ҫанаш тăван республикăмăртан аякра, тулăх Украинăн тĕп хулинче Киевра, Б. Ҫ. Бабич профессор патĕнче пулчĕ. Усал чирне хальхи медицина, совет тухтăрĕсен ăсталăхĕ тата хăйĕн ывăна пĕлмен чун-хавалĕ ҫĕнтерме пултарасса вăл нихăҫан та ĕненме пăрахман. Ăста тухтăр ăна икĕ ҫула яхăн хăйĕн ҫĕнĕ меслечĕпе сиплерĕ, ҫавăн чухне ĕнтĕ икĕ теҫетке ҫула яхăн вырăн ҫинчен ҫĕкленмен поэтăн нихҫан сӳнмен ĕмĕчĕ ҫитсе пыма тытăнчĕ, вăл уткалама та пуҫларĕ... Ҫав хушăра ăна СССР писательсен Союзне илчĕҫ.

1962 ҫулхи кĕркунне Альпăрт Ҫанаш Чăваш ҫĕр-

шывне, тăван ялне таврăнчĕ. Тус-юлташĕсем пулăшнипе вăл «Запорожец» маркăллă пĕчĕк автомашина туянчĕ, унпа та çӳрекелерĕ, çине тăрсах иккĕмĕш кĕнекине пичете валли хатĕрлерĕ.

1965 çулта поэтăн «Иккĕмĕш утăм» ятлă çĕнĕ кĕнеки пичетленсе тухрĕ.

Çав вăхăталла Альпăрт Канаш Шупашкара пурăнма куçрĕ, çине тăрсах ĕçлерĕ, пысăк калăпăшлă произведенисем çырчĕ, виççĕмĕш кĕнекине хатĕрлеме тытăнчĕ. Çапла ывăна пĕлмесĕр, пĕр канмасăр ĕçлерĕ чăваш Островскийĕ. Пурнăç çулĕпе коммунизм тăвакансен малти ĕретĕнче утрĕ вăл — поэт-коммунист, поэт-кĕрешӳçĕ, поэт-çĕнтерӳçĕ.

1966 çул вĕçĕнче унăн чирĕ татах вăйланса кайрĕ. Вăл, мĕнпур вăй-халне пухса, усал чирпе кĕрешрĕ. Анчах поэтăн нумай çулсем хушши вырăнпа выртса вăйсăрланнă шăмшакĕ тискер чире çĕнтереймерĕ. Чăваш халăхĕн маттур ывăлĕн, хастар юрăçин, коммунист-кĕрешӳçĕн чĕри 1968 çулхи июнĕн 4-мĕшĕнче тапма чарăнчĕ.

4

«Эп — халăхшăн хал пухрăм»,— тет поэт хăйĕн пĕр сăввинче пĕтĕм пурнăçĕн, кĕрешĕвĕн тĕп тĕллевне сăнарласа.

Альпăрт Канашăн «Сăвăсем» ятлă пĕрремĕш кĕнекиех вăл хăйĕн тĕп тĕллевне çитерессишĕн ĕçленине кăтартса паракан пысăк тĕслĕх, ĕнентерӳллĕ тĕслĕх пулса тăчĕ. Унта поэтăн патриотла сăввисем, тăван чĕлхемĕрĕн асамлă вăйне, хăватне, илемне, тăван çĕршывăмăрăн ытараймии анлăшне, аслă пуласлăхне мухтакан сăвăсем пайтах пулчĕç.

«Сăвăсем» кĕнеке тăватă пайран тăрать: «Тĕнче илемĕ», «Энĕш енчисем» поэмăран, «Пĕр саншăн çеç», «Тĕрлĕрен». Кашни пайĕнче — сăвăç чун-чĕри, унăн тапса тăракан вăй-хăвачĕ, унăн кĕрешĕвĕ, ĕмĕчĕ, ыратăвĕ, савăнăçĕ, юратăвĕ.

Çулăм чун-чĕреллĕ поэтăн кĕнекине критиксем те, вулакансем те хапăл туса йышăнчĕç, вăл пирĕн литературăн пахчине çĕнĕ хитре улмуççи пулса илемлетнине палăртрĕç.

Уйрăмах вулакансем Альпăрт Канашăн иккĕмĕш кĕнекине хапăл туса йышăнчĕç. «Иккĕмĕш утăм» вăл по-

этăн пĕрремĕш кĕнекин малалли хăйне евĕрлĕ пайĕ пекех туйăнать. Ахальтен мар ĕнтĕ Альпăрт Ҫанаш ку сборникăн пĕрремĕш пайне «Сăвăсем» кĕнекери пекех «Тĕнче илемĕ» тесе ят панă.

Мĕн ҫинчен ҫырать-ха вăл кунта? Тăван тавралăх, ҫĕршыв илемĕ, пурнăҫ вилĕмсĕрлĕхĕ, ырă туслăх, этем шухăш-туйăмĕ ҫинчен, ĕҫре хисепе тухнă ҫынсем ҫинчен ҫырать. А. Ҫанашăн ҫак пайри чи асра юлакан сăввисенчен пĕри вăл «Чăваш улăпне» ятлă. Сăвăри тĕп сăнар — Совет Союзĕн Геройĕ Андриян Григорьевич Николаев летчик-космонавт.

Эс хамăр тăрăхрах ҫуралнă,
Ҫуралнă Шуршăл ялĕнчех.
Чăваш ачи!
Чăвашăн чапĕ!
Яту кĕрлет тĕнчипелех,—

тет поэт космонавт ҫинчен. Кунтах эпир Валентина Николаева-Терешковăна тата ҫулăмлă поэтăмăра Ҫеҫпĕл Мишшине халаланă сăвăсене вуласа савăнатпăр.

Поэт чун-чĕри публицистикăна ҫывăх. Вăл вулакансене тăван чĕлхене юратма, тĕрĕслĕхшĕн кĕрешме чĕнет: «Пирĕн кăкăрсенче ĕмĕрех вут-ҫулăмлă шанчăк вĕретĕр, ҫиеле тухтăр тĕрĕслĕхех!» Ҫак асра юлакан йĕркесем ĕнтĕ шăпах кĕнекен пĕрремĕш пайĕн хăйне евĕрлĕ финалĕ пулса тăраҫҫĕ.

«Асатман ҫырусем» пайра интимлă лирика шутне кĕртмелли сăвăсем нумайрах. Кунта эпир хĕр альбомĕ валли ҫырнă йĕркесене те, ĕмĕрлĕхе асра юлнă савни сăнарне кăтартса паракан строфасене те, ялти ҫамрăксен телейĕ ҫинчен каланă савăнăҫ сăмахĕсене те вулатпăр.

Пĕлесчĕ сан, пĕлесчĕ сан, тăванăм,
Чĕрешĕн мĕн тери паха вăл —
эс пурри.
Эс ҫакă ҫĕр ҫинче, ҫак тĕнчере пурри.
Нумай-нумай ҫул пурăнасчĕ манăн,
Шăрантарасчĕ савăнăҫ юрри!
Пĕлесчĕ сан, пĕлесчĕ сан, тăванăм!

Кĕнекери юлашки сăвăсем — «Энĕш тăрăхĕнче» ятлă ярăмран. «Ҫӳлте-ҫӳлте тăри юрлать, тăри юрлать — уй янăрать... тăри пекех (куллен-ялан!) пуласчĕ ман ĕҫпе тăван»,— тенĕ шухăш кунти сăвăсене пĕтĕҫтерсе тăрать. Ҫак шухăша ҫирĕплетсе, поэт Купăс Ванюшĕ йышши тӳрпилĕксене питлет («Аттестатлă тӳрпилĕк»), активист

эпĕ, тесе кăкăрне шакка-шакка пуш параппан çапакан Мĕкĕте пеккисене намăслантарать («Активист»), çав хушăрах шăнкăрч валли вĕлле тăвакан ĕçчен ачана ăшă сăмахсем калаcа ырлать («Шăнкăрч тусĕ»).

Альпăрт Канашăн çĕнĕ кĕнекине вуласа тухсанах чи малтан эпир поэтăн тавракурăмĕ ӳссе пынине, тематики анлăланнине куратпăр. Ку кăна та мар, пире тата унăн ăсталăхĕ палăрмаллах ӳсни те савăнтарать. Поэт тĕнче çине художник, шухăшлавçă куçĕпе пăхать. Поэт тăван поэзие пайтах çĕнĕ сăнлăхсем, çĕнĕ танлаштарусем кĕртет, халиччен пулман рифмăсем тăвать.

Акă, «Çĕрĕпех таттисĕр» сăвăри пĕр строфана илсе кăтартар-ха.

Виçĕ çăлтăр — шăкăрт
Тухса ларнă та...
Шăхăрт, шăпчăк, шăхăрт!
Пурнăçа мухта.

Кун пек тĕслĕхсем пайтах илсе кăтартма пулать. Вĕсем пурте поэт хăйĕн ăсталăхне çине-çинех çивĕчлетсе пынине тепĕр хут кăтартса параççĕ.

Альпăрт Канашăн «Сăвăсем», «Иккĕмĕш утăм» кĕнекисем — вулакансемшĕн пысăк та паха парне. Вĕсене вуласан, кашниех хăй валли çĕнĕ илем, çĕнĕ шухăш, çĕнĕ сывлăшваркăшĕ тупĕ. Альпăрт Канашăн кашни сăмахĕ — чĕререн тухнă сăмах, малтисен ĕретне тăрса кĕрешекен çын сăмахĕ. Ахальтен мар пулĕ ĕнтĕ поэт хăйĕн «Иккĕмĕш утăм» кĕнекине çак йĕркесемпе вĕçлет:

Начар пулсан та,
Пуш сăмах çапмарăм,
Чĕре хушан юрра кăна
Юрларăм!

5

Альпăрт Канашăн чылай произведенийĕсем эпир пухса хатĕрленĕ çак кĕнекере пĕрремĕш хут пичетленеççĕ. Унăн сăввисемпе поэмисене, калавĕсемпе статйисене, рецензийĕсемпе очеркĕсене пурне те пухса çитертĕмĕр тесе калаймастпăр-ха эпир. Вĕсем тĕрлĕ çĕре — хаçатсемпе журналсен редакцийĕсене, поэтăн пĕлĕшĕсемпе тусĕсем патне сапаланса пĕтнĕ. Пирĕн çавсене пурне те пухса çутă кун кăтартмаллах, вулакансем патне çитермеллех.

Альпăрт Канашăн ĕмĕчĕсем пысăк, калама çук аслă пулнă. Унăн дневникĕсене, çырса пĕтерейменн произведенийĕсене вуланă май эпир унăн ĕç планне курса тĕлĕнетпĕр. Йывăр чир ăна хăй çырас тенине пурне те çырма май паман çав. Акă, пĕр папкăра эпир поэтăн «Кунçул уттипе шайма-шай» ятлă повеçĕн çырма тытăннă страницисене куртăмăр. Ăна вăл 1953 çулта çырма палăртнă. Ун валли Çеçпĕл Мишшин «Хастарлă, хыт утăмлă пулăр, çĕршывăн хастар ачисем, вут кайăклăн вĕçĕр, ан юлăр, ан юлăр кунçул уттинчен» текен йĕркисене эпиграф валли илнĕ. Вăл ку повеçре камсем тĕп геройсем пулассине те палăртнă. Унта çапла çырнă:

«1. Павлуш (Павăл) Иванович Иванов — тĕп герой, колхозри бригадир, ком(сомол) ком(итечĕн) секретарĕ, çарта пулман-ха.

2. Машша (Петровна Зорина) — ĕçчен доярка, Павлуша савать, кайран леш те ăна юратса пăрахать...»

Альпăрт Канаш «Аркадий Грачевăн ача чухнехи пурнăçĕ» повесть, вăрçă хыççăнхи пурнăçа кăтартса паракан «Тăватă çул иртсен» калав, «Юман Аркашĕ тата ыттисем» роман çырма палăртнă, И. В. Гоголĕн «Авлану» пьесине, Ян Дрдан «Ялти истори» калавне, Михаил Лермонтов, Тарас Шевченко сăввисене куçарма тытăннă.

Альпăрт Канаш тата тепĕр пысăк япала çырма пуçланă. Вăл — «Пирĕн вăхăтри геройсем» ятлă роман.

Ку произведенире çулăм чĕреллĕ писатель пирĕн вăхăтри пурнăçа тĕплĕн çутатса пама шутланă.

Камсем-ха ку роман геройĕсем, урăхла каласан, пирĕн вăхăтри геройсем? Акă, камсем иккен:

Геннадий Петрович Сурнаев — гварди капитанĕ, комбат, полкри парторганизаци секретарĕ; бригадир, колхозри парторганизаци секретарĕ, ялхуçалăх институчĕн студент-заочникĕ, унтан вара (пĕрер çултан) — колхоз председателĕ, РК бюровĕн членĕ, 1923 çулта çуралнă.

Илюк (Илья Андреевич) Андреев — 10-мĕш класра вĕреннĕ чухне (машина аварине пула) сусăрланнă, (1943 çулта) вырăн çинчех выртать; Сурнаев киличчен çулталăк çурă хушши вăл колхозри стена хаçачĕпе ĕçлет, анчах актив начаррине пула, стена хаçачĕ тухми пулать, Сурнаев килсен, мĕнпур хĕрӳлĕхпе ĕçлеме тытăнать. 1926 çулта çуралнă.

Аркадий Михайлович Кураков — райком секретарĕ, хĕрӳллĕ те канăçсăр çын.

Нарспи Тарасовна Петрова — Сурнаевăн пĕрле ӳснĕ тантăшĕ-савнийĕ, пединститут студентки, истори учителĕ, кайран Сурнаева качча каять. Общественник.

Зоя Сергеевна Кожина — хăмлаçă-бригадир.

Альпăрт Канаш тăван халăх историне çине тăрсах тĕпчетчĕ, вĕренетчĕ, чăвашсем çинчен çырнă кĕнекесене, статьясене савăнсах пуçтаратчĕ. 1951 çулта пичетленсе тухнă «Записки, статьи, письма декабриста Якушкина» кĕнеке вуланă хыççăн вăл «Скульптор» ятлă повесть çырма тытăннă. Унăн тĕп геройĕ — хăй тĕллĕн вĕреннĕ скульптор Чаппай Сашши. Тепĕр геройĕ — Петруç — Петр Ильич Кураков, чăвашран тухнă офицер-декабрист. «Вăл Çĕрпӳ уесĕнчи (хальхи Вăрмар районĕ) Пăрттас ялĕнчи прихут училищинчен вĕренсе тухнă»,— тесе çырать автор.

«Чаппай Сашшин савнийĕ Пушкăртра хăйсене тара тытнă хуçа мăшкăлланă хыççăн çакăнса вилет. Сашши, хуçана тавăрнăшăн каторгăна лекнĕскер, кун çинчен пĕлмесĕрех вилет. «Петруç пичче, калăр эсир ăна, тен, тĕл пулăр,— юратăва пĕрлех илсе кайрĕ, тейĕр... Хăйне вара урăххипе телей сунатăп, тейĕр»,— каласа хăварать вăл Кураков декабриста Çĕпĕрте вилес умĕн, тесе палăртать пĕр çĕрте Альпăрт Канаш. Тепĕр çĕрте тата вăл Кураков арăмĕ украинка пулмаллине асăнать...

Анчах çаксенчен пĕрне те пирĕн тусăмăр çыраймарĕ. Тискер вилĕм ăна пиртен вăхăтсăр уйăрчĕ, юратнă ĕçĕнчен, тăван халăхран, тусĕсенчен татса илсе кайрĕ...

«Чи кирли — халăха пĕтĕм чĕререн савас пулать, ăна хăвăн пĕтĕм вăй-хална пама хатĕр пулас пулать. Вара ытти пурте хăйех тупăнĕ»,— тесе çырса хунă Альпăрт Канаш вилес умĕн хăй сĕтелĕ çинчи пĕр хут татки çине. Аяла тата сăвăласа иккĕркелĕх хушса çырнă:

Чунра çук-тăк кăвар —
Пурнăçу пурнăç мар...

Унăн хăйĕн чун-чĕринче яланах вут-кăвар ялкăшса çуннă, нихăçан та сӳнмен. Çавăнпа ĕнтĕ вăл Çеçпĕл Мишши пек йыхравлă сăвăсем, çунатлă йĕркесем çырма пултарнă. Вăл, усал чире çĕнсе, тăван халăхшăн хал пухса пурăннă, ĕçленĕ, вилĕме çĕнтернĕ, пĕтĕм тĕнче илтмелле хитре юрăсем юрланă. Вăл Тăван çĕршыва,

тăван халăха, тĕнче илемне, пурнăçа юратнă. Ахальтен мар ĕнтĕ вăл пирĕншĕн пурнăç юрăçи пулса тăчĕ. Эпир, унăн тусĕсем, кăвар чун-чĕреллĕ поэта нихçан та манас çук. Килес ăрусем те, килес ламсем те ун ятне пирĕн пекех пахаласа упрĕç, ун ятне нихçан та манмĕç, ун юррисем вĕсене те пурăнма, пурнăçа юратма, телейшĕн кĕрешме, ирĕклĕхе, Тăван çĕршыва, тăван халăха, хамăрăн аслă Коммунистсен партине чунтан-чĕререн савма вĕрентĕç.

ЮХМА МИШШИ.



**сăвăсемпе юрăсем**

22781-чув
Чувашская республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. ГОРЬКОГО

2. Шухăшăмпа ĕмĕтĕм.

# *Тĕнче илемĕ*

* * *

1949

Шăпчăксем! Шăпчăксем!.. Ҫаçхи лăпкă садра
Пур тĕнче илтмелле шăрантарăр юрра.

Эп, сире итлесе, киленем пĕр кана,—
Ҫилçунат ĕмĕтпе халланса йăпанам...

Чăрсăр туйăмпала çĕнтерсе çĕкленем,
Чаплă ĕмĕр çинчен сăвăсем кĕвĕлем!

## *Тăван чĕлхене*

1952

*Шанатпăр!..*

*Ҫеçпĕл Мишши*

Ҫепĕççĕн, сулмаклăн,
Савăккăн, хăватлăн
Янăратăн эсĕ, ман тăван чĕлхем.
Тимĕре тататăн,
Чул сăрта вататăн,
Сӳнне вучахра та эс чĕртен хĕлхем!

Савнă ялăмра-и,
Шавлă хулара-и
Сан сассун йыхравĕ пуçтарать пире.
Атăлăн — Мускавăн
Илтĕнен мухтавлăн,—
Çитмĕл çичĕ халăх саламлать: хитре!

Венăра тăрать-и,
Берлинра утать-и
Ирĕклĕх салтакĕ, чыслăха туйса,—
Туслă чĕлхесенĕн
Хушшинче кервенĕн
Сас паратăн эс те, кăмăла уçса.

Ĕмĕрсем пилленĕ
Халăхăн илемĕ,
Кунсерен çĕкле эс иксĕлми вăйна!
Чăвашлăх хавассăн
Калаçать Некрасов,
Пушкин та, Шекспир та йышăнчĕç сана!

Хăшпĕр каппайланнă,
Çын тивĕçне маннă
Йăхсăр-хурăнташсăр каçăр сăмсасем
Сан пирки мăнаçлăн,
Кăрккасем калаçнăн,
Павăраç пулин те, шанчăксăр тесе,

Эп сана шанатăп,
Эп кĕтсех тăратăп:
Килĕ Улăп-ывăл — Горькие юлташ.
Вăл сана чап кӳрĕ,
Тĕнчипех вăл çӳрĕ —
Мирпеле канашăн юрăçи — Чăваш!

## *Каçхи концерт*

1953

Будапештран — мадьяр кӗввисене итлерӗм,
Итлерӗм эп мухтавлă Лист кӗввисене...
Вут-çулăмлă хаваслăх ялтăрчӗ, çӗклерӗ,—
Çунатлă вăй хушса çӗклерӗ чӗрене!

Мӗнле кăна хăват, мӗнле черчен асамлăх;
Чуна, ăша-чикке мӗн пек вăй капланать.
Лăпкать тата мана темле ачаш тăванлăх...
Чăваш кӗвви-çемми илтӗнейсе каять!

Чăваш кӗвви-çемми! Хăв уттунтан ху тӗлӗн:
Ярса пусайнă эс... Мӗнпе виçмешкӗн пӗлӗн?
Сулмаклă пӗр уру — Алтай таврашӗнче,
Тепри вара, тепри... Дунай айлăмӗнче!

## *Çурхи вăй, çурхи сăн, кӗрхи тулăх*

1954—1957

Ир-каç çаплах шарт сивӗ-ха, çӳçентерет.
Анчах кăнтăрлапа юр шывӗ — шăнкăр-шăнкăр...
Хӗвел çине-çинех ярăнтарса çиçет,
Юрлать, каçса кайса, апрель шăнкăравӗ —
шăнкăрч.
Утать, хӗле таптать хаваллă çуркунне!..
Çак вăй пек мар-и эс, Çӗршывăмăр-анне?

Тӳпе пӗр пӗлӗтсӗр, яп-янкăр, кăн-кăвак;
Асамлăн ялтăрать ем-ешӗл пурçăн — курăк.
Хурт-хăмăр сӗрлешет, чечекленет хăва,
Юхать уç сывлăшра такам ӗнернӗ юрă.
Вылять, куçа шартать чун савнă çуркунне!..
Çак сăн пек мар-и эс, Çӗршывăмăр-анне?

Йӗтем çинче ларать капан çумне капан;
Çурать пӳлмесене уй-хирӗн пархатарӗ.
Ташлаççӗ улмасем — турат тӳсет аран;
Çунать чӗп-автансен пуç тăрринчи кăварӗ.
Тулли телей пиллет кӗрнеклӗ кӗркунне!..
Çак тулăх мар-и эс, Çӗршывăмăр-анне?

1955

## *Чăваш вăййи*

*«...девушки взялись за руки, составили большой круг и начали петь: это было такое оригинальное и пение, и зрелище, какого я никогда не видал. То есть видел на сцене, в балете, в опере. Но это не был ни балет, ни опера, а жизнь.*

*...Что оперы, что романсы?! Разве передадут они этот аромат вечно молодой весны и нежной тоски о проносящихся веках? Разве передадут они эту песнь народа, две тысячи лет сквозь всю ломку пронесшего с собой яркий образ прежней жизни? Разве можно выдумать такую песнь?»*

*Н. Г. ГАРИН-МИХАЙЛОВСКИЙ*
*«В сутолоке провинциальной жизни».*

Хăпарчӗ у й ă х, карăнчӗ
Вăраннă ача пек.
Хавассăн кулчӗ, ярăнчӗ
Шур пӗлӗт хушшипе.

Çаран çине куç ыватрĕ
Темле хăйн-хăйми.
Куç ывăтрĕ вăл, кăн! хытрĕ:
Кĕрлет чăваш вăййи!

Карти! Карти!.. Мĕн тухĕ-ши,
Танлаштару парсан?
Хуракăш кун пек юхĕ-ши,
Пулайĕ-ши унран?

Юрри! Юрри!.. Эй, тарăнлăх,
Эй, çулăмлă хăват:
Вĕçет чӳхеннĕн-ярăннăн,
Вĕçет чăн-чăн халат.

Ташши! Ташши!.. Тапратрĕ ак
Ик мăшăр ухлатсах:
Кисренчĕ çĕр, ахлатрĕ ах!..
Ал çупмĕ-ши камах?

Пăхать уйăх каçса кайнăн,
Пăхать ыйтарайми,
Пăхать ача пек савăннăн;
Кĕрлет чăваш вăййи!

Балет пек, тем пек туйăннă
Тахçан эс Гарина.
Куç шарнă ун, чун тăвăннă:
«Эх, ирĕкчĕ сана...»

Халь çитрĕ сан чăн ирĕклĕх,
Яп-янкăр халь тӳпе,—
Сана тиркевçĕ йĕрĕнчĕк
Вăй вичтĕр хевтӳпе!

Санрах — хыçри кунçулăмăр,
Санрах — çĕнелнĕ вăй...
Ах, вăйă, вăйă,— чунăмăр
Сана шăратнă хăй!

## *Палламан вулакана*

1955

Чĕрем пуçларĕ
        çил пек ташă...
Тавах, тавах сана,
        юлташăм!
Тавах, тавах
        сан çырăвна —
Сан кăмăлна,
        чунна-варна!
«Çыр, çыр, Қанаш,
        нихçан ан ывăн!
Эс пирĕнпех —
        утатăн сыввăн!» —
Вулатăп
        чун пăлханнăçем,
Телей шерпечĕ
        ĕçнĕçем.
Тĕреклĕрех
        паян çунатăм!
Вĕрет-сикет
        ăшри хăватăм!
Куратăп
        ĕçĕм кирлине,
Туссем
        строя йышăннине...
Умра вылять
        ытарайми сăн —
Ман ĕмĕтĕм,
        ман коммунизм.
Нихçан та
        ывăнмĕ ман чун,
Тĕллевшĕнех
        шав тапĕ юн!
Çĕклене
        сулăмлăн, йăл-ялăн,
Тăван çырулăхăм —
        ман халăм.

Нихçан та
    ывăнмĕ ман чун,
Тĕллевшĕнех
    шав тапĕ юн!..
Чĕрем сĕвет
    çил евĕр ташă,—
Тавах, тавах сана,
    юлташăм!
Тĕреклĕрех халь
    ман çунат,
Вĕрет-сикет
    ăшри хăват!

1956

## *Пĕрле ӳснĕ тантăшăма*

(Виççĕри хĕрачан амăшне)

Чĕвĕл-чĕвĕл чĕвĕлтиçĕ чĕкеçле
Чупрĕ-кĕчĕ хăв хыçран вăл,
Сан тĕпренчĕк.
Куçĕ те,
Тути те —
Йăлт хăвăннилле...
Ман ăшра тем туртăнчĕ,
Тем карăнчĕ-чĕтренчĕ!
Куçĕ те, тути те йăлт хăвăнниех,
Кăпăш-кăпăш сарă çӳçĕ те —
Йăлт хăвăн...
— Миçере-ха эс, Верукăм?
— Виççĕе-е!..—
Хуравларĕ вăл çиççе.
(Ача-çке çав, мĕн тăвăн!)
«Виççĕре»...

Алай,
Чупаç кунсем çаплах,—
Институт пĕтернĕ çул качча кайсаттăн.
Çирĕм çиччĕре эс.
Ху вара — çавах:
Çирĕмре чухнехиллех
Йăк куçăнта та — атом!
Миçе каччă чĕрине эс çунтарман?
Хăвăнне вара
Пĕр ВĂЛ анчах çунтарчĕ...
Эп пĕлетĕп: эс телейлĕ мăй таран,—
Ма-ха
Çак самант
Сан питÿнтен йăл кулă тарчĕ?
Мĕншĕн эс,
Темле,
Шелленĕн тинкерен?
Е чăнах мана:
«Телейсĕр! Мĕскĕн!» — тетĕн?
Йă-нăш-ааа-тăн!
Хăшпĕр ыр-сыв этемрен
Эп
Çак тĕнчере
Çĕр хут, пин хут телейлĕрех, тен!
Ма эс,
Ма эс сÿннĕ уйăх пек салху?
Хурлăхан куçна мĕн-ма чуптурĕ сывлăм?
Пурнăç тупсăмĕ çеç пултăр ХАЛАХУ,—
Тÿшекпе выртсах вара
Çунатлă чун пек сывлăн!
Пур-çке ман ТĔЛЛЕВĔМ,
Пур ман ПАРАННИ:
Мĕльюнсен кунçулĕпе кунçулăм чупĕ,
Çавăнпа та
Хам çапла пăталанни
Вăл —
ТЕЛЕЙ ТИНĔСĔНЧИ
Пĕртен-пĕр хăлчăк-çÿпĕ!
«Чĕвĕл-чĕвĕл», «чĕвĕл-чĕвĕл...»
— Ал çине
Ķил-ха, кил-халĕ, Веруж! Юрлар-и юрă?
— Эп пĕймеçтĕп,
Юйлаттай, ав, аннене!..
(Чăвашла калаçнă чух —

АННЕХ, АННЕХ пит ырă!)
Йатăттăм та тăвăттăм эп утьăкка
Çĕр çинчи пур ачана пĕр харăс,
Ăшшăн:
Ӳсчĕр-çитĕнччĕр сатуррăн, тăпăлккан,
Вăйлă çумăр хыççăнхи ӳсентăран пек —
Йăшăлл!
Савăн, тантăшăм, мухтан ачупала:
Вăл — хĕвеллĕх ĕмĕрне çитме çуралнă.
Савăн та
Ӳстер ăна çунан чунупала!
Халăхшăн, ун ĕçĕшĕн вăл
Патăр кунçула,
Пурăнтăр
Хĕвел тĕсне ăша илсе çуталнăн!

## *Композитор-тусăма*

1962

Сан юрру, ман сăввăм —
Ик тăван...
Хамăр та
Тăван пулар ялан!
Çеçпĕлпеле Павлов ĕмĕтне
Ĕмĕрлĕх
Хывар чĕре патне,—
Çав йăл-çутă ĕмĕтшĕн
Çунар,
Çав йăл-çутă ĕмĕтшĕн
Пурнар.
Хырчăклар
Истори мăшкăлне,
Курччăр
Пурте
Пирĕн хевтене.

Халăхăмăр ячĕ
Тĕнчере
Илтĕнсе шав тăтăр
Пит хивре.
«Пĕчĕк мăйăрăн
Тĕшши паха!» —
Тенисем
Тухайччăр чăнлăха...

* * *

---

1963

Тӳпере яланах хĕвел мар-тăр,
Пурнăç çулĕ
Çатма пек çул мар-тăр:
Сахал мар, тен, тĕл пулăн тумхах,
Чун-чĕресĕр йăх-ях та...
Анчах —
Темĕнле шартлама сивĕре те
Пирĕн кăкăрсенче
Ĕмĕрех
Вутлă-çулăмлă шанчăк вĕретĕр:
Çиеле тухĕ
Тĕрĕслĕхех!

# *«Энĕш енчисем» поэмăран*

## *Уйăх хăпарсан*

1952

Пин-пин çăлтăр
Йăлтăр-йăлтăр
Тӳпере вылять.
Çутă уйăх,
Тулли уйăх
Йăл кулса пăхать.

Уçă сывлăш,
Янкăр сывлăш,—
Қаçăхса сывла...
Эх, илемлĕх!
Қам киленмĕ
Çакă сăнпала?

Умри тулă —
Хумлăн-хумлăн —
Тем пăшăлтатать.
Хир-хир тăрăх,
Энĕш тăрăх
Çамрăклăх янтрать.

Ку — яш-кĕрĕм,
Ҫасăн-ҫĕрĕн
    Тыр выра-выра,
Пит хаваслăн,
Шăпчăк саслăн
    Шăрататать юрра.

Мирлĕ пурнăҫ,
Чаплă пурнăҫ...
    Селĕм юррисем
Ăмарту та,
Юрату та —
    Пурте пур вĕсен...

...Акă — шăпăрт.
Кăчăрт-кăчăрт
    Тунă сас анчах.
Тата трактор
Вырмарах-тăр:
    Кĕр-кĕрлет ҫаплах.

— Пикесемĕр!
Ҫĕмĕрттерĕр! —
    Кăшкăрать Ваҫук.—
Ма шăплантăр?
Шăрантарăр!
    Эй, пуҫла, Татюк!..

Ҫыхă тытрĕ,
Шатăрт ҫыхрĕ
    Хӳхĕм кĕлтине.
— Атьăр, пуҫлăр:
Юрă юхтăр!
    Таня-тус, хăшне?..

— Эх эс, каччă!
Шарлас марччĕ! —
    Тет леш хайхискер.—
Кĕлтӳ пушă...
Эхчĕ — п у ш ă!..—
    Кулса ячĕҫ кĕр-р!

— Мĕн эс?.. Курăр!..
Анчах юрă

Васука хуплать:
Пур тавралăх
Тăнламалăх
Çĕнĕрен каять.

«Пирĕн ялăн,
Савнă ялăн...»
Кĕç унтан — тепри...
Юх эс, юх эс,
Çĕн вăй пух эс,
Мирлĕ ĕç юрри!

## *Эх, аван-çке каçĕ!..*

(Сантăр юрри)

---

1953

Иртенпех паян эп утă çултăм,
Ывăнма пĕлмерĕм эп ĕçре,
Кăпăспа халь тухрăм,
Чун савнине куртăм —
Савăнăçпа тулчĕ ман чĕре.

Ялйышра хисеплĕ ман Укаçăм:
Тевет çийĕн орден ялтăрать...
Эх, аван-çке каçĕ!
Çăлтăрсем выляççĕ,
Ташă-юрă çĕр хута янтрать.

Çур çĕр иртрĕ, вăййăмăр саланчĕ.
Автансем автаççĕ,— кĕмелле...
Тухăç та çуталчĕ,
Уйăх та шупкалчĕ,
Чун кăна туртмасть-çке килелле.

Пирĕн ĕмĕт-шухăшсем пĕр евĕр,
Çавă вăй парать юратăва.

Пурăнăç вăл,— тетпĕр
Иксĕмĕр те эпĕр,—
Усă кӳтĕр савнă Çĕршыва.

Тинкерсе, хальхи пек, куçа-куçăн,
Ларăттăм çапла эп ĕмĕрпех...
Васкатать-çав шуçăм,
Васкатать-çав тусăм:
— Сывă пул... Ав тухăç — çулăм пек!..

## *Жнейка хыççăн*

---

1955

«Эх, мĕн чухлĕ çĕнĕ юрă
Эп вĕрентĕм вĕсенчен...»
Янтăрать çех хир-хир урлă,
Энĕш урлă, Йăлкăш урлă
Хĕрупраç сасси хиртен.
Ирттереççĕ тăрирен!

Юлмĕç, юлмĕç-çке, ай, юлмĕç
Жнейкăран сар пикесем:
Хыçранах-çке хурса пырĕç
(Маттурах каччийĕ, кур эс!)
Тăпăл-тăпăл кĕлтесем.
Юлмĕç, юлмĕç пикесем!

Тăван ялăмăр пулсаччĕ
«Хӳрери» те «хӳрери».
Ак кăçал вăл хулне сарчĕ,
Савнă уй йăл кулса ячĕ...
Кӳршĕсем, курмастăр-им?
Намăса юлмастăр-и?

Кунĕ ырă, кунĕ лайăх,
Сĕлли кăмăллă тытма.
Çамрăк халăх чунĕ — кайăк:
Амăртса ĕçленĕ майăн

Шав ыйтать вăл юрлама,
Таврана ян-ян яма.

«Шăтăр-шăтăрр!.. Шăтăр-шăтăрр!..»
Çитрĕ каччă, анчĕ вăшт:
— Паян çаврăнтăм эп вăтăр,
Пикесем, ан ятлăр, чăтăр!
Шыв ĕçтерĕрччĕ халь кăшт.
Ĕçтерсемĕр ĕнтĕ кăшт?..

Ĕçрĕ, «тав» терĕ, уттарчĕ...
Ух сатур-çке, ух чипер!
Ларчĕ, «ну-у!» терĕ, тапранчĕ,
Каялла пăхса кулайчĕ...
Кам ятне-ши Микихвер?
Ух сатур-çке, ух чипер!

— Зоя, Зоя! Мĕн эс чăлттăн
Тек куçлатăн жнейкăна?..
— Ху пăхатăн пуль те вăрттăн?!.
— Чĕрӳ темшĕн кăрттăн-кăрттăн,
Илтĕнет ман хăлханах?
Мĕн пирки-ши, чăнахах?..

...Ай, юлмаççĕ, ай, юлмаççĕ
Жнейкăран сар пикесем:
Хыçранах хурса пыраççĕ
(Маттур каччă, сан курасчĕ!)
Тăпăл-тăпăл кĕлтесем...
Тăпăл-тăпăл хĕрĕсем!

*Пĕрремĕш*
*рейс*

(Колхоз шоферĕн юрри)

---

1955

«Çĕн тыра, çĕн тыра, çĕн тыра...»
Машинаваскать çулпала.

Ăшра манăн çав тери ырă,
Ăшра шăранать савăк юрă...
Вĕçеç шухăшсем малалла.

Тырпулăмăр çитĕнчĕ хӳхĕм,
Хĕрӳ ĕç каймарĕ сая.
Пуçланчĕ вăл, пирĕн çĕн ӳсĕм,
Мĕнле кăна пулăпăр ӳлĕм,
Тек юлмăпăр эпĕр кая.

«Çĕн тырă, çĕн тырă, çĕн тырă...»
Машинаваскать хам пекех.
Ăшра манăн çав тери ырă.
Ăшра шăранать савăк юрă...
Çитес çĕре çитĕпĕрех!

Аннемĕр-çĕршывăмăр, йышăн,
Ил ылттăн пек ырă тырра!
Сана çĕн хăват кĕртессишĕн
Ăна çитĕнтерчĕ ялйышăм:
Телейĕмĕр пирĕн — санра!

«Çĕн тырă, çĕн тырă, çĕн тырă...»
Мотор, пул маттур та вăр-вар!
Ăшра манăн çав тери ырă,
Ăшра шăранать савăк юрă!..
Хапха уç, хисеплĕ Вăрмар!

## *Тăри юрлать...*

---

1956

Çӳлте-çулте
тăри юрлать,
Тăри юрлать —
уй янăрать...
Тăри пекех
(куллен-ялан!)

Пуласчĕ ман
  ĕçпе тăван.
Тăри пекех,
  шăрантарса,
Ян-янн! ярасчĕ
  ман сасса:
Ĕçри этем
  итлетĕр çех —
Пур кăмăлтан
  реххетленсех!
Итле-итле
  йăпантăр та —
Çĕн вăй ун таптăр
  кăкăрта:
Пулайтăр ĕçĕ
  ун куллен
Пушшех хастар,
  пушшех ĕлккен!
Çўлте-çўлте
  тăри юрлать,
Тăри юрлать —
  уй янăрать...

## *Вырмара*

(Комбайнер юрри)

---

1956

Тинĕс евĕр выртать уйăм-хирĕм,
Сарă хум, чăшăл хум вылятса.
Ах, ытла та чипер паян ирĕ!..
Çил тўлек, тўпе йăлтăр таса.

Сывлăмпа питне çунăн, илемлĕ
Тин кăна шуса тухнă хĕвел.
Йăл кулать ăшшăн-ăшшăн, телейлĕн:
Умĕнче ун — сурат та çĕмел.

Тўпери пăнчă пек тăри-кайăк
Юхтарать «тăтăр-и?» юррине.

«Қаярах юлнӑ эс!» — тет комбайн,
Пӗлӗтех ҫитерсе кӗрлевне.

Пуҫ таять, тав тӑвас евӗр, тулӑ:
Мӗльюншар пучахсем — ылттӑнран...
Ҫӑҫалхи чухлӗ вӑйлӑ тырпулӑ
Ку хирте эп нихҫан та курман!

Сахал мар тар юхтарнӑ бригадӑм,
Хӗлӗн-ҫӑвӗн пӗлмен канӑҫне.
Тулли кӑмӑллӑ хир тараватлӑн
Сарса хучӗ халь хӑй ырлӑхне.

Ҫӗмӗрттер! Ҫӗмӗрттер, ман карапӑм:
Қас эс, кас пархатарлӑ хума!
Ҫӗмӗрттер, ҫӗмӗрттер, ман хӑватӑм:
Эпир тивӗҫ ик норма пама!

Ҫӗмӗрттер! Илттӗр пӗтӗм ҫӗр чӑмӑр
Тӑван ҫӗр кӗвви пек кӗввӳне.
Тек нихҫан нимӗнле вутлӑ **ҫумӑр**
Хур ан тутӑр этем кунҫулне!

Тинӗс евӗр выртать уйӑм-хирӗм,—
Чӑшӑл хум, ылттӑн хум вылянать.
Ах, ытла та чипер паян ирӗ...
Ҫӗрӗм-шывӑм, чун юрӑ ыйтать!

# *Сывпуллашу курки*

---

1960

*Юрий шӑллӑма* *

Мансӑрах кӗрлетӗр кӗреке!
Чӑвашла тирпейлӗн те янтравлӑн.

* Вӑл Совет Ҫарне каяс кунсенче хам кӗнекене парне вырӑнне ярса (Автор).

Ытлашши хумасăр эрехе —
Хăнала хăнасене эс шавлăн;
Виçĕ çуллăха тухса каюçăн,
Тăвансем çине пăхса эс савăн.

Мансăрах кĕрлетĕр кĕреке!
Тем пек хыпăнсассăн та пыраймăп.
Иксĕмĕр шаккаймăпăр черкке,
Ыр сунса хĕрӳллĕн чуптăваймăп.
Ачаллах хĕн пурнăç тӳстернишĕн
Кăçару ыйтса пуçа таяймăп.

Мансăрах кĕрлетĕр кĕреке!
Чуну çеç мана çумраххăн туйтăр...
Кӳр эс алă! Çак ман кĕнекем —
Сан кутамккунта халь вырăн туптăр:
Ман чĕрем вăл, тертĕм вăл, телейĕм...
Пиччӳнтен вăл ТАВ ҪУРКИ халь пултăр!

Мансăрах кĕрлетĕр кĕреке!
Куççуль мар, юр-ай сăри юхайтăр.
Тивĕçӳ чĕнет сана чикке,—
Кăмăлу мăнаçлăхпа тулайтăр:
Çĕршыва сыхлас ĕçрен те ыр ĕç —
Пурнăçра мĕскер-ши тек пулайтăр?

Тивĕçӳ чĕнет сана чикке,
Мирлĕ ĕçшĕнех тем пек çунсан та:
Çĕр çаплах пайланчăк-çке икке,
Тар пички кăвайт çинчех паян та.
Тар пички кăвайт çинчех, тăванăм!
Сыхă куçлă пул кирек хăçан та.

Май килменччĕ ман чикке тăма
(Тантăш-йышпала пĕр строй тытма!),—
Тăрмалать ăша ӳпкев ытах та.
Çавăнпа эс — хăвшăн анчах мар,
Маншăн та (пиччӳшĕн те!) тыт вахта.
Хамăр йăх ятне нихçан ан яр:
Вĕт эпир Чапай тавраш, çапах та!

# *Евгень дневникĕнчен*

---

1963

## *1. Ташă касĕ*

Залĕ — пит лысăк, залĕ — пит капăр,
Музыка шеп янăрать...
Çепĕç «Амур хумĕсен» вăй-вылявĕ
Чун-чĕренех тыткăнлать!
Вĕлтĕр-р те вĕлтĕр-р вĕлтĕртетеççĕ
Хĕрлĕ, кĕрен туфлисем:
Ăмăртмалла тейĕн, вăр-вăрр шăваççĕ
Пĕр ытамри мăшăрсем.
Саншăн та ташă — вĕçĕмсĕр ырлăх,—
Эс чи ăста ташлакан.
Мамăк пек çăмăл эс, мамăк пек çепĕç.
Куç илейместĕп санран.
Ним те туймасть-тĕр хăвсăр пуçне халь
Сан çумăнти хӳхĕм яш...
Ах, çак самант эпĕ мĕншĕн вăл мар-ши!
Мĕншĕн эп мар-ши çав яш!

## *2. Чунри суран*

Кăвак çут та килчĕ — шăпăрттăн, ĕлккеммĕн;
Уйăх та шупкалчĕ — тунсăхлăн, салху;
Кĕвĕлет, ав, шăпчăк — тертĕме сисменнĕн...
Эс çаплах килмерĕн,— сăмах патăн ху!

Хурăн, йăрăс хурăн ма йĕрсех пуплет-ши?
Пурпĕр мар-шим уншăн — ларăпин пĕччен?
Е хăй шăпине вăл, мĕскĕн, асилет-ши,
Шухăшлать-ши хăй те пĕччен çинчен?

Ултала темен эс, çук, шухăшламастăп.
Манса кайнă, ахăр: çав вăл — савмасан!
Сăн хитре пулмарĕ, çивĕч мар ман ăс та...
Чунăмри вута çеç куç курмарĕ сан!

*3. Хурав илсен*

Çыру!..
Ăнах та-и çыру?
Эсех-и çырнă, чăн та?
Тен, ку йăлтах —
Ыр тĕлĕрӳ?
Арпашăнать пуль тăн та!
Аллу — саннах.
Саннах аллу...
Ах, Уринеçĕм,
Чунăм!
Ман валлиех-ши кăмăлу,
Çак сăмахсем,
Çак çулăм?
Кун пек хурав килессине
Кĕтме те эп хăйманччĕ.
Вăл килчĕ...
Пĕлĕт тăррипех
Çĕклентĕм эп,—
Курсамччĕ!
Курсамччĕ эс!
Анчах,
Кулса,
Ан хăварах çунатсăр.
Çӳлте-çке пит:
Персе анса,
Юлма пулать шăмшаксăр...
Ирина!
Шăпчăк çу кунне
Епле кĕтет — пĕлетĕн.
Эс хуларан килессине —
Эп шăп çапла кĕтетĕп.
Сан уттуна,
Сан куллуна
Часрах, часрах курасчĕ.
Ик ялкăшса çунан куçна
Ачашшăн чуптăвасчĕ.
Ак çак хирте, çак пусăра
Çӳресчĕ
Алла-аллăн!..
Сĕвет, ав тăр-тăри юрра,
Ман чун та халь —

Ун майлӑн:
Мӗн пек ҫуртри, кур,
Ҫитӗнет,
Мӗн пек чипер, ав,
Пусӑ!
Сахал-и тӑрӑшнӑ?
Ӳсет
Сан ятупа йӑлт, тусӑм...

# *Ăсатман çырусем*

## *Ман аллăмра чие çырли...*

1954—1955

Ман аллăмра чие çырли,—
Сан тутуна асилтерет вăл.
Ун евĕр хĕрлĕ, тăр-сĕткен...
Епле, епле-ши хăйса çыртăп?

Ман умăмра хăва вулли,—
Сан пилĕкне асилтерет вăл.
Ун евĕр йăрăс, çинçешке...
Епле, епле-ши касса хăртăп?

Вăрантăм шăпчăк юррипе,—
Сан сассуна асилтерет вăл.
Ун евĕр çепĕç, шăнкăрти...
Епле хăйса-ши садран тухăп?

Умра пин çăлтăрлă тӳпе,—
Санăн куçна асилтерет вăл.
Ун евĕр тĕпсĕр, йăлтăрти...
Епле хăйса-ши ыйха путăп?

Пăр-р! вĕçрĕ, ларчĕ пăрчăкан,—
Сан аллуна асилтерет вăл.
Ун евĕр пĕчĕкçĕ, вăр-вар...
Епле хăйса хăратса ярăп?

Çиçет хĕвел йăм-йăлтăркkан,—
Сан кăмăлна асилтерет вăл.
Сапать ун евĕр ăш кăвар...
Ăçтан, ăçтан манма пултарăп?

* * *

---

1959

*Сана*

Хавхалантар мана, тăван! Хавхалантар:
Кăвар чĕре çине — сиктер татах кăвар...

Кăтарт çут ĕмĕте чунран парăннине —
Этем телейĕшĕн çунса пурăннине;
Ал-аллăн тытăнса хастар туссемпеле,
Октябрь ялавне çĕкле çӳлтен-çӳле!
Вĕт-шакăр йăпанушăн ан пар чĕрӳне...
Кăтарт çут ĕмĕте чунран парăннине!

Хăвна ху ĕмĕрне те ан хур пысăка,
Хăюлăх пултăр та... упра сăпайлăха;
Ĕçченлĕх, пултарулăх таптăр иксĕлми,—
Ĕçре, ĕçре анчах вăл, пурнăçăн хăйми!
Çынна ыр кӳнинче шыра чăн ырлăха...
Хăвна ху ĕмĕрне те ан хур пысăка!

Мерчен пек, тĕкĕр пек эс пул юратура,
Чăн-чăн этем сăнарĕпе çиç, ялтăра;
Ултавлăх-икĕпитлĕх—ирсĕр вăйпалан—
Чунна пырса кĕмешкĕн ан хăйтăр нихçан!
Тӳр кăмăллă хĕрӳлĕх чăлтăртăр санра...
Мерчен пек, тĕкĕр пек эс пул юратура!

«Çӳп-çап, пустуй!» тесе, ал ан сул ĕçĕме,
Эс те пуç тай чĕлхемĕре — чăн илеме;
Юрат хăв халăхна, вилсе кайса юрат,
Чунри чĕлĕхсене — ун чысĕшĕн янрат!
Чунри вăюпала ăнлан ман хĕлхеме...
Эс те пуç тай чĕлхемĕре — чăн илеме!

Хавхалантар мана, тăван! Хавхалантар:
Çырнас сăввăмсене çĕн çулăм кĕртсе яр...

## *Чечексем*

1959

*Р. И-на.*

Чечексем! чечексем!
  килсе лартăр эсир,
Килсе лартăр эсир
  пĕр чипер лăпкă ир:
Кĕп-кĕрен тĕслисем,
  кăн-кăвак тĕслисем,
Шĕл-кăвар пек çунса
  тĕлкĕшен хĕрлисем...

Чечексем! чечексем!
  килсе лартăр эсир,
Килсе лартăр эсир
  пĕр чипер лăпкă ир:
Ӳснĕ пуль çывăхри
  ĕшнере-çаранта —
Çитеймен-ха типсе
  ĕнчĕ пек сывлăм та...

Чечексем! чечексем!
  килсе лартăр эсир,
Килсе лартăр эсир
  пĕр чипер лăпкă ир...
Кам хăварнă кĕртсе?
  Пĕлеймерĕм çавна.
Халь ларатăр пăхса,
  çунтаратăр чуна!

## *Сыв пултăр харсăрлăх!*

(Юлташ альбомĕ çине)

---

1960

Альбом тавраш çыра пĕлместĕп,
Курман альбом тавраш çырса.
Эс — ĕненместĕн,
Итлеместĕн...
Мĕскер çырам, мĕскер сунса?
Вăрнарăн çакă хыр вăрманĕ —
Пиллерĕ тĕл пулма пире:
Шăмшакăн ăнăçсăр суранĕ
Тытать халь санаторире.
Сурать шав сан та, ман та шăмă,
Ӳкерчĕ вăл,
Тăлла-тăлла...
Алсем çапах —
Сулмаклă чăмăр!
Çапах — манмастпăр-ха кулла!
Кулла манмастпăр-ха, тăванăм,—
Манар та мар ăна нихçан:
Тем-тем тӳсес пулсан та,
Санăн —
Сыв пултăр харсăрлăх ялан!
Пĕртен-пĕр хамăр чирĕн хурчĕ
Кăна-и кăсăк халь пире?
Çут тĕнчере ăçта мĕн пулчĕ —
Йăлт хăй çине илет чĕре!
Çунар ырри çĕнтерессишĕн,
Коммунăшăн хыпса çунар!
Çуратнă халăхшăн,
Чĕлхишĕн
Чăн ывăлла хастарланар!
Çынсен телейĕпех телейлĕ
Пулма пĕлет пулсан этем,
Вара кунçулĕ ун —
Хĕвеллĕ,
Вара — хĕл чух та чечексем.

Вара çын —
Иксӗлми хăватлă:
Нимле тумхах хăрушă мар...
Пар алă, тусăм!
Пул çунатлă,
Яш чӗрӳнтен вут-хӗм кăлар!

## *Чун ялан çуралнă çӗршывра ман*

1960

*Юлташ патне.*

Днепр çилӗ — вăштăр-вăштăр çил;
Киев вăл чăвашшăн тепӗр кил:
Çеçпӗле юп курнă чунлă халăх
Ытамне эп лекрӗм савăнмалăх.

Днепр çилӗ — вăштăр-вăштăр çил;
Киев вăл чăвашшăн — тепӗр кил...
Пурпӗрех-çке тунсăх ăшăмра ман:
Чун ялан çуралнă çӗршывра ман.

## *Кăвар чӗре*

1961

— Темле инкек пулмарӗ пулӗ-çке?
Пит тертлӗ курăнан эс —
Çиллеске? —
Куçран чăр-чăр пăхса,

Ăш çуннăн ыйтрăм.
(Ална
Хам аллăмра
Вăрах, тен, тытрăм?)
Ман койкăпа çума-çум, юнашар
Вырнаçрăн эс,
Ќуçусенче —
Ќăвар:
— Çук, аванах...
Пит лайăх-ха халь сывлăх:
Этемшĕн Атăлпа Ильинка —
Ырлăх...—
Шăп лартăн пĕр самант, тем шутласа,
Тухăçалла,
Инçе-инçе пăхса...
— Çук, аванах-ха:
Сывлăх та йĕркеллĕ,
Палатăри лару-тăру та — меллĕ.
Анчах...
Пĕр нибĕльмес чăвашпала
Тӳпелешсе халь илтĕмĕр вутла.
Вуламалли залрах,
Çын умĕнчех йăлт,—
Тен, чунăм ман
Вĕри ытлашширех вăл?
Лараттăм «Ялавпа» эп халланса,
Таçтан çав тупăнчĕ —
Йĕпе сăмса:
«Нашла чего читать»,— тет.
Хуçкаланчăк!
«Чăваш чĕлхи ниме тăмасть»,— тет,
Анчăк!
Эй, па-а-атăм Çеçпĕлле вара пĕрре:
Асра тытса юлайтăр ĕмĕре!
Чăл-парр кăна вĕçейрĕ пĕтĕм пăсĕ,
Яр уçăлчĕ
Нӳхреп пек сивĕ ăсĕ:
Ним ăнланмасть тăван культурăна,
ЧАҚҚА камне пĕлмест вĕт,
Тă-ма-на!
Рак тĕслĕ сăнпалах
Тухса вĕçтерчĕ,
Анчах хавас кăмăлăма —
Пĕтерчĕ...

Ман евӗр, хуларах ӳсес пулсан.—
Мӗнле-ши вӑл пулайӗччӗ,
Ӑнман?!
Этем-и вӑл —
Хӑй халӑхне савман ҫын?
Ун пурнӑҫне
Хӑй пурнӑҫӗ туман ҫын?..—
...Вӗҫлерӗн эс хӗрӳ «монологна»...
Пуҫ тайрӑм эп
Ӑшра
Ҫунатлӑхна!

## *Ҫӗрӗпех, таттисӗр...*

---

1

Ҫилӗллӗ пек садӑм...
Ӳпкелет пуль ҫав!
Иртенпех ҫырса та —
Пӗр йӗрке ҫук ав...

Қаҫ та пулчӗ — ҫакрӗ
Шӑпчӑк шӑнкравне.
Лакрӗ сӑввӑм, лакрӗ,—
Яр хуть чӗлпӗрне.

Лакрӗ, кӑнчӗ сӑввӑм:
Чӑхӑмлать Пегас,
Тӗмеске те тӑвӑн
Курӑнать пулас?

Халсӑр вӑл, хевтесӗр,
Пуҫӗ усӑк ун...
Эс килсе кӗмесӗр —
Иртрӗ икӗ кун!

2

Чупрӑн-кӗтӗн хӑвӑрт:
— Ман Шупашкара...
Ҫаймалла-ха... Йӑпӑрт...
Ним те хушмӑра?..—

Пӳлӗнсе сывлуҫӑн
Йӑл-йӑл култӑн эс.
Сан ҫинчех ман куҫӑм...
— Мӗн илсе килес?..

Пӑрахут — ятласшӑн:
«Ту-у! Асту, юлан!..»
Пӑхрӑн эс ачашшӑн:
— Таврӑнӑп ыран!..

Шав тумасӑр, хупрӑн
Сад калинккине.
Алӑ султӑн — чупрӑн
Гудоксем енне...

3

Виҫӗ ҫӑлтӑр — шӑкӑрт
Тухса ларнӑ та...
Шӑхӑрт, шӑпчӑк, шӑхӑрт!
Пурнӑҫа мухта!

Аллӑмри ыр чӗлпӗр
Ҫарӑнчӗ хӑех:
Ман Пегасӑм тӗпӗрр!
Ҫайрӗ сиккипех.

Тарчӗ, вӗҫрӗ ыйӑк,—
Строфасем юхаҫ...
Йӑлтӑр кӗмӗл уйӑх!
Йӑлтӑр кӗмӗл каҫ!

Ҫӗрӗпех, таттисӗр
Ерӗхрӗ Пегас.
Ирхи ӗнтрӗк витӗр
Курӑнчӗ Парнас...

## *Пĕлесчĕ сан!*

Пĕлесчĕ сан, пĕлесчĕ сан, тăванăм:
Чĕрешĕн мĕн тери паха вăл — ЙĂЛ ҪУЛНИ;
Ăна курсан — мĕн пек хаваслăх манăн
Ҫапланайса тулать ăшчик тулли...
Пĕлесчĕ сан, пĕлесчĕ сан, тăванăм!

Пĕлесчĕ сан, пĕлесчĕ сан, тăванăм:
Чĕрешĕн мĕн тери паха вăл — ĂШ САМАХ:
Ăна илтсен — мĕн пек йăшать суранăм,
Мĕн пек вăй ҫĕкленет ман самантрах...
Пĕлесчĕ сан, пĕлесчĕ сан, тăванăм!

Пĕлесчĕ сан, пĕлесчĕ сан, тăванăм:
Чĕрешĕн мĕн тери паха вăл — ЭС ПУРРИ,
Эс ҫакă ҫĕр ҫинче, ҫак тĕнчере пурри...
Пурнасчĕ те пурнасчĕ халĕ манăн,
Шăрантарасчĕ савăнăҫ юрри!..
Пĕлесчĕ сан, пĕлесчĕ сан, тăванăм!

# *Ĕмĕтĕмсем, ĕмĕтĕмсем*

## *Çулпуçăмăра*

1954

Вăтăр пĕр çул ĕнтĕ Партипе пĕрле,
Çирĕппĕн утатпăр Сан çул-йĕрпеле.

Вăтăр пĕр çул ĕнтĕ пирĕнпе Эс çук,
Вăтăр пĕр çул ĕнтĕ хупă-çке куçу.

Анчах Эсĕ чĕрĕ, чĕрĕ Сан ĕçÿ.
Çĕр çинче тасчта та кăртлатать чĕрÿ.

Эсĕ тунă Парти — хурçă пек çулпуç.
Тĕнчене вăл кÿчĕ йăлтăр шурăмпуç.

«Халăхсен тĕрмийĕ» пулнă çĕршывра
Халь эпир — хĕвеллĕ ырă пурнăçра!..

Çук, Сана нихçан та манмĕ çут тĕнче,
Ĕмĕрех Эс пулăн халăх асĕнче.

Ĕмĕрех этемлĕх тав тăвĕ Сана,
Ирĕк пурнăç çулĕ яр-р! уçнă çынна.

Эс вĕрентнĕ тăрăх кĕрешсе пырса,
Вăл телейлĕн çитĕ коммунизма!

# *Ĕмĕтĕмсем, ĕмĕтĕмсем...*

1952

Ĕмĕтĕмсем, ĕмĕтĕмсем,
Епле эсир чарусăр!
Епле тăрлавсăр çĕкленсе,
Пуçа çавратăр уссăр!

Йăл-ялл! çунатăрсем çинче
Ларса çӳренĕ майăн,
Асамлă ырă каçсенче
Мĕн-мĕн пулмасть-ши манăн?!

Вăй мĕнлине мана-мана,
Ăçта пырса тухмастăп,
Мĕн евĕр чаплă ĕç кăна
Тăва-тăва хумастăп?!

Ачаранпах эсир манран
Пĕрре те уйрăлмарăр,
Анчах та çук,
Пылакăра
Нихçан та кăтартмарăр...

Ĕмĕтĕмсем, ĕмĕтĕмсем,
Епле эсир чарусăр!
Епле тăрлавсăр çĕкленсе,
Пуçа çавратăр уссăр!

Çапах та эп сире пĕртте
Шăла çыртса ылханмăп,
Вăй-халăм пур пек чух
Сиртен
Хăпса юлма шутламăп:

Платникĕн пуртă пулмасан,
Мĕскер туса лартайтăр?
Çын ĕмĕте те çухатсан,
Унран мĕнех юлайтăр?!

# *Экспромт*

1956—1957

*Леся Украинкăна*

Тĕлĕнмелле хăватлă чун-чĕре
Имшер кăна ӳтре этемлĕхшĕн вутланнă,—
Çутатнă сĕм-тискер хура çĕре...
Тĕлĕнмелле хăватлă чун-чĕре!
Пуçа таятăп умăнта, халланнăн.

*Çеçпĕл Мишшине*

Епле сĕртĕнем-ши ятна сăввăмпах?
Епле сĕртĕнем, кăвар чунăм?
Йăмшах сассăма —
Çывăха пырсанах —
Ĕнтейĕ те ярĕ çеç çулăм!..
Епле сĕртĕнем, кăвар чунăм?

*Муса Джалиле*

Аслатиллĕ çумăр иртнĕ хыççăн —
Сар хĕвел ытарайми йăл-йăлл...
Сăнарна асилтермест-ши вăл?
Вутлă пĕлĕтсем, тискеррĕн-выççăн,
Уласа чăл-парр саланнă хыççăн
Тухрăн йăлтăрса эс теветкел,
Тухрăн эс —
Куçа шартан ХĔВЕЛ!

*Митта Ваçлейне*

Эс кайрăн... Эс кайрăн...
Сыв пул!..
Синкерлĕ сан пулчĕ кунçул.
Темтепĕр сан тӳсрĕ чĕрӳ,
Анчах ĕмĕр пулчĕ хĕрӳ...

Тăванăмăр!
Иккĕмĕш Çеçпĕл!
Ĕçӳ халăхра,—
Çавна çеç пĕл.

## *Поэзири тантăшăма*

1960

*Ю. М-не.*

Сана курсан — ем-ешĕл пусă
Аса килсе каять мана...
Пĕр ĕмĕтпех ĕçлер-и, тусăм,
Пĕр ĕмĕтпех хĕртер чуна!
Тăван çырулăхăн керменĕ
(Ильич хули чун кĕртнĕскер!)
Эртел аллипеле çĕкленĕ —
Эльбрус пек çӳллĕ те чипер.
Шанманнисем лĕх-лĕх! тусан та,
Çĕкленĕ вăл, тăрланĕ вăл.
Тăрланĕ, çиçĕ (тем пулсан та!)
Тĕнче савмаллăх, йăл та йăл-л...
Эпир хуран ик-виçĕ кирпĕч
Çав ĕçшĕнех каймашкăн тивĕç!

## *Б. К. Бабич профессора*

(Мăшăр сонет)

1961

1

Тăван Чăвашра — Али-паттăр
Çинчен авалтан пур халлап...
Шăпах вăтăр çул — утаймасăр —
Тертленнĕ çын, курнă асап.
Харам иртсе пынă кунçулĕ,
Хыпса çуннă, тăваннă чун.

Тăксах тăкнă амăш куççулĕ,
Курман амăш, мĕскĕн, çут кун!
Анчах — тупăнать ак асамçă:
Калать те хайскер пĕр сăмах —
Али вăй илет çавăнтах...
...Профессорăм! Юрă хывавçă
Пуласчĕ, юрласчĕ халь ман:
Эсир — çав асамçăпа тан!

2

Вунпилĕк çул сире эп кĕтрĕм,—
Килсемĕр, терĕм, тĕнчене.
Пĕр сирĕншĕн кунта эп çитрĕм,
Пăхмарăм çул пит инçине.
Пайтах врач: çуккă,— терĕ,— шанăç;
Шутларĕç пĕтнĕ çын тесех.
Чунри вăй-халăма курмарĕç...
Ĕнентĕр, шантăр эсир çех!
Сиплев уйăхĕсен асапĕ —
Хыçра тесессĕн те чухах:
Палата тăрăх (ай-ваях!)
Çӳреп çулталăкри ача пек...
Профессорăм! Пуçа пĕкеп...
Вунпилĕк çул шăп кĕтрĕм эп!

## *Тавсси, Украина!*

1962

Çаплах шăкăл-шăкăл, çаплах шăкăл-шăкăл
Пуплет пуйăс рельсăсемпе...
«Сыв пул, Украина! Сыв пул, Украина!» —
Теетĕп çунан чĕрепе.
«Сыв пул, Украина! Сыв пул, Украина!
Каятăп киле — Чăваша.
Вăрах хăналантăм, вăрах чăрмантартăм...
Каçар ывăлна, Канаша!

Ҫасар ывӑлна! ЫВӐЛНА, Украина!
Санран уйрӑлаймӗ чӗрем:
Паян кунранпа пӗрре мар манӑн — иккӗ
Ҫуралнӑ ҫӗршывӑм-аннем.
Чӑваш ҫӗрӗнче — ҫутӑ кун эпӗ курнӑ,
Пуҫланӑ савмашкӑн ире;
Кунта ак, вунпилӗк ҫул шанк выртнӑ хыҫҫӑн,
Ҫӗклентӗм... ҫуралтӑм тепре!

Чупсах эп ҫӳреймӗп, йӑлт-ялт та сикеймӗп,
Костыль те каяс ҫук алран.
Анчах та — эп хӑтӑлтӑм, хӑпрӑм ҫапах та
Куҫа курӑнми сӑнчӑртан;
Вакун пусмипе хам утса хам эп кӗтӗм,
Хам уҫрӑм купе кантӑкне...
Шевченко ҫӗршывӗ, хӗвеллӗх ҫӗршывӗ!
Яланлӑх тӑван ҫӗр-анне.

Пӑхатӑп, пӑхатӑп... Хал ҫук куҫ илмешкӗн,
Хал ҫук пӑрӑнма кантӑкран:
Каштан та черешня ҫаплах ал суласҫӗ!
Ҫаплах ачашлать ҫил пуҫран!
Вӑрах хӑналантӑм, вӑрах чӑрмантартӑм,—
Ик ҫул иртрӗ ҫак сиплӗхре...
Сыв пул, Украина! Тавсси, Украина!
Эс пулӑн ялан чӗрере.

## *Энӗш хӗрринче*

(Мӑшӑр сонет)

---

1962

*Каллех ҫитсе эп куртӑм...*

*А. С. Пушкин.*

1

Эй, Энӗш, Энӗш... Ял ҫуначӗ!
Чӗре ҫуначӗ те-и, тен?
Сана вунҫичӗ ҫул курманччӗ,

Халь ак — умрах чӗлтӗртетен!
Чупса анса шывна чăмаймăп,
Выляймăп йăл ытамунта,
Шак чулĕсем пухса асаймăп...
Çапах эп — сан çыранунта!
Эс — ĕлĕкхи пекех илемлĕ,
Эс — ĕлĕкхи пекех таса,—
Выртан çиççе-шăнкăртатса...
Салам, эй, Энĕш! Вутлă-хĕмлĕ
Çĕн хал кĕртсем ман кăкăра:
Чунпа ялан пулам кăра...

2

Эй, Энĕш, Энĕш... Чун çуначĕ!
Мĕн пек телей манра халь, кур:
Çеçкех çурать хавaслăх сачĕ!
Анчах — чун ыратни те пур...
Вунтăхăр çул эс ĕнтĕ тăлăх,
Вунтăхăр çул пĕвесĕр эс:
Пире ӳпкев туса пек, кăлăх
Юхса иртен ял витĕр эс.
Йăмрасăр, çап-çара, пит хурлă
Шав ишĕлен çыранусем,
Аран сывлаççĕ пуллусем...
Қаçар! Хăш чух ытла сив чунлă
Пулма вĕрентĕмĕр пулас!
Мĕнле хăйса куçран пăхас?

* * *

---

1963

Шанманнисем, ан тив, ан шанччăр,
Çын тивĕçне, ан тив, шав манччăр!
Вĕсем лĕх-лĕх! туни çине
Сурса кăна хăварăпăр:
Тăван чăвашăн ыр ятне
Çӳлтен çӳле хăпартăпăр!

Чĕлхемĕрĕн вăйне-халне
Пур тĕнчене кăтартăпăр!
Шанманнисем, ан тив, ан шанччăр,
Çын тивĕçне, ан тив, шав манччăр...

## *Комсомола*

---

1964

Комсомолăм, тăван Комсомолăм!
Ывăлу пек таятăп пуçа:
Ман чĕре сăпкине эс сиктертĕн,
Эсĕ уçрăн ярах ман куçа!
Ывăлу пек таятăп пуçа.

Комсомолăм, тăван Комсомолăм!
Эсĕ çулăмлăх кĕртрĕн чуна,
Пехиллерĕн —
Темле хĕн килсен те —
Пурăнма кĕрешӳллĕн кăна!
Эсĕ çулăмлăх кĕртрĕн чуна.

Комсомолăм, тăван Комсомолăм!
Эсĕ чĕртнĕ кăвар — кăкăртах.
Ленинла чăнлăхпа халлануçăн,
Ленинла чăнлăха çеç шануçăн,
Эпĕ утăп малтан малаллах —
Çăмăл мар çулпалах, тăваллах...
Комсомолăм! Тăван Комсомолăм!
Эсĕ чĕртнĕ кăвар — кăкăртах.

## *Николай Островские*

(Çуралнн 60 çул çитнĕ тĕле)

1964

Вунçич çултах тӳшек çине тӳнсен —
Эп браунинг е мăйкăч шырамарăм.
Эп Павкăпа тус пулнă пĕчĕкрен!
Ун сăнарне нихçан умран ямарăм!
Алла тытсассăн сăвăç перине,
Вăл пит пуклаккине чунпа туйсассăн—
Сӳнме памарăмах ĕмĕтсене,
Хам шăпана таймарăм пуç эп ассăн.
Перо каймарĕ манăн аларан,
Шăла çыртсах туптарăм та туптарăм,
Сунтал çинчи чĕп-чĕр юна пăхмарăм!
Эп Павкăпа тус пулнă ачаран,—
Вăл ман юратăвăм, вăл ман хăватăм...
Çапла эс пирĕншĕн хыт çул хыватăн!

## *Чăваш университечĕ*

1967

Эс çутă тĕнчене
шăтса тухас куна
Эп йăлтăр шуçăма
кĕтейнĕ евĕр кĕтрĕм.
Халь тулчĕ ĕмĕтĕм,
халь илтрĕм сассуна!
Çунатлă чунăмра —
хĕвел чечекĕ чĕртрĕм...

# *Соната*

1

КĂСĂЯ пуласчĕ ман паян —
Форточку умне вĕçсе пырасчĕ:
Икĕ йăл шăрçа пек ялтракан
Хыпăнуллă мăшăр куçпалан
Сан çине чăр-чăрр пăхса ларасчĕ.
Форточку умне вĕçсе пырасчĕ...
Куç тулли савса пăхса ларасчĕ!

2

ЛАПКА ÇИЛ пуласчĕ ман паян —
Эс иртен çулпа кумса çӳресчĕ:
Питӳнтен, çавра янахунтан,
Тутăр айĕн тухнă кăтрунтан
Çепĕççĕн, ачашшăн сĕртĕнесчĕ.
Эс иртен çулпа кумса çӳресчĕ...
Питӳнтен ачашшăн сĕртĕнесчĕ!

3

ЮР ПĔРЧИ пуласчĕ ман паян —
Сан тĕле вĕлтĕртетсе тухасчĕ:
Шурă лĕпĕш майлă пĕр самант
Пуçу çийĕн лăпкăн явăнсан,
Кĕп-кĕрен туту çине анасчĕ.
Шĕл-кăвар туту çине анасчĕ...
Ырлăхра ирĕлейсе каясчĕ!



статьясем
çырусем

*# Хыт утăмлă пулар!*

(Республикăри çамрăк авторсен канашлăвĕнче вулаттарнă сăмах)

Юлташсем! Тăван литературăн чĕр шанчăкĕ пулса тапакан çап-çамрăк чĕресем!

Чăн чăвашла салам сире, октябрьле-коммунистла салам!..

Ăнкарса илме пултарайăр-ши эсир: мĕн тери сирĕн хушшăрта пулас килет манăн çак самант! Ăнăçсăр чир, шеллĕхе, вырăн çинчен тăрса сирĕн пата çитме ирĕк памĕ. Çапах та парăнсах тăмăпăр: çыру урлă та пулин калаçса илĕпĕрех. Çирĕп шăнăр тавра явăнса пыракан сăмах хайлама шутламастăп, пăттăн-паттăн тухакан уйрăм шухăшсем çинче кăна чарăнса тăрăп.

Юлашки çулсенче поэзире çĕнĕ авторсем чăннипех те йышлăн палăрни савăнмаллипех савăнтарать: калчи пулсан, тыррине те кĕтетĕн! Анчах, сăвăсене тишкерÿ-çĕн, тунсăх та самаях пусасшăн: ытлашши пĕрешкел, ытлашши ыр кăмăллăн, каçса каюллăн юрлатпăр. Çĕк-лентерÿллĕ йыхравлăх, гражданла пафос темĕншĕн шут-сăрах сайра тĕл пулать, Маяковскипе Çеçпĕлтен, Гейне-пе Гюгоран ытла та сахал вĕренместпĕр-ши, тусăмсем?!

Калав текен «пĕчĕкçеççĕ» проза çак иртнĕ пĕр-ике çул самаях уксахлама тапратнăччĕ, шиклентеретчĕ. Халĕ, кĕтмен-туман çĕртен, Василий Игнатьев ыткăнса тухрĕ те — чĕре акăш ташши кĕввипе ташласа илчĕ. Рехмет!

Нацилле колорит тени литературăшăн кирлĕ пахалăх. Хăшпĕр авторсен произведенийĕсене вулатăн та, шеллĕхе, пуçа çĕмĕретĕн: оригиналах-и ку е пĕр-пĕр урăх чĕлхерен куçарнăскер-и?.. Нацилле колоритсăр, вилĕмсĕр Горький каларăш, нимĕнле искусство та çуккă, çакна пирĕн яланах асра тытасчĕ!

Литература ĕçĕ — чĕлхе ĕçĕ, тетпĕр. Апла пулсассăн, иксĕлми пуян та тĕлĕнмелле çаврăнăçуллă-хăватлă чĕлхемĕре пирĕн юратса тĕпчес-тишкерес пулать, чăннипех те вирлĕ пĕлес пулать. Анчах та халлĕхе эпир ăна

япăх пĕлетпĕр, тĕпчесе алла илме ӳркенетпĕр, хамăр словаре пуянлатассишĕн тăрăшмастпăр, çуралса ӳснĕ таврари чĕлхене хаçат чĕлхипе хутăштаратпăр та — çитрĕ те!.. Теприсем тата (çамрăккисем çеç те мар!) «ни чăваш, ни вырăс эп, хама хам незнайски» калаçса тĕлĕнтереççĕ: те пĕр харăсах икĕ чĕлхепе усă курма пĕлетпĕр тесе мухтанаççĕ, те çапла май çивĕчрех чĕлхеллĕ пулса тăрасса шанаççĕ! Ҫайран пăхатăн та: çыру чĕлхийĕ те типпе тăрса юла пуçланă... Тăван чĕлхӳне юратни-хисеплени çуккă пулсан, унăн ялтравлă вăйĕшĕн хыпăнмастăн пулсан, перо тытмашкăн та кирлĕ мар, ман шутăмпа!

Писателĕн мораллĕ сăн-сăпачĕ хăйĕн творчествинчен уйрăм пулма пултараймасть. Хут çинче пĕр тĕрлĕ те пурнăçра тепĕр тĕрлĕ хăтланса пуранниичен киревсĕртерех икĕпитлĕх тек çуккă та... Урса-хăртса çапкаланни — халăхшăн е литературăшăн тăрăшнине пĕлтермест, вăл унăн индивидуалистла, вак-тăвек интереслĕ ленчешке чунне çеç уçса палăртать. Унашкаллисем, паллах, йышлă мар пирĕн, анчах тĕл пулан пеккисене курăннă-курăнманах тимĕр шăпăрпа шăлса вăркăнтарар: литература пек таса та сăваплă япала çумне лапра-тылчăк тавраш ан пырса çулăхтăр!

Çамрăксен канашлăвĕ — селĕм те пархатарлă ĕç: хам пулса курман пулин те, Волгинпа Вашават епле хавхаланса таврăннине лайăх астăватăп. Çапах та канашлу вăл—2—3 кунлăх шкул кăна-ха çав, ĕçе вĕренесси татти-сыпписĕрлĕхе юрататать. Шупашкарсем аптрамĕç, ялтисем вара? Уйрăмах та хальхи канашлăва лекеймен, анчах уйăхсерен шăтса пыракан парттă хушшикалчасем вара кирлĕ литературăна хăйсем тупса хăйсем ăнланма пĕлейменнисем — мĕнле?

Акă мĕскершĕн ĕнтĕ литература теорийĕ çинчен чăвашла çырнă кĕнеке «мăй таранах» кирлĕ пире. Ун евĕр пособи çуккине текех чăтса пурăнма докторсемпе кандидатсем йышлăн çитĕнтернĕ халăх ниепле те пултараймасть: Союз правленийĕпе обкомолăн ку ĕçе вăраха ярас марччĕ. «Çамрăк коммунист» страницисем çинче лектори йĕркелесен те хӳхĕм пулĕччĕ!

Шкулсенчи литкружоксем çинчен шухăшласа пăхмашкăн та тахçанах вăхăт. Ăçта-ăçта пур вĕсем, епле ĕçлеççĕ? Тăвата вăтам шкул пирĕн районта, 7 çул вĕренмелли — вуннăран та иртĕç. Анчах та Чăваш Туçари 7 çул вĕренмелли шкулти литкружок пĕртен-пĕр!..

Нивушлӗ чыс кӳрӗҫ ҫавӑн пек фактсем Ҫутӗҫ министерствине?

Юлашкинчен эпӗ, вӑрӑммӑн каларӑм пулин те, ҫакна каласа иртесшӗн. Тырӑ ытлӑн-ҫитлӗн пултӑр тесен, паха вӑрлӑх кӑна мар, акмалли лаптӑк та ҫителӗклӗ пулма тивӗҫлӗ. Литература пирки те ҫавах...

Халӑх ырлӑхӗшӗн, коммунизмшӑн тата миршӗн пыракан кӗрешӳре халӑха, партине ҫивчӗ сӑмах вӑйӗпе пулӑшасси, тӑван чӑваш литературине пӗтӗм тӗнче курмалла ҫиҫекен шая ҫӗклентересси — акӑ епле задача ҫамрӑксен умӗнче, акӑ епле тӗллев. Ҫав пархатарлӑ та ҫутӑ тивӗҫе пурнӑҫлассишӗн вӑй-хала та, сывлӑха та хӗрхенсе-шеллесе тӑрар мар, юлташӑмсем!

Хастарлӑ, хыт утӑмлӑ пулӑр,
Ҫӗршывӑн хастар ачисем,
Вут кайӑклӑн вӗҫӗр, ан юлӑр,
Ан юлӑр кунҫул уттинчен!..—

тесе хӑварнӑ пирӗн кӑвар чӗреллӗ поэтӑмӑр.

Хыт утӑмлӑ пулар, хӗвел ҫине пӑхса, нимле йывӑрлӑхран та шикленмесӗр, сулмаклӑн утар!

Сывӑ пултӑр, тӗреклентӗр те чечеклентӗр тӑван литературӑмӑр!

Сывӑ пултӑр вилӗмсӗр Ленин никӗсленӗ те вӑй кӗртнӗ аслӑ Партимӗр — куҫа та, чуна та савса-ӑшӑтса ялкӑшакан Хӗвелӗмӗр!

1956

# *Кӗрешӳсӗр пурнӑҫа эпӗ ӑнланма та пултараймастӑп*

(«Коммунизм ялавӗ» хаҫата панӑ интервью)

Эпӗ ҫыравҫӑ пулма ҫуралнӑ ҫын марччӗ: 18 ҫула пуҫиччен нихҫан та алла перо тытап тесе шутламанччӗ. Шкулта вӗреннӗ чух, 3-мӗш класран пуҫласа 10-мӗш класс таранах, эпӗ кашни ҫулах стена хаҫат редколле-

гийĕн членĕнче тăраттăм, анчах пĕтĕм ĕçĕм те художник-оформитель ĕçĕпех çырлахатчĕ. Заметкăсем çырас ĕç патне вара аллăм ниепле те пырасшăн марччĕ: çыраймастăп эп, теттĕм.

Ăçтан, мĕне пула-ха, эппин, «çамрăк поэт» пулса тăтăм эп?

1946 çулхи январьте, 10-мĕш класра вĕреннĕ чух, ачаранах хур кăтартса пурăннă чирĕм — çурăм шăмми туберкулезĕ — тĕп нерв системине сиенлерĕ те вырăн çине тăсса ӳкерчĕ, лармалла та мар туса хучĕ. Сывалса çитес шанчăк курăнманнине пĕлсессĕн, çулĕ-çулĕпе çурăм çинче выртас малашлăх куç умне тухсассăн, тӳрех калас пулать, мана çăмăл пулмарĕ. Чăн, хам çине алă хурас ăпăр-тапăр шухăш манăн пуçăма чи йывăр самантсенче те çулăхма хăяйманччĕ, Островский-Корчагин сăнарĕ ачаранах ăша кĕнĕрен пулĕ. Анчах эп тăтăшах тарăн шухăша путаттăм, кансĕрленеттĕм. Мĕскер вăл пурнăç? Мĕнлерех ирттерсе ярăп ăна? Мĕскер хăварма пултарăп халăх валли?

Ача чухнехи ĕмĕтĕм — художник пулассиччĕ. Тăлланса выртнă чух вара — ку ĕç мана пăхăнас çукки тӳрех паллă пулчĕ. Альбомла ӳкерсе ялалассемпе аппаланса выртма пулĕччĕ ĕнтĕ, анчах халăха тивĕçлĕ, халăха усăллă япаласем тума пултарасса шанаймарăм (тен, йăнăшрăм та пулĕ, пĕлместĕп). Анчах хура шăпама парăнса ним ĕçсĕр выртма тӳсĕм çитмерĕ, чĕремрен-юнăмран парăннă коммунизмпа хама çуратса ӳстернĕ халăхăн ырă ячĕшĕн пăртак та пулин усă пама пултаракан ĕç шырама — кĕрешӳве хутшăнма май паракан çĕнĕ хĕçпăшал шырама тапратрăм. Ăçта вăл, мĕнре вăл?..

Урлă та пирлĕ вăрахчен шухăшланă хыççăн, хамран хам шиклене-шикленех, эпĕ литератор ĕçĕ çинче чарăнтăм: Л. Украинкăпа Н. Островский, А. Бойченкăпа Н. Бирюков сăнарĕсем чун магничĕ пек туртса йăлтăртатрĕç...

Çапах та хамăн вăя шанмасăр шикленсе пурăнасси часах иртсе каймарĕ, мĕншĕн тесен хамра «çуралнă талант» çук иккенне эпĕ яр-уççăнах куратăм!.. 1948 çулта, больницăсемпе санаторисенче выртса таврăннă хыççăн, чун чăтайман енне, хăшпĕр çамрăксемпе пĕрле эпĕ колхозри стена хаçатне кăларма тытăнтăм. Хавхаланса кайрăм: тен, çакă вăл манăн кĕрешӳ хĕçпăшалĕ? Тен, çакăнта манăн вырăнăм, терĕм. Анчах та, шеллĕхе, ăнăçлă пулаймарĕ, çулталăк çурă çапăçса та колхозри

актива «вăратаймарăм», хаçатпа интереслентерсе ярай-марăм, колхоз пурнăçĕнче хаçат пысăк вырăн йышă-наймарĕ. Апла пулсан, чунăм та хам ĕçпе çырлахаймарĕ... Вара эп татăклăнах чăн-чăн хĕçпăшал литератор пери çеç пулма пултарĕ, тесе йышăнтăм, вăй-халăмăн ытларах пайне те çав енĕпе ятăм.

Вĕрентĕм — çыртăм, вĕрентĕм — çыртăм... Пĕрре те çăмăл пулмарĕ, «тен, кăлăхах тăрмашăнтăм» текен йӳçĕ шухăш та пĕрре кăна мар пыра-пыра çулăхнă. Анчах парăнас туртăм вăй-хал илеймерех, малалла утма чараймарех: ураран ӳкни 8 çул çитнĕ тĕле Шупашкарта пĕрремĕш кĕнеке тухрĕ.

Кĕрешӳ малаллах пырать: вăй çитернĕ таран вĕренетĕп, вăй çитнĕ таран çыратăп. Хамăн пултарулăхăн ӳсĕмĕсем çинчен эпĕ пачах та пысăк шанчăк хурса шухăшламастăп, анчах вăй çитнĕ таран, юлашки çулсенче тăтăшах халсăрланса айкашакан сывлăх май панă таран ĕçлĕп, кĕрешĕве сӳнтермĕп!

Юлашки тапхăрта, халичченхи пекех, лирикăлла пĕчĕк сăвăсем çыратăп, киввисене пичете хатĕрлетĕп, виçтăватă çул каярах çырма пуçланă «Октябрь тивлечĕ» тата «Водопровод» поэмăсене те çитес çул вĕçлесе çитерес килет, вĕсенчен пĕрне «Октябрь тивлетне», Социализмла Аслă революци 40 тултарнă тĕле пичете пама ĕмĕтленетĕп... Шеллĕхе, пăлахая пеме юратакан сывлăхăм çине шанма пултарайман пирки, ĕмĕтри произведенисем çинчен калаçма та кансĕр.

Литература ĕçĕсĕр пуçне, кулленхи хаçат ĕçĕнчен те пăрăнса пурăнаймастăп. Районти хаçата тăван колхоз пурнăçĕпе çыхăннă ыйтусем тăрăх е редакци тăратнă фактсем тăрăх тăтăшах çыратăп, уйрăмах çитменлĕхсем çинчен шарламасăр тăма пултараймастăп. Комсомол райкомĕ пуçарнипе тухса тăракан «Крокодил район тăрăх çӳрет» ятлă стена хаçачĕн ĕçне те çав туртăмпах хутшăнатăп. Çакă ĕç, чăн та, нумайăшне вĕчерхентерет, юнаттарать: «Хăйне те, амăшне те шаккаса хуратăп!» — тесе хăрлатнисем пĕрре кăна илтĕнмен. Анчах та çакă çул çине эпĕ унашкаллисен çилли-пăссинчен чĕтресе ӳкес тесе тухман!

Кĕрешӳсĕр пурнăçа эпĕ ăнланма та пултараймастăп.

1956

# *Ăшă çумăр хыççăнхи хунавсем*

Кăра сивĕсем иртсе çухалаççĕ; юр шывĕ те, «иртнĕ куншăн хуйхăрса», йĕре-йĕре ăсанать; çĕршыв типет... Ытарайми йăлкăшакан хĕвелĕн ăшшипе киленсе, пин-пин тĕрлĕ ӳсентăран йăшăлтатма тытăнать, анчах аш-кăрсах ӳсесси çук-ха: тăхтав юрри юрласа кăшăлтатать, темĕн кĕтет. «Ăшă çумăр çуса парасса кĕтет», теççĕ ва-ра кун пек чух ваттисем. Чăнах, ăшă çумăр чашкăрса иртет çеç — çĕр кăкăрĕ ирĕккĕн те савăнăçлăн сывласа ярать, çап-çамрăк хунавсем тапса тухаççĕ...

Пирĕн районти çамрăк авторсем тĕлĕшпе те çавăн пекрехех пулса иртрĕ.

Пилĕк-ултă çул каярах сăвăсем райхаçатра ăнсăрт-ран çеç курăнкалатчĕç, калавăн-очеркăн — тĕсĕ те çук-чĕ. Мĕн пирки-ха? Е районти ĕççыннисем ун чух илемлĕ сăмаха сума суман-и? Çук, пултарулăх вăй-халĕ халăх-ра ĕмĕрех вĕренĕ, ĕмĕрех вĕрĕ те! Ĕç унта мар: хаçат редакцийĕ ун чух литература çине кутăнла пăхатчĕ, «сăвă техникине пĕлместпĕр çав эпир!» тенипех лăп-ланса ларатчĕ. Тепĕр майлă каласан, халăх пултарулă-хĕн тăприне ун чухне çурхи ăшă çумăр çуса çемĕçтер-менччĕ, пултарулăх хунавĕсем те çавăнпа ашкăрса çĕк-ленейместчĕç. Халь ĕнтĕ, 1950 çул хыççăн, литпĕрлешӳ чăмăртаннă хыççăн, çав «çурхи ăшă çумăр» ытлăн-çит-лĕнех лӳшкентерчĕ, унăн сĕткенне активнĕрен шăтса тухнă «хунавсем» те ши те пи кайса ӳсме тапратрĕç.

Çак хушăра пирĕн самаях хулăн сасăсем çирĕпленсе ĕлкĕрчĕç: П. Вашаватпа Г. Воротников тата С. Михай-лов район тулашне те тухрĕç, малашне пысăк шанчăк паракан И. Туçасен пултарулăхĕ те пирĕн кружокăн ынатлă ăшшине туйса курчĕ, хамăр хушăран В. Волгин тухнишĕн вара пирĕн — мухтанма та тивĕç пур.

Юлашки тапхăрта, çавăн пекех, Ю. Ивановпа И. Се-менов, А. Лапинпа т. ыт. те хăйсен малтанхи ĕçĕсене пичетлерĕç, çырма пултарнине ĕнентерчĕç. Халлĕхе пи-четре пулманнисем, анчах тăрăшсах ĕçлекенсем, мĕн чухлĕ тата! Хăш-хăш ялтан кăна çырмаççĕ! Шанчăк параканнисем вĕсем хушшинче те пайтах,— ӳркенмесĕр ĕçлеме хевтисем çитчĕр çеç...

Кӑлтӑк-ҫитменлӗх ҫинчен сӑмах хускатас-тӑк, чи малтанах проза жанрӗ имшеррине палӑртас пулать: пурте сӑвӑ ҫине тирӗнсе хӑшкӑлатпӑр. Г. Воротниковпа П. Вашават тата В. Тимофеев калавӗсем, Г. Архиповпа В. Малинин очеркӗсем ӑнӑҫу пуласса систереҫҫӗ.

Кӑлтӑкӗ вӑл пирӗн, паллах, «ашкӑрса кайнӑ» поэзире те ытлӑн-ҫитлӗнех. Асталӑх сахалли касать пире пурне те: тин ҫеҫ ҫырма пуҫланисене те, чылайранпа пичетленекенсене те. Ку вӑл, пӗр шутласан, законлах та пек: утма вӗреннӗ чух ачасен тӑсӑлса ӳкесси те, ланк! кайса ларасси те пулатех ӗнтӗ. Ҫапах та сахалтарах ӳкесчӗ, сӗтел-пуканран вӑхӑтра ярса тытма хӑнӑхасчӗ!

Тин ҫеҫ ҫырма пуҫлакансен чи пысӑк инкекӗ — сӑвӑ техникине пӗлменни. Мӗскер вӑл ритм е рифма, мӗскер вӑл силлабика е силлабо-тоника — ҫавна лайӑх тӗшмӗртмесӗр, ямбпа хорей, дактильпе анапест тата амфибрахи текен япаласене «йӗвенлемесӗр» темле пуян шухӑшран та сӑвӑ тума ҫук ӗнтӗ. Акӑ епле кӗвӗлет, сӑмахран, пӗр сӑвӑра Р. Аршинов:

Амӑшне каласа пачӗ
Тӑшманпа ҫапӑҫни ҫинчен...

Паллах, сӑвӑ тееймӗн кӑна... Манӑн умра халӗ Аршиновӑн темиҫе сӑвви выртать. Хӑшпӗр сыпӑксем автор шухӑшлама пӗлнине, ҫырма пултарнине туйтараҫҫӗ, анчах малтан унӑн сӑвӑ техникине ҫине тӑрсах вӗренес пулать.

Сӑмах май каласан, ритм-рифма мӗн иккенне шкул ачисем (8—10 класрисем те!) япӑх тӗшмӗртни литература преподавателӗсенчен те нумай килет. Литература теорийӗ ҫинчен ачасемпе тӑтӑшрах калаҫасчӗ, кашни шкултах литкружоксем йӗркелесчӗ, районти ҫутӗҫ пайӗн те ку ӗҫе ытларах хутшӑнасчӗ!.. Лайӑх ӗҫлекен кружоксем те ҫук мар пирӗн. Илӗпӗр, акӑ, Энтри Пасар шкулӗнчи кружоках: унӑн вӑйӗпе кӑларнӑ «Шурӑмпуҫ» журнала алла тытсан — юрласа ярас килет, Ҫеҫпӗл Мишшин «чӑваш ачи, сассуна пар!» текен сӑмахсемпе уҫӑлаканскер, тулашӗпе те, ӑшчикӗпе те ҫав тери хӳхӗм. Тав та рехмет кунти учительсене ӗҫе пуҫарнӑшӑн! Чыс та хисеп кунти ачасене шухӑша пуҫ таврa ҫавӑрса пӑхма ӳркенменшӗн!

Поэзи хӑвачӗ — сӑнарлӑ чӗлхере. Ахаль ҫеҫ каласа кайни вулакана хускатаймасть, ӳкерчӗк туса калаҫмал-

ла, эпитет, танлаштару, аллитераци тенисемпе ытларах усӑ курмалла.

Ҫӗнӗрен хутшӑннӑ авторсенчен уйрӑмах Шӑпчӑк Алисси савӑнтарать — сӑнарлӑ чӗлхе вӑйне поэтесса лайӑх туйса илнӗ. Ҫур илемӗ ҫинчен вӑл, сӑмахран, «ах, хитре!» тесе кӑшкӑрашмасть, ӳкерчӗк туса парать:

Шап-шур акӑш ҫӗкленчӗ мӑнаҫлӑн,
Хумхантарчӗ таса сывлӑша...

Пурнӑҫ ҫине те Шӑпчӑк Алисси кӗрешӳллӗ куҫпа пӑхать, халӑх интересӗпе пурӑнать, поэзишӗн кирлӗ хӗлхем пурах унӑн. Паллах, сӑвӑ ӑсталӑхне хӑпартассишӗн пайтах ӗҫлемелле-ха, анчах авторӑн пысӑк шанчӑк пуррине — татах калама пулать. Ҫавӑнпа та, литературӑра ӑна ҫанӑ тавӑрсах ӗҫлеме хистес килет.

Қалас пулать, хӑшпӗр ҫамрӑксем литература ӗҫӗ мӗн пек йывӑр иккенне ӑнкарсах илесшӗн мар-ха. Ӑна вара ҫырма шут тытнисен кирек-камӑн та яланах асра тытмалла: ҫӑмӑллӑнах, чӗререн ҫунса ӗҫлемесӗрех пулать текен шухӑшпа улталанса йӑнӑшасси ан пултӑр! «Пӗртен-пӗр кирлӗ сӑмаха тупассишӗн пиншер тонна сӑмах купи пӑтрататӑн»,— тенӗ В. В. Маяковский. П. Хусанкай вара, «Сӑвӑҫ» ятлӑ сӑввинче, ҫапла калать:

Пуҫ миминче туптаса сӑмах хывиччен —
Хавшак чунпа ҫунӑхса нумай кӗлленен.
Ҫырнӑ сӑвву ҫынсене виттӗрех тесен —
Ӑна, чернил вырӑнне, юнупа тӗрлен.
Ҫамрӑк чуна вут-кӑвар хыптарам тесен —
Шур хут ҫине сӑмах мар: хӗлхем сирпӗтен.
Ак — поэтӑн ӗмӗрех тапакан чӗри.
Сӑвӑ ҫырма ҫав-терех ансат тетӗр-и?

Ҫавӑнпа та, пултарулӑх сӗврӗлсе ан пӗттӗр, хӑватлансах пытӑр тесен, ӗҫе чун-чӗререн юратни, марксизм-ленинизм идейишӗн тата тӑван чӗлхепе литературӑн ялтӑравлӑ ҫӗкленӗвӗшӗн Ҫеҫпӗл Мишши пек ҫунса пурӑнни кирлӗ. Ыт-ахаль ҫеҫ ҫыракана литература хӑй ҫумӗнчен часах шӑлса ывӑтӗ!

...Ҫапла, ӑшӑ ҫумӑр хыҫҫӑнхи хунавсем тапса тухрӗҫ, ашкӑрса ҫӗкленме тапратрӗҫ. Хыттӑнрах та йышлӑнрах ҫӗкленччӗр вӗсем, ем-ешӗлскерсем, ҫут тӗнчене илем кӳмелӗхех патварланса ҫӗкленччӗр! Ҫӗкленччӗр, пин-пин турат хуша-хуша ҫӗкленччӗр, ҫав чӗлтӗрти туратсем ҫине вара — шӑпчӑк та, саркайӑк та илентӗр!

1956 ҫ.

# *Тӑван литературӑна халӑх хушшине сарасси*

(Вырӑнти тӗслӗхсем, шухӑшсем)

Тахҫан-тахҫан, ҫӗр ҫултан та ытла ӗлӗкрех («ҫакӑ ҫутӑ тӗнчере» Александр Пушкинпа Михаил Лермонтов тата Шандор Петефипе Генрих Гейне улӑпсем пурӑннӑ-ӗҫленӗ вӑхӑталлах), Шупашкар ҫывӑхӗнчи пӗр юрӑҫӑ-импровизатор,— литература историне Чӑваш Хвети ятпа кӗрсе юлнӑскер,— тарӑн шухӑша пута-пута, ҫапла юрланӑ:

Чӑрӑш тӑрринче куккук авӑтать,
Ырашлӑхра путене автать,
Ҫӗмӗрт тӑрринче шӑпчӑк автать,—
Пирӗн автас килмест-и?..

«Пирӗн автас килмест-и?..» Мӗскер кӑна ҫуккӑ-тӑр ҫакӑ пӗчӗк пуплевре — мӗн авалтан сӑвӑ-юрӑшӑн касӑлакан халӑхӑн чунӗ те, чӗререн кӳренни те, вак халӑхсен ӑсне-халне сӑнчӑрласа тӑракан патша саманине пӗтӗм чӗре тымарӗпе ылханни те!

Мӗн чухлӗ «авӑтма» ӗлкӗрейнӗ «читлӗхри» Чӑваш Хвети, мӗн евӗр хитре авӑтайнӑ вӑл — халӗ тин ӗнтӗ эпир пӗлме те пултараймастпӑр: унӑн пултарулӑхӗ хут ҫине ӳксе юлайман, хӑшпӗр сӑввисем кӑна ӑнсӑртран, татӑкӑн-кӗсӗкӗн ҫакланкаланӑ, вӗсем те пулин — вансатуса ҫеҫ... Анчах унӑн чун-чӗрин ҫунатне ҫыхса-тӑлласа тӑнӑ ылханлӑ тискер самана,— ленинизм хӗвелӗн ӗмӗрне те иксӗлми вӑй-хӑватне парӑнса,— ҫурхи пӑтранчӑк шыв пек шар-шарлатса йӗрсе ӑсанчӗ, нихҫан таврӑнмиех куҫ умӗнчен тасалчӗ. Арӑскалсӑр Чӑваш Хветин телейлӗ шӑллӗсемпе йӑмӑкӗсем те, хӑйсен хавасла та уҫӑ сассисемпе таврана ян! та ян! янтӑратса, каҫса кайсах «авӑтма» тытӑнчӗҫ. Тӑван халӑхӑн ӗмри-ӗмрипе «хуп хушшинче» тертленнӗ, ҫапах та упранса юлнӑ пултарулӑхӗ — ытти вак халӑхсен пултарулӑхӗ пекех — вӗресе тӑракан хавалпа ҫӗкленме пуҫларӗ, ҫав шутра тӑван литература та, «шанчӑка ҫухатнисем» пачах та кӗтме-шухӑшлама пултарайман ытарайми паха «ҫимӗҫсем» ҫитӗнтерме тапратрӗ, ирӗклӗ халӑх чӗринчен мӗнешкел хӑватлӑ ҫулӑм тухма пултарнине кӑтартрӗ... Пусмӑрҫӑ-

крепостниксен шухăш-кăмăлне палăртма ăсталаннă А. Фет-Шеншин кĕвĕленĕ халлапа,—

> В сыртах не встретишь Геликона,
> На льдинах лавр не расцветет,
> У чукчей нет Анакреона,
> К зырянам Тютчев не придет...—

текен элеклĕ те ăнăçсăр халлапа,— çĕнĕ самана хăйĕн сулмаклă утти айне туса, лапчăтса-ирсе хăварчĕ! Чукчасемпе зырянсен те, марисемпе чăвашсен те хăйсен Анакреонĕсем çитĕнеççĕ, Тютчев та вĕсем хушшине ăшă кăмăлпах пырса кĕчĕ: янратать çеç сассине!

Октябрь вут-кăварĕпе хыпса çулăмланнă Çеçпĕл Мишшин ян-хурçă пек çивчĕ йыхравĕ илтĕнсе кайнăранпа — пĕтĕмпе те 36—37 çулсем анчах-ха; Константин Ивановăн вилĕмсĕр «Нарспийĕпе» Николай Шупуççыннин «Хитре Чĕкеçĕ» хăйсен кĕмĕл шăнкăрав евĕр сассисемпе тĕнче курма тухнăранпа та — çур ĕмĕр те çитеймен-ха; тутар-монгол ханĕсен таканĕ айне пулса вăхăтлăха çухалнă чăваш çырулăхĕ çĕнĕрен чĕрĕлсе тăнăранпа та — 90 çулсем патнелле кăна-ха,— анчах мĕн тери улăпла утăмсем яра-яра пусрĕ çак пĕчĕкçĕ вăхăтра пирĕн литература, пирĕн çырулăх! Пĕтĕм кунçулăмăршăн пекех, çак иртнĕ 40 çул тăван сăмах аталанăвĕшĕн те — чăн-чăнах Çĕнĕ Кун пулчĕ!

Литературăн чи малтан шăтса çеçкеленнĕ жанрĕ, поэзи, Аслă Аттелĕх (Аслă Отечественнăй) вăрçичченех ĕнтĕ хăйĕн черченкĕ сăнĕпе вăйне кăтартнăччĕ, анчах кирек хăш литературăшăн та тĕп жанр пулса тăракан проза — ун чухне ытах та хавшакчĕ-ха. Халĕ ак,— поэзи çĕнĕрен те çĕнĕ сулăмлă утăмсем тунипе пĕрлех,— çав жанр та хăйĕн теветкел вăй-питĕлĕхне çитсе пырать, хул-çурăмне вăйлăнрах та вăйлăнрах вылянтарать: 15—20 çул ĕлĕкрех пирĕн романсемпе повеçсен хисепĕ хăрах алăри пӳрнесемпе шутламалăх кăна пулнă пулсан, паян ĕнтĕ — романсем хăйсемех иккĕмĕш теçетке патнелле пыраççĕ!.. Пысăк калăплă произведенисен ĕрчевлĕхĕ уйрăмах юлашки виç-тăватă çул хушшинче уççăнрах палăрма тытăнчĕ: кашни çулталăках пире ик-виçĕ роман, ик-виçĕ повесть парнелет. Тин çеç ашкăрса тапса тухнă çамрăк хунавсем çине куç ывăтатăн-тăк вара — пушшех те çĕкленсе-çунатланса каятăн: ку çеç пулĕ-и пăртакран!

Хыттăнрах та хыттăнрах янăрать, уççăнрах та уç-

çăнрах илтĕнет пирĕн поэтсемпе писательсен сасси — коммунизмпа халăхсен туслăхĕн аслă идейине саракан сасă. Аслă Октябрĕн «ирĕк вут-кăварĕ» çăлса хăварнă чĕлхемĕрĕн çепĕç илемĕпе çиçĕмле хăватне кăтартакан сасă. Ивановпа Тайăр Тимкки, Шупуççыннипе Шелепи, Çеçпĕл Мишшипе Тал-Мăрса, Элкерпе Павлов, Хумма Çеменĕпе Исаев Мĕтри, Иван Мучипе Данилов-Чалтун, Хусанкайпа Ухсай, Краснов-Аслипе Талвир, Митта Ваçлейĕпе Петокки, Осиповпа Ивник, Алкапа Шавли, Алентейпе Артемьев, Кăлканпа Максимов-Кошкинский, Трубинапа Пайраш, Долговпа Уйăп Мишши, Тукташпа Бараев, Турханпа Уяр, Краснов-Кĕçĕннипе Ĕçхĕл, Айзманпа Алакĕр, Кипекпе Илпек вулакансемшĕн çывăх та юратнă ятсем пулса тăчĕç, вĕсене пĕлмен-илтмен чăваша халĕ, Мускав писателĕ К. Горбунов калашле, 10—12 çулхи ачасем хушшинче те шыраса тупаймăн!.. Хыттăнрах та хыттăнрах янăрать, уççăнрах та уççăнрах илтĕнет поэтсемпе писательсен сасси,— çитменнине тата Чăвашра кăна мар ĕнтĕ: социализмла аслă çĕршывăмăрти ытти пĕр канашлă, тăванла халăхсем те, чикĕ тулашĕнчи халăхсем те ăна ытларах та ытларах йышăнаççĕ, хăйсен ынатлă ытамĕнче ачашласа юп кураççĕ, çĕнĕ вăйхал кĕртеççĕ. Çĕмĕрт куçлă Нарспи çичĕ-сакăр чĕлхепе чĕвĕлтетни çинчен, Украинăра общественность Çеçпĕл Мишши сăнарне Маяковский сăнарĕпе танлаштарни çинчен каласса та тăмăпăр. Паян кун çанна тавăрсах ĕçлекенсен те чылайăшĕн сасси инçе-инçе кайса саланчĕ, нумай-нумай чĕлхесен кĕрлевĕнче тымар ярса, çĕнĕ сулăмлăх, çĕнĕ вут-çулăмлăх туянчĕ. Вăл е ку чăваш писателĕпе поэчĕн творчествине ырлакан саламлă ăшăăшă çырусем Чехословакипе Польшăран та, океан леш енчи Австралипе «тимĕр чаршав» хыçне пытанса аппаланма пăхакан США-ран та килеççĕ (пире ăнланма пултаракан прогрессивлă çынсем унта та пурах-çке!). «Эпикăлла формăпа çырнă чи ăнăçлă сăвăлла произведенисенчен пĕри» — çапла хакланăччĕ Я. Ухсайăн «Çулне» Пĕтĕм Союзри писательсен II съездĕнче Самед Вургун, совет поэзийĕ çинчен содоклад тунă майăн. «Революци умĕнхи тапхăр çинчен вăрçă хыççăн çырнă чи паха улт-çичĕ произведенирен пĕри»,— çапла каланăччĕ А. Талвирăн «Пăва çулĕ çинче» романĕ пирки Александр Фадеев хăй вилес умĕн çулталăк маларах; иртсе кайнă 1956 çулта та, кăçал та (мĕнпур тĕнчери ĕççыннисен генилле çулпуçне В. И. Ленина чысласа

асăнмалли кунсенче) пĕтĕм планетăмăр тавра сас яракан Мускав радиостанцийĕ урлă П. Хусанкайăн «Горкăри çурт» поэми, Владимир Маяковскин произведенийĕсемпе çумма-çуммăн юхса, халиччен чăваш тени мĕн иккенне те пĕлмен çынсен кăмăлĕсене те тыткăнла-тыткăнла янăрарĕ... Çакнашкал куçа шартакан фактсене асăрхаман, çав фактсем мĕне пĕлтерни пирки шухăшласа пăхма вăхăт тупайман хăшпĕр юлташсене мĕскĕн çынна хĕрхеннĕ пек хĕрхенессĕм кăна килет!

Çакă вăл, паллах, пĕрре те пирĕн литературăн кăлтăксемпе çитменлĕхсем çуккă тенине, вăл яланах япяка та тип-тикĕс çулпа аталанса пырать тенине пĕлтермест. Сахал мар пулнă пирĕн çитменлĕхсемпе кăлтăксем, халĕ те сахал мар вĕсем... Малашне урăх пулас çук кăлтăк-çитменлĕх, тесе каламашкăн та пултараймастпăр, мĕншĕн тесен кам нимĕн те тумасть, çавă çеç ĕмĕрне те йăнăшмасть. Анчах та çав çитменлĕхсем, çав кăлтăксем вĕсем пирĕн — агони патне илсе çитерес чирсем мар, вĕсем мĕнпурĕ те — ӳсĕмĕн чирĕсем кăна, хăйсем хыççăн вăйпитти организма малтанхинчен те çирĕпрех, малтанхинчен те тасарах туса хăваракан çăпансем кăна!

Тăван литература патварлансах-сулăмлансах пыни, халăх ăна ытларах та ытларах хапăллани чăваш писателĕсен Союзĕ кăларса тăракан «Ялав» журналпа «Тăван Атăл» альманахăн тиражĕсем пысăкланнăçемпысăкланнинчен те куçкĕретех курăнать. 1930-мĕш çулта, сăмахран, «Сунтал» (хальхи «Ялав») мĕнпурри те 1000—1500 экземпляр анчах сарăлма пултарнă пулсан, халĕ ĕнтĕ вăл журнала республика тулашĕнчи вулакансем хăйсемех çав хисепрен чылай нумайтарах çырăнаççĕ, журналăн пĕтĕм тиражĕ вара — 8000 çитиех тапса хăпарчĕ! Çитес икĕ-виçĕ çул хушшинче 10000 урлă каçасса та çирĕппĕнех шанатпăр [1].

Камăн чунне ан савăнтартăр çакă?!

Анчах та «Ялав», «Тăван Атăл» тата «Ялав» библиотеки» юлашки тапхăрта хамăрăн районта, Октябрь районĕнче, епле сарăлнине сăнатăн та — савăнăçлă кăмăлтуйăм çине кӳренĕç ĕмĕлки тавранать: мĕн тери сӳрĕклĕх!.. Пĕрер тăватă çул каярах (журнал 4000 тиражпа кăна тухса тăнă чух!) районта вăл, «Ялав», 200 эк-

[1] 1977 çулта «Ялав», «Тăван Атăл» журналсен тиражĕ — 55000-шер экземпляр. (Пухса хатĕрлекен асăрхаттарни.)

земпляр ытла сарӑлатчӗ. Халӗ тесен — ӑна ҫырӑнакансен пӗтӗм хисепӗ икӗ хут пысӑкланнӑ хыҫҫӑн! — пирӗн районта вӑл... икӗ хут сахалтарах сарӑлать: 1957 ҫулшӑн ӑна мӗнпурри те 150—160 экземпляр кӑна ҫырӑнтарнӑ. «Республика малалла, эпир — каялла»,— ҫакӑн пек пулса тухмасть-и ку?

«Тӑван Атӑл», «Ялав» библиотекин» районти ӑрӑскалӗсем вара пушшех те синкертерех-мӗн. Пӗри вӗсенчен кӑҫал «аран-аран» 60—70 экземпляр килсе тӑчӗ, тепри — 20—30 экземпляр! Районта мӗнпурри пирӗн — 82 ял; вулав ҫурчӗсем (колхоз клубӗсене шута илес мар-тӑк та) — 40; шкулсем — 37 (вӗсенчен пиллӗкӗшӗ— вӑтам шкул); уйрӑм библиотека тытакан предприятисем тата — мӗн чухлӗ... Мӗскер каласси пур! — ытарма та ҫук анлӑн пырса тӑрать иккен массӑсем патне тӑван литературӑмӑр!

Ӗҫ ҫапла пулса тухнишӗн,— малалла мар, каялла танкӑлтатнишӗн,— районти «Союзпичет» уйрӑмӗн айӑпӗ, паллах, пӗчӗк мар. Ана тӳрре кӑларма шутлани пӗрре те тӗрӗс пулмӗччӗ. Пачах урӑхла, «Союзпичет» ӗҫне нумай лайӑхлатас пулать, почта уйрӑмӗсемпе агенстӑвсене хаҫат-журнала чӑнласах юратакан кадрсемпе ҫирӗплетес пулать: ку ӗҫе ӑнсӑртран ҫеҫ ҫакланнӑ е тӑван литературӑна пачах юратман ҫынсемпе аяккках каяймӑпӑр.

Илер-ха, сӑмахран, Н. юлташа,— Қараньялӗнчи агенство заведующине. Пӗтӗмӗшпе каласан, вӑл начарах мар работница шутланать, анчах та тӑван литературӑна вара вӑл акӑ еплерех «пропагандӑлать»:

— Мӗне пула пит сахал сарӑлнӑ ара сирӗн патӑрта «Тӑван Атӑл»? — ыйтрӑм эп унран пӗрреччен.

— Халӗ те тем пекех пропагандӑлатпӑр та, ҫырӑнмаҫҫӗ-ҫке-ха.

— Мӗн тесе тиркеҫҫӗ ара? — тетӗп.

— «Ни картина ҫук унта, теҫҫӗ, тухасса та вӑл виҫӗ уйӑхра ҫеҫ пӗрре тухать!» теҫҫӗ; мӗнех тавӑрса калан вӗсене?

— Тытӑр та ӑнлантарӑр эсир: виҫҫӗре мар, икӗ уйӑхра пӗрре, тейӗр...

— Икӗ уйӑхра-а-а?..

— Элле пӗлместӗр-и? Иккӗмӗш ҫул вӗт!

— Мӗнле ара ун пек... Йӑнӑшатӑр пу-у-уль?..

Те каҫса кайса кулмалла кунта, те макӑрмалла кун-

та... Тур сыхлатăрахчĕ пире тăван литературăн çакăн евĕрлĕ «тусĕсенчен!»

Ĕç çине ĕçлех пăхнă чух вара, ĕçе юратсах тунă чух, чăваш хаçат-журналне анлăн сарасси пачах та кăткăс япала мар иккенни çакă пĕчĕк тĕслĕхрен те уççăнах курăнать. Пур пирĕн районта пĕр пĕчĕкçĕ ял, Кивĕ Тукай, 60—70 килтен тăраканскер. Пур çак ялта почтальон, Перцова юлташ. Шăпах вăл ĕнтĕ пĕррехинче «Ялав» библиотекин» кĕнекине алла тытнă та: «Кам çырăнать çак кĕнекене?» тесе, ял тавра çаврăннă — нимĕн те мар 10 экземпляр çырăнтарнă. Ку вăл — района килекен мĕнпур тиражăн 45 процентне яхăнах!

Мĕне тăрать ĕнтĕ çакăн хыççăн «çырăнмаççĕ» текенсен пакăлтатăвĕ?!

Çапла, «Ялав», «Тăван Атăл» тата «Ялав» библиотеки» районта япăх сарăлни çыхăну работникĕсенчен питĕ нумай килет. Анчах çапах та мĕнпур ответлăха çыхăну кантурĕпе «Союзпечать» çине йăвантарни пархатар кĕртес çук, ĕçе тивĕçлĕ шая çĕклес çук. Мĕншĕн тесен хаçат-журналпа ытти мĕнпур литературăна халăх хушшине ытларах сарасси вăл — уйрăм работниксен ĕçĕ кăна мар, вăл пĕтĕм общественноçăн ĕçĕ, чыслă тивĕçĕ. Партипе комсомол организацийĕсен те, профсоюзсемпе уйрăм общественниксен те ку ĕçе чăн-чăнах хĕрӳ активлăхпа хутшăнас пулать, тăван литература массăсем патне анлăрах çиттĕрччĕ тесе, пĕтĕм чунтан тăрăшас пулать, ăна сума сумаллине харпăр хăй тĕслĕхĕпе кăтартса парас пулать!

Шăпах çакă çитеймест ĕнтĕ пире, шăпах çавăн пирки намăс курать те районăмăр республика умĕнче.

Хаçат-журнал саракан уполномоченнăйсем пирĕн, чăн ĕнтĕ, ытлашшипех те. Анчах вĕсенчен нумайăшĕ шанса панă ĕçĕн ответлăхне нимĕн туймасăрах ирттерсе ярaççĕ. Хăйсене тӳрре кăларас тĕллевпе вара «объективлă» сăлтавсем шырама, наян почтальонсен юррине сĕтĕрме тытăнаççĕ:

— Что поделаешь, çырăнмаççĕ...

Каласса каятăн та, шеллĕхе, çавăн пек уполномоченнăйпа — вăл хăй те пĕр чăваш журналĕ те çырăнманмĕн, «Ялав», «Тăван Атăл» журналсене тытса курманни те тахçан-мĕн, Вислăпа Дунай хĕрринех кĕрлеттерсе çитнĕ, океан леш еннех каçса ӳкнĕ произведенисене те «асăрхамасăр» юлнă-мĕн, тăван литературăн паянхи уттине нимĕн чухлĕ те тĕшмĕртмест-мĕн. Аçтан «çаварма»

пултартăр-ха çавăн пек «общественник» вулаканăн чунне? Хăй те тутанса курман çимĕç пирки «тутлă, çиййр!», тесе сĕнекен çынна камах ĕненсе лартăр-ха?!

Калас пулать, интеллигенцин уйрăм представителĕсем (çитменнине, хамăр районта кăна-и, вулаканăм!) тăван чĕлхепе тăван литература çине тӳнтерле пăхас туртăм палăртаççĕ, «нумай вĕреннĕ çынна мĕне кирлĕ чăвашла кĕнеке-журнал» текен шухăшпа улталанаççĕ,— нацилле нигилизм лачакине путаççĕ. Çуратса ӳстернĕ халăхăмăр культура енĕпе епле аталанса пырать, унăн çĕнĕ литературипе искусстви еплерех çунат хушать, кая юлмастпăр-и эпир ытти тăванла халăхсенчен,— çакă вăл унашкал çынсене нимĕн чухлĕ те интереслентермест, нимĕн чухлĕ те шухăша ямасть. Вĕсемшĕн пулсан, хуть те пуçхĕрлĕ пултăр: «манăн ĕç çук»!

Хăшпĕр учительсене илес-тĕк тата, инкеке, вĕсем тăван литературăран хăйсем писеççĕ çеç мар, вăл халăх хушшине ытларах сарăлтăр тесе пĕр чĕпкĕм те тăрăшмаççĕ çеç те мар,— хăйсен нигилистла шухăш-кăмăлне шкул ачисен ăсне-тăнне кĕртессишĕн те хĕрсех тапаçланаççĕ:

— Вырăсла çеç вулăр эсир кĕнеке тавраш, чăвашла мар! — «ăс параççĕ» вĕсем пĕрре те именмесĕр.

Сăмах та çук: вырăсла та нумай-нумай вуламалла пирĕн. Сăмах та çук: вилĕмсĕр Ильичăмăр калаçнă-çырнă вырăс чĕлхине (хамăршăн иккĕмĕш тăван чĕлхе пек пулса тăнă чĕлхене!) май килнĕ таран лайăхрах вĕренмелле пирĕн. Унтан та ытларах, нимĕç е француз, китай е акăлчан чĕлхисемпе усă курма хăнăхни те пархатарлăх çеç пулнă пулĕччĕ... Анчах та çакă вăл тăван чĕлхепе тăван культура çине темĕнле улпутла йĕрĕнчĕклĕн алă сулмалла иккенне пĕлтерет-и вара, кăшт та пулин пĕлтерет-и вара? Паллах, пĕлтермест, пĕлтерме те пултараймасть! Пачах та урăхла: чăваш чăвашлах калаçнă чухне пысăка вĕреннĕ çынсем тăван чĕлхепе тăван культурăна хисеплеме пăрахни — çуратса ӳстернĕ халăха (миллионлă халăха!) хисеплеме пăрахнипе пĕрех вăл.

Чăн-чăн интернационализм — этем хăйĕн тăван халăхне юратнине пĕрре те хирĕçлемест, хирĕçлемест çеç те мар, вăл çав юратăва тата ытларах вăйлатать. Тăван халăха ывăлла юратупа юратни вара этеме ытти халăхсене те хисеплес-юратас туйăм патне, халăхсен тăванлăхĕн идейи патне илсе çитерет. Тăван амăшне хисепле-

мен-юратман этем тек никам амăшне те хисплеме-юратма пултарайман евĕрех, тăван халăхне хисплемен-юратман этем те урăх нихăш халăха та хисплеме-юратма пултараймĕ («юрататăп!» тесе çухăрашма кăна пĕлĕ), унăн чунĕпе ăс-хакăлĕнче интернационализм туйăмĕ амаланса вăй-хăват илеймĕ!

Аслăран та аслă çулпуçăмăр, мĕнпур пысăк тата пĕчĕк халăхсен аслăран та аслă тусĕ В. И. Ленин çитĕнтернĕ Коммунистсен партийĕ буржуалла национализма та, нацилле нигилизма та татăклăнах сивлерĕ. КПССăн XX съезчĕ социализм нацилле расналăхсемпе уйрăмлăхсене пĕтермест кăна мар, пачах урăхла, мĕнпур нацисемпе халăхсен экономикипе культурине пур енчен те аталантарса чечеклентерме майсем туса парать, текен положение татах тепĕр хут çирĕплетсе хăварчĕ... Вăл е ку уйрăм халăхăн çĕкленсе чечекленнĕ культури — пĕртен-пĕр çав халăхăн ырлăхĕ кăна пулмасть, вăл (хăйĕн чи аван пиçсе çитнĕ «çимĕçĕсене» пула) пĕтĕм совет халăхĕн, пĕтĕм прогрессивла этемлĕхĕн ырлăхĕ те пулать, вăл пĕтĕм тĕнче культурин аслă океанĕпе пĕрлешет.

Эпир хамăрăн мĕнпур ӳсĕмсемпе çитĕнӳсене мухтавлă аслă партимĕр хавхалантарса пынипе, вăл çул кăтартса пынипе турăмăр, тăватпăр та. Литературăпа искусство аталанăвĕн ăнăçлăхĕпе хăвăртлăхĕ те — çавăнтах, парти ертсе пынинчех. Анчах та çавăн пек ертсе пыру, хăшпĕр юлташсем шутлани евĕр,— центрти тата облаçри руководительсем вăхăтран вăхăта паракан кăтартусем урлă çеç пулса пымасть. Вăл, çавăнпа пĕрлех, яланах ĕçлĕ халăх хушшинчи йышлă-йышлă активăн куллен те конкретлăн илтĕнсе тăракан сасси урлă та пулса пырать. Партилле-обществăлла ĕçре пуян опыт пухнă юлташсем тăван литературăпа, тăван искусствăпа мĕн чухлĕ ытларах интересленĕç, творчествăлла организацисемпе уйрăм деятельсен ĕçне-хĕлне мĕн чухлĕ ытларах пыра-пыра «сĕкĕнĕç», мĕн чухлĕ ытларах сӳтесӳте явĕç, канаш парĕç,— литературăмăрпа искусствăмăр та çавăн чухлĕ хăвăртрах, çавăн чухлĕ кĕрнеклĕрех чечекленсе пырĕччĕç!

Акă мĕскершĕн эпĕ Çĕмĕрле районĕнчи Хутарти вăтам шкул директорĕ Толстов-Атнарский юлташпа КПСС Тăвай райкомĕн секретарĕ Иванов юлташ ку енĕпе активлă пулнишĕн, чăваш журналĕсемпе уйрăм произведенисем пирки хăйсен шухăш-кăмăлне пичет

урлă хыпарласах тăнишĕн чунтан хӗпĕртетĕп. Ан тив, хăшпĕр чух вĕсем тивĕçлинчен те ытларах хурлаççĕ пуль (сăмахран, Иванов юлташ Ст. Шавлин «Шав маналла, шав тăвалла» очеркне хурланă пек); ан тив, хăшпĕр чух вĕсем тивĕçлинчен те ытларах мухтаççĕ пуль (сăмахран, çав юлташах мана мухтанă пек),— ĕç унта мар. Ĕç интерес пурринче, сӳтсе явма кăмăл туртнинче, литературăмăр пуласлăхĕ пирки шухăша кайнинче. Ытларахчĕ пире çавăн пек педагогсем, çавăн пек партработниксем!

Шеллĕхе, пĕрре те нумай мар-ха çав. Пичетре-и, тĕрлĕрен конференцисемпе канашлусенче-и,— литератор е композитор мар, анчах та партилле-общеcтвăлла ĕçре пуян опыт илнĕ юлташсем хамăр халăхăн литературипе искусстви пирки сăмах хускатнине, тарăхнине е савăннине, пĕр-пĕр сĕнӳ кăларса лартнине — ытла сайра куратпăр çав. Районсенчи юлташсем çинчен каламăпăр та ĕнтĕ, Шупашкарти тĕрлĕрен пысăк вырăнта ĕçлекенсем те, ытларахăшĕ çăвара шыв сыпма юратаççĕ... Ара, журналсенчен писсе пурăннă чух, вĕсенче пичетленнĕ произведенисем çинчен хаçатри статьясем урлă çеç пĕлкелесе пурăннă чух — ăçтан-халĕ сӳтсе явма, тиркеме е ырлама, канаш пама пултарайăн!

Çапла, хисеплĕ вулаканăм! Тăван литературăна массăсем патне çитерес ĕçри пăшăрхантаракан тĕслĕхсем хамăр районта çеç пулнă пулсан, кун чухлĕ çырса каясси кирлех те марччĕ пуль. Анчах та, шеллĕхе, тĕрлĕ районсенчи çамрăксем хам пата яракан çырусене вулатăп-вулатăп та, хаçатсене тишкеретĕп-тишкеретĕп те... пирĕн патăрти пек «модăсем» ытти çĕрте те сахал мар тĕл пулаççĕ-ха, тĕлĕнтереççĕ-ха.

Республикăри «Союзпичет» уйрăмĕн ĕçне çирĕпреххĕн хак памашкăн та вăхăт мар-ши? Тӳрех каламалла: пур чунтан çунса мар, çын ыйтăвĕ çине темĕнле канăçлăн пăхса, «ытлашши» ĕç пуласран шикленнĕ пек ĕçлеççĕ кунти юлташсем. Ку журналсем республика тулашне йывăррăн тухнинчен те аванах курăнать. Илер, акă, икĕ тĕслĕх:

— «Ялав» тата «Ялав» библиотеки» çур çулшăн çырăнсаттăм та, журнална пĕр номер те ярса памарĕç,— пăшăрханать Звенигово поселокĕнче[1] пурăнакан М. Соловьева пенсионер-учительница.

---

[1] Мари АССРне кĕрет. Чăвашсем ăна Шаланкăш тенĕ. Халĕ вăл хула. (Пухса хатĕрлекен асăрхаттарни.)

— Чăваш журналĕсене тăваттăшне те сакăр уйăхлăха çырăннăччĕ, анчах «Ялавпа» «Тăван Атăл» пĕр номер те килсе курăнмарĕ, «Капкăн» темиçе номер çеç килчĕ,— çырать Ярославль облаçĕнчи çар чаçĕнчен В. Кожанов капитан.

Мĕн çитмест-ха, мĕн чăрмантарать? Хам эпĕ Хусанти «Хĕрлĕ Ялавпа» «Чаяна» питĕ аван илсе тăратăп-çке!

Книготорг ĕçĕ тивĕçлĕ шайра тăманни çинчен республикăри пичет пĕрре кăна çырман ĕнтĕ, анчах унăн работникĕсем общественность сассине хăлхана та чикесшĕн мар курăнать. Уйрăмах «Книга — почтой» кÿрентерет, ĕççыннисем ыйтнине япăх тивĕçтерет, оперативлă та вăр-вар ĕçлемест. Кăна эпĕ хам та тÿссе курнă, Печора чукун çулне хывма кайнă тус-юлташăмсем те чунтанах пăшăрханса çыраççĕ... Çав вăхăтрах хăйсен, Книготорг руководителĕсен: «Эпир айăплă мар, кайместь чăвашла литература»,— тесе ларма хăю çитет!

Писательсен Союзĕпе унăн çумĕнчи парторганизаци те хăйсен пичет органĕсем халăхра епле сарăлнипе сахал интересленеççĕ, ку ĕçе хăйсем хутшăннипе вăйлатма тăрăшсах каймаççĕ. Мĕншĕн-ха, сăмахран, хаçат-журнал çырăнмалли тапхăрта писательсене уйрăм районсем çирĕплетсе парас мар? Каяс та пурăнас писателĕн «хăй» районĕнче пĕрер пилĕк кун: колхозсен экономикăлла-культурăлла пурнăçне тишкерес, литература каçĕсем ирттерес, журналсене çырăнтарас ĕçе активлатас!.. Анчах писательсем хушшинче çакăн пек шухăшлакансем те çук мар-ха: «Пирĕн ĕç — çырасси, çырнине сарасси вăл — ыттисен ĕçĕ!» Ай-ши, апла-ши, пĕр çырассишĕн кăна çыратпăр-ши?..

...Тăван литературăна халăх хушшине сарас ĕç — пысăкран та пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç. Вăл вулакансен анлă массине этем ырлăхĕшĕн, коммунизмшăн кĕрешес кăмăл-туйăм явăçтармашкăн та кирлĕ (В. И. Ленинах асăрхаттарманччĕ-и ара пире тăван сăмахăн вăйĕ пирки!), вăл тăван литературăна хăйне — пĕтĕм тăван культурăна хăйне — тата хăватлăнрах аталантармашкăн та кирлĕ. Мĕншĕн тесен литературăна ăна, культурăна ăна (сарлаканраххăн илсе калаçас-тăк) уйрăм писательсемпе уйрăм деятельсем мар, халăх тăвать, унăн иксĕлми хавалĕ тăвать, вăлах уйрăм писательсемпе деятельсен ĕçне ала витĕр кăлара-кăлара тасатать — ыррине, пахине йышăнать, çÿп-çапа шăлса ывăтать; вăлах пуласлăхри ÿсĕмсем валли çĕнĕ кадрсем çитĕнтере-

çитĕнтере парать. Вулакансем, тишкере-тишкере сӳтсе явакансем мĕн чухлĕ ытларах пулĕç — çыракансен ĕçĕ-хĕлĕ те çавăн чухлĕ тухăçлăрах, ăнăçлăрах пулса пырĕ...

Апла-тăк, юлташсем (чăваш сăмахĕ хăйĕн воспитанилле-организацилле таса тивĕçне сулмаклăрах тутăрччĕ текен юлташсем! Формипе нацилле, ăшчикĕпе социализмла культурăмăр чечекленсех пытăрччĕ текен юлташсем!), тăван чĕлхепе тухса тăракан хаçат-журнала, литературăна массăсем хушшине анлăрах та тарăнрах сарассишĕн чун-чĕремĕрсенчи мĕнпур тимлĕхе хурар!

Ши! кайтăр та пи! кайтăр тăван литературăмăр, тăван культурăмăр,— хамăрăн ĕçчен халăха пĕтĕм прогрессивла тĕнче ăшшăн-ăшшăн тав тумалăх шая çĕклентĕр!

1957

# *Аякри çурçĕрте...*

Ман аллăмра — журнал... Вăл типографинче пичетленнĕ япала мар иккенни, алçыруллă журнал иккенни тӳрех курăнать: ăна йăлтах сăрлă кăранташпа эрешленĕ. Журналăн хуплашки урлă, горизонталь майлăн, çӳлтен пуçласа аял хĕрри таранах, вĕттĕн-вĕттĕн хумханакан хĕрлĕ йĕрсем каçаççĕ. Çав фон çинче вара варринче — пысăк параллелограмм-ӳкерчĕк: ем-ешĕл хыр вăрманĕ витĕр чукун çул тăсăлса выртать, рельссем çийĕн — сывлăшра — йăлтăркка хĕрлĕ тĕспе «ÇУЛ» тесе çырса хунă. Аялти сылтăм кĕтесре — пĕчĕкçеççĕ шурă тӳркĕтеслĕх, унта: «1-мĕш №, ноябрь, 1956 ç.» — тенĕ. Çӳлти сылтăм кĕтесре — аялтинчен пăртак пысăкрах тепĕр тӳркĕтеслĕх; куçа ун çинелле куçаратăн та — тӳрех Çеçпĕл Мишшин чĕренех кĕрсе вырнаçнă йыхравлă сăмахĕсем курăнса каяççĕ:

Вут кайăклăн вĕçĕр, ан юлăр,
Ан юлăр кунçул уттинчен!..

Ку вăл — Архангельск облаçне Печора чукун çулĕ хывма кайнă чăваш ачисем хушшинче чăмăртаннă лит-

кружокăн журналĕ, тундрăпа кӳршĕллĕ вырăнти чăваш литкружокĕн журналĕ!..

Паттăр пурăнаççĕ Çурçĕре ăсаннă чăваш çамрăкĕсем — тăван партийĕмĕр йыхравне чуна илсе коммунизм стройкине çул тытнă çамрăксем. Паттăр пурăнаççĕ, хăйсен аллине комсомол путевки шанса панă Чăваш комсомолĕн ятне çӳлте тытаççĕ, çуратса ӳстернĕ халăхăмăр ятне чыслăн упраççĕ (халăх чĕлхипе каласан, чăваш ятне çĕртмеççĕ): кулленхи ĕç нормине 120—140 процент таран пурнăçласа пыраççĕ!

Ҫунпа пĕрлех стройкăри яш-кĕрĕм хамăр республика пурнăçĕнчен те татăлмасть, унăн экономикипе культури епле аталанса пынине сăнасах тăрать. Кирзаводри 60 чăваш çамрăкĕнчен 23 «Коммунизм ялавĕпе» «Çамрăк коммунист» тата «Ялавпа» «Тăван Атăл» çырăнса илни — хăех ĕнтĕ питĕ нумая пĕлтерет: чăн-чăнах вĕри чун-чĕреллĕ çамрăк этем хăй тăван халăхĕн пархатарлă ӳсĕмĕ çине хĕпĕртӳллĕн пăхмасăр тăма пултараймĕ!

Ҫунсăр пуçне, стройкăри каччăсемпе хĕрсен хăйсен калавçисемпе сăвăçисем те шăта-шăта тухаççĕ: пĕтĕм халăх ырлăхĕшĕн пыракан ĕç шавĕнче шăранса хĕмленекен хастарлăх хăех хут çине тухассишĕн кăпăкланса ăнтăлать, тăван чĕлхен илемĕпе хăвачĕшĕн вăй хурас туртăнупа пĕрлешĕнсе каять те çиçĕм çиçтерсе аслати аваттарма тытăнать!.. Шăпах та çав никĕс çинче ĕнтĕ, халиччен пирĕн «Хĕрлĕ Октябрь» хаçат çумĕнчи литпĕрлешӳ членĕсем пулнă П. Вашаватпа С. Михайлов тата Ҫуславккаран кайнă М. Лесновпа Г. Сергеев пуçарнипе, кунта (шурă-шурă Шупашкартан пиншер çухрăмри Архангельск таврашĕнче!) тин çеç çырма тытăннă чăваш литераторĕсен кружокĕ тапса-шăтса тухнă, тулли вăйхалпа хунав ярса çеçкеленме тапратнă!

Кружока малтанлăха 6 çамрăк çырăннă (П. Вашават, Г. С. Сергеев, М. Леснов, С. Михайлов, В. Любимов, Г. М. Сергеев), халĕ вĕсем — вунпĕрĕн. Ҫунсăр пуçне, кружокпа тачă çыхăну тытакансем Печора магистралĕн ытти участокĕсенче те йышлă: Можута станцийĕ еннелле нумай-нумай сăвă-калавлă çырусем васкаççĕ. Кружокăн яланхи членĕсен, «активисчĕсен», кашни эрнерех пĕрер хут заняти пулать: чăвашла та, вырăсла та тĕрĕс çырма хăнăхтаракан çыру ĕçĕсем ирттереççĕ, пĕр-пĕр паллă писателĕн произведенине е хăйсем çырнă сăвă-калава сӳте-сӳте яваççĕ, творчествăлла дис-

путсем пуçараççĕ. Çамрăк авторсен мĕнпур ĕçĕн тĕкĕрĕ — уйăхра пĕрре тухса тăракан «Çул» (редакторĕ П. Вашават).

Журналăн малтанхи виçĕ номерне (ноябрьшĕн, декабрьшĕн, январьшĕн) тишкерсе пăхса тухатăн та çак коллективăн ĕçлес кăмăл-туртăмĕ чăнахах та çирĕп иккенне, унăн пултаруллăхĕн хавалĕ пысăк иккенне куратăн, хăв та чунтанах савăнса-хавхаланса каятăн, мĕншĕн тесен çак пиншер çухрăмри коллектив та хамăр юратса-савса тăвакан ĕçех тăвать, ăна çĕнĕ çунат хушать!

...Журналсене каллех пĕрин хыççăн тепĕрне уçсахупма тапрататăн, каллех хуплашкисем çине тинкерме тытăнатăн — халăхра вĕресе тăракан пултаруллăхăн иксĕлми вăй-хăвачĕ çинчен шухăшлама пуçлатăн... Ахальтен мар ачасем хăйсен журналне «Çул» тесе ят панă: ку вăл — коммунизма çывхартакан Печора чукун çулĕ те, тăван чăваш литературин сарлака та чечеклĕ çулĕ те! Ахальтен мар ачасем хăйсен кружокне (февральте пулса иртнĕ пĕр ларура) «Çеçпĕл Мишши ячĕпе тăракан литкружок» теме йышăннă: вĕри чунлă çамрăксем Çеçпĕл пиччемĕр йыхравне манăçа хăварас çук, кунçулăн сулмаклă уттинчен татăлса юлас çук!

1957

# *«Мускав çулĕ»*

Пирĕн умра хытă хуплашкаллă, чылаях хулăн кĕнеке. Шурă тĕслĕ питĕнче — ĕлĕкхи чăвашсен тумне тумланнă юланутçăсем. Пилĕкĕсенчен хăйсем ухă-çĕмрен те хĕç çака-çака янă, аллисене вăрăм сăнăсем тытнă: халь тесен халь тăшман çинелле тапса сиктерме хатĕр! Ӳкерчĕкрен аяларах «Мускав çулĕ» тесе çырни пур,— çавăн пек ку кĕнекен ячĕ. Халĕ çеç вуласа тухрăмăр эпир ăна, хуплашкине кăмăллăн сăтăркала-сăтăркала, шухăша кайрăмăр.

«Мускав çулĕ...»

Йывăр, пит йывăр вăхăт пулнă Раççей патшалăхĕн-

чи тĕрлĕ халăхсемшĕн XVII-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕ. Крепостла хресченсемпе чухăн аластисем помещиксемпе боярсене хирĕç уйрăмах вирлĕн кĕрешме тытăннă май (çĕршывра вăл тапхăрта талккишпе пекех пăлхав хыççăн пăлхав кĕрленĕ), патшалăх влаçĕ хавшаса çитнĕ. Улпутсем хăйсем те пĕр-пĕринпе тулашнă, çарта та çирĕп йĕрке пулман. Çакăнпа Раççейри пуян çĕрсене хапсăнакан Польша помещикĕсем усă курма тĕллев тытнă: 1604 çулта вăрçă пуçарнă та, Суя Мĕтри пулăшнипе, Мускава ярса илнĕ. Анчах Раççейри халăхсем çакăнпа килĕшсе ларма шутламан. Вĕсем поляк шляхтичĕсемпе вĕсене сутăннă вырăс боярĕсене хирĕç хаяр кĕрешĕве çĕкленнĕ: пăлхавсем тунă, партизанла отрядсем йĕркеленĕ, халăх çарĕсем — ополченисем — пухнă. Çавăн пек ополченисенчен чи йышли, чи хăватли Чулхулара (хальхи Горький хулинче) Кузьма Минин пуçарнипе чăмăртанса йĕркеленнĕ ополчени пулнă. Тăван çĕршыва савакан сынсем халăх çарне пинĕ-пинĕпе пырса çырăннă, çар валли хĕçпăшалпа апат-çимĕç туянма укçа-тенкĕ пуçтарнă. Пайтахăшĕ хăйĕн юлашки пусне те хĕрхенсе тăман:

— Çичĕ ютран килсе тухнă тăшман кăна тĕп пултăрччĕ! — тенĕ.

Халăх çарне Чулхула çыннисем кăна мар, Атăл тăрăхĕнчи хуласемпе ялсенче пурăнакансем те йышлăн хутшăннă, çав шутра чăвашсемпе тутарсем те, марисемпе мордвасем те пайтах пулнă. Ополчение ертсе пыма, Минин сĕннипе, Тăван çĕршыва чунтан савакан пултаруллă та харсăр çарпуçне — Пожарский княçа уйăрса лартнă.

Ополчение хутшăннă чăвашсен хăйсен уйрăм çар пулнă, ăна Мининăн çывăх юлташĕ, тахçанах походсенче пĕрле çÿренĕ чăваш турханĕ — паттăр Пăрттас — ертсе пынă. Пăрттас пултарулăхне хисепленĕ марисем те, уйрăм отряда чăмăртанса, чăвашсен çарнех кĕме кăмăл тунă.

— Пире вырăс патши те телей парас çук та, çĕршывра йĕрке пулас-тăк, çапах ку таранах асапланмăттăмăр. Мускава çичĕ ютран тасатни — тăван Чăваш çĕрне çăлниех, тăван Мари çĕрне çăлниех! — тенĕ чăвашсемпе марисем, темиçе тĕрлĕ влаçа пăхăнса, вăрă-хурахран хур курса тертлене-тертлене пĕтнĕскерсем. Ытти вак халăхсен чухăнĕсем те çав шухăш-кăмăлпах хавхаланнă. Алла сăнă е хĕç, ухă та çĕмрен ярса тытнă, тă-

ван килйышĕпе, ялйышĕпе сывпуллашса, похода тухнă.

Мининпа Пожарский пухса çапăçăва хатĕрленĕ ополчени отрячĕсем (хуларан хулана, ялтан яла куçса пырса) 1612 çулхи çулла Мускав çывăхне пырса çитнĕ, хаяр çапăçура поляк шляхтичĕсен Ходкевич çарпуçĕ ертсе пыракан йышлă та мухтавлă çарне аркатса тăкнă. Тепрер икĕ уйăхран вара Мускава хăйне те пĕтĕмпех тăшманран тасатнă...

Çĕршыв историйĕн шăпах çав тапхăрĕ çинчен, уйрăмах çав тапхăрта чăвашсем мĕнле асапланса пурăнни çинчен, вĕсем Мининпа Пожарский çарĕнче мĕн пек паттăррăн çапăçни çинчен каласа парать те ĕнтĕ «Мускав çулĕ» кĕнеке.

Кĕнекене çыракан Юхма Мишши, Патăръел тăрăхĕнчи Чăваш Сăкăтĕнче çуралса ӳснĕскер,— çамрăкха, вăтăрта кăна вăл. Апла пулин те, «Мускав çулĕ» роман — писатель пичетлесе кăларнă çиччĕмĕш кĕнеке ĕнтĕ. Ытларах прозăпа, вăхăт-вăхăт сăвăпа та çыракан юлташăмăр çавăн пек иксĕле пĕлми хастарлăх кăтартса ĕçлени пире, тăван литература ӳсĕмĕшĕн çунакан çынсене, чăннипех савăнтарать. «Халех классиксем пек чаплă çырать»,— тесе каламастăп эп. Çитменлĕхсем-кăлтăксем унăн ĕçĕнче пурах-ха, «Мускав çулĕнче» те, пирĕн шутпа, çук мар пек вĕсем. Вăл е ку сăнар епле пулса тухни пирки те, чĕлхепе стиль пирки те, хăшпĕр ĕçсене мĕнле çутатса кăтартни пирки те тĕллĕн-тĕллĕн автора самаях хирĕçлеме пулать, темелле. Анчах чи пахи — писателĕн çырас ăсталăхĕ кĕнекерен кĕнекене ӳссе пыни — унăн çак романĕнчен те яр-уççăнах курăнать.

«Мускав çулне» эпĕ, пĕтĕмĕшпе илсен, чунтанах кăсăкланса вуласа тухрăм. Кĕнекери ĕçсене писатель çав тери хивре аталантарса пыма пултарать («динамика вăйлă!» теççĕ кун пек чух критиксем). «Мĕн пулĕ-ши малалла? Пăрттаспа Тайман, Тĕвенеш, Исамбай тата ытти геройсем мĕнле-мĕнле паттăрлăх кăтартĕç-ши, ополчение хутшăннă чăваш çарĕ мĕнлерех çапăçĕ-ши?» — çакăн пек шухăш чĕрене çатăрласа тытать те кĕнекен юлашки страницине хупиччен те пăлхантарма пăрахмасть. Уйрăмах мана кĕнекен иккĕмĕш пайĕ («Чăваш юнĕ» ятлăскер) хытă килĕшрĕ. Тӳрех каламалла: автор ăна чăн-чăн художник аллипе çырнă. Виçĕ ĕмĕр çурă ĕлĕкрех пурăннă чăваш халăхĕн тамăкри пек пурнăçĕ, унăн кулленхи ĕçĕ-хĕлĕпе йăли-йĕрки — çав пайра куç

умне ӳкерчӗк ҫинчи пек яр-уҫҫӑн та чӗп-чӗррӗн тухса тӑраҫҫӗ!

1957

# «Тӑван Атӑл» альманахӑн ҫӗнӗ номерӗ

Ҫак кунсенче Шупашкарта чӑваш совет писателӗсен Союзӗ икӗ уйӑхра пӗрре кӑларса тӑракан «Тӑван Атӑл» альманахӑн ҫӗнӗ, 4-мӗш кӗнеки, пичетленсе тухрӗ...[1]

Альманахра чи пысӑк вырӑн йышӑнакан произведени вӑл — Степан Лашманӑн «Ылттӑн хӗҫ» ятлӑ драми. С. Лашман ҫулӗпе те ҫамрӑк ҫын мар ӗнтӗ, литература ӗҫне те тин кӑна пуҫӑнмасть. Аллине вӑл ҫамрӑклах перо тытнӑ, унӑн хӑвачӗпе Октябрьти Аслӑ революци ҫӗнтерӗвӗшӗн кӗрешнӗ, чӑваш совет литературипе Чӑвашрадио ӗҫне пуҫарса яракансенчен пӗри пулнӑ. Анчах та эпир, ҫамрӑкрах вулакансем, С. Лашман ҫинчен ку таранччен нимӗнех те пӗлменччӗ-ха, мӗншӗн тесен ҫак иртнӗ 20 ҫулталӑк хушшинче вӑл, ватӑ та хисеплӗ писателӗмӗр, литература ӗҫне хутшӑнма пултараймарӗ. Халӗ акӑ унӑн сасси ҫӗнӗрен янӑрама тытӑнчӗ — сулмаклӑ сасӑ, хӑватлӑ сасӑ!

«Ылттӑн хӗҫ» драмӑри ӗҫсем граждан вӑрҫи кунӗсенче чӑвашсем хушшинче пулса иртеҫҫӗ. Классем хушшинчи хаяр кӗрешӳ. Мӗнпур ҫӗршыв, мӗнпур халӑх (ҫав шутрах чӑваш халӑхӗ те) икке пайланса кайнӑ, икӗ вӑй пӗр-пӗрипе тытӑҫса ӳкнӗ: хӑшӗ — хӑшне?! Е вилӗм, е пурӑнӑҫ!.. Ҫӗршыв кӑна мар, ялсем кӑна та мар, пӗр килти ҫынсем те икке пайланаҫҫӗ: пӗрисем кивве хӳтӗлеҫҫӗ, теприсем ҫӗннишӗн ҫапӑҫава тухаҫҫӗ,— хӑшӗ — хӑшне? Пьесӑри Туктаровсем те, Петӗрпе Микулай, ҫавӑн пекех. Петӗрӗ, чухӑн килйышӗнчен пӗр шит те уйрӑлмансҫер, хӑйӗн кунҫулне ӗҫхалӑх кунҫулӗпе ҫыхӑнтарнӑскер, унччен революци ӗҫӗнче шӑранса ҫулӑм-

---

[1] Халӗ «Тӑван Атӑл» — альманах мар, журнал; вӑл кашни уйӑхра пӗрре тухса тӑрать. (Пухса хатӗрлекен асӑрхаттарни.)

ланнăскер,— хĕрлĕ комиссар, чухăнсен паттăр организаторĕ. Микулайĕ вара, пиччĕшĕ, фронтри хастарлăхне пула чăваш пуçпах офицера тухса кайнăскер, йăнăш çул çине тăрать, шăллĕне хирĕç, халăх влаçне хирĕç çапăçăва тухать. Анчах та чухăн çемьере ӳссе çитĕннĕ çамрăкăн хăйпе халăх хушшинчи çыхăну тĕппипех татăлман-ха. Вăрçăллă лару-тăру аталанса пынăçемĕн, Микулай хăй тĕрĕс мар çул çине тăнине уççăнрах та уççăнрах ăнланса пырать, пĕтĕм чун-чĕринчен асапланма тытăнать, юлашкинчен халăх енне куçать... Драма Петĕр Туктаровăн паттăрла вилĕмĕпе вĕçленет, чун тăвăнса килет, куçа ирĕксĕрех куççулĕ тĕтрелетме пуçăнать. Анчах та çакă вăл — нишлĕлĕх куççулĕ мар, вăл — тарăху куççулĕ, тавăру куççулĕ! Хăй ĕçĕн, большевиксен ĕçĕн, тĕрĕслĕхне хăйĕн вилĕмĕпе çирĕплетсе хăварать, çав ĕçшĕн ыттисене те юна хĕрхенмесĕр çапăçма йыхăрать.

— Асту, Микулай, шăллу ятне ан çĕрт...— çапла калать ывăлне Маюк аппа, ăна хĕрлисен çарне ăсатнăçемĕн.

Драмăра уйрăм кăлтăксем тĕл пулаççĕ пулин те, тӳрех каламалла: «Ылттăн хĕç» çывхарса килекен Аслă Октябрь уявĕ ятне тивĕçлĕ пысăк парне!

Прозăлла произведенисенчен альманахăн ку номерĕнче В. Краснов-Аслин «Вутра» романăн иккĕмĕш кĕнекинчен илнĕ сыпăксем тата Василий Алентейĕн «Сăмах тупаймарĕç» ятлă пысăк мар калавĕ пичетленнĕ. В. Краснов-Аслин романĕн иккĕмĕш кĕнеки пирки сăмах калама иртерех-ха (ушкăнĕпех çапăнса пĕтессе кĕтĕпĕр), анчах та çак произведенин пĕрремĕш кĕнеки чăннипех те вăйлă, чăннипех те çулăмлă! Хам эпĕ ăна кaçăхса кайса вуласа тухнăччĕ, пĕрре тытсан алăран ярайманччĕ,— нумай пуянлатрĕ вăл пирĕн çамрăк литературăмăра!

В. Алентей — туллин те сарлакан ӳссе пыракан писатель. Юлашки тапхăрта вулакансене чăнласах илĕртекен сахал мар калав пичетле-пичетле кăларчĕ вăл. «Сăмах тупаймарĕç» калавне те автор самаях аван çырнă.

Украинăпа чăваш литературисем хушшинчи туслăх — çирĕп традицилле туслăх, Çеçпĕл Мишшинченех пуçланса кайнă туслăх. Вăл çултан-çул вăйлансах пырать, çунатне хăватлăнрах сарать. Чăваш писателĕсен нумай-нумай произведенийĕсене украинла пичетлесе кăларнă (К. Ивановпа Çеçпĕл кĕнекисем Канадăри украи-

нецсем патне çитрĕç), Украина писателĕсен произведенийĕсене те пайтахăшне эпир хамăр тăван чĕлхепе вулатпăр. Кăçалхи илемлĕ çу кунĕсенче Шупашкарта тата хăшпĕр колхозсемпе заводсенче пĕтĕм чăваш халăхĕ юратса кĕтсе илнĕ хаклă хăнасем пулчĕç: Украинăри писательсен Союзĕн партком секретарĕ Юрий Збанацкий прозаик тата Иван Нехода, Василь Швец, Юрий Герасименко, Анатолий Косматенко поэтсем пирĕн патăрта эрне хушши пурăнчĕç, Украина литературин касĕсем ирттерчĕç. Çав каçсем чăн-чăнах та икĕ халăх хушшинчи туслăхăн каçĕсем пулса тăчĕç!

Альманах çавна май Г. Краснов-Кĕçĕнни çырнă «Ĕмĕр пĕрле» ятлă статьяна тата И. Нехода, В. Швец, Ю. Герасименко, А. Косматенко поэтсен чăвашла куçарнă сăввисене пичетленĕ. Ырă, пархатарлă ĕç!

Альманахăн иртнĕ номерĕнче пĕр харăсах икĕ поэма пичетленнĕччĕ — С. Шавлин, А. Алкан. Ку номерте эпир поэма курмастпăр, анчах та поэзишĕн çителĕксĕр вырăн уйăрнă... Украина поэчĕсемсĕр пуçне, номерте В. Давыдовăн «Октябрь», И. Малкайăн «Кукуруза акрăмăр», «Эх аван...» сăввисем пур, «Çамрăк хунав» ярăмра Ю. Петров, А. Васильев, М. Волкова сăввисем пичетленнĕ...

Çамрăксен пултаруллăхĕ çинчен калана чухне çакна та палăртса хăварас килет: темшĕн юлашки тапхăрта пирĕн поэзире йыхăравлă лирика сасси сайра илтĕнме пуçларĕ, темĕнле канăçлă-лăпкă лирика пуç пулма тапратрĕ. Революцилле пафос, çĕннишĕн çунатланса чĕнни, кивве асăрхаса пĕтĕм чун хавалĕпе тарăхни, ăна поэзи вут-çулăмĕпе тĕп тăваслах çунтара-çунтара илни çитмест пире! Шăл хушшинче ларса тулас таранах йĕтетсе-тарăхтарса çитернĕ типĕ риторикăлла «лирика» мар, чуна çатăрласа тытакан гражданла лирика çитмест пире! Маяковскипе Çеçпĕлрен сахалтарах вĕренместпĕр-ши, тантăшсем?

1957

# *Пурнăç хуçи—*
# *эпир хамăр*

(Майăн 24-мĕшĕнче Октябрьски вăтам шкулĕнчи 10 классенчи ачасен экзамен умĕнхи пухăвĕнче вулаттарнă сăмах)

Сывă-и, аван-и, яш каччăсем, хĕрсем, е Пушкин калашле — «çап-çамрăк, палламан ăру»?

Экзамен умĕнхи пухăва пуçтараннă ятпа, çавăн пекех тата вăтам шкулти вĕренĕвĕн юлашки урокăра ирттерсе янă ятпа та çурхи кун пек ăшă та пăлхануллă салампа саламлатăп сире, экзамен умĕнхи шикленӳсĕр çирĕп кăмăл сунатăп сире!

Вуннăмĕш класа эпĕ заочно кăна вĕренсе вĕçлерĕм, вĕренӳ вĕçлемĕ те манăн сирĕнни пек мар, урăхларах пулчĕ пуль. Çапах та сирĕншĕн, вăтам шкул пĕтерсе тухма хатĕрленекен ачасемшĕн, çакă май тата июнь уйăхĕсем мĕнешкел пăлханчăк та пысăка пĕлтерекен уйăхсем иккенне эпĕ те питĕ аван ăнланатăп... Тепĕр темиçе кунтан пуçланса каяс экзамен вăл, ун хыççăн аллăра илес «ӳсĕм аттестачĕ» вăл, пурнăçăн, тĕрĕсрех каласан, ĕçлĕ пурнăçăн сарлака çулĕ çине илсе тухакан руль евĕр япала: мĕн чухлĕ тасарах та «илемлĕрех» пулĕ аттестатăр — пурнăç çулĕпе утмашкăн та сире çавăн чухлĕ ансатрах пулĕ, халăхпа çĕршыва парнелекен ĕçĕр те çавăн чухлĕ тухăçлăрах пулĕ. Апла пулсан, çак кунсене чăннипех та чăтăмлăн, чăннипех те тимлĕхе пухса иртерсе яма вăй патăр сире, халăх каларăш! Вăй патăр, тусăмсем!

«Хăш çулпа утас, мĕнлерех ĕç суйласа илес?» — сирĕнтен хăшĕн пуçне кăна çавăрмасть-ши паян çакă шухăш...

Чăнах та, пур çав шухăшламалăх...

Анчах та кун пирки татăклă сĕнӳ пама никам та, никама та пултараяс çук пулĕ: пысăк ыйту. Чи малтанах, нимĕнтен те маларах, çынна акă мĕн кирлĕ: хăв çинчен мар, ытларах халăх çинчен шухăшлас пулать, «çакă çутă тĕнчере» этемшĕн ырă тăвас ĕмĕт-туртăмпа тĕмсĕлсе пурăнас пулать. Çакă чи кирли, юлташсем. Çакă пулчĕ-

тĕк этем чĕринче, вăл хăйне тивĕçлĕ çула хăех шыраса тупĕ, темле йывăр самант килсе тухсан та, çухалса каймĕ: Çеçпĕл йыхăрнă пек каласан — «кунçул уттинчен юлмĕ»! Колхозра ĕçлеме юлатăн-и (асăрхăр-ха эсир: еплерех юлса пырать пирĕн районăмăр, еплерех каялла сĕтĕрет вăл тăван республикăна!), стройкăсенче вăй хурăн-и, аслă шкул пĕтерсе практик-специалист е ăслăлăх сынни пулса тăрăн-и, тăван литературăпа искусствăна çĕнĕ шая хăпартассишĕн ĕçлеме пуçлăн-и (авă еплерех вăй кăтартрĕ пирĕн халăх Горькинчи конкурсра!) — кашниех ырă та пархатарлă, кашниех халăхшăн усăллă, çĕршывшăн усăллă, ĕçӳ çеç мĕнпур хастарлăхпа та вутçулăмпа пулса пытăр!

Анчах хăш çула суйласа илсен пысăкрах усă кӳме пултарăр эсир — кун пирки чылайăшĕ иккĕленетĕр вара. Çамрăк-ха, кун çинчен шухăшласах кайма ĕлкĕреймен-ха. Çитменне тата, вĕренĕвĕн тĕркешӳллĕ вăхăтĕнче ку ыйтăва хăвăн умма лартса тĕплĕн сӳтсе явма вăхăчĕ те çукрах темелле. Çавăнпа та хăш çула суйласа илесси пирки иккĕленекен юлташсен пурин те пĕрер çулталăклăх «ăстăна кантарас» пулать: колхозра, заводра е стройкăра рядовой пулса ĕçлес пулать, пурнăçа сăнас пулать. Кайран вара çул суйласа илме те йывăр мар пулĕ, йăнăш туса кансĕрлесси пулмĕ. Хăшĕсем çапла калаççĕ: «Пĕр çул хушшинче йăлтах манса пĕтетĕн унта — аслă шкула кĕме-и». Çук, юлташсем, чăнласах пысăк пĕлӳшĕн çунакан этем мĕн вĕреннине манса каймĕ, хăй тĕллĕн вула-вула çĕнетсех тăрĕ. Çавнашкал çĕнетсе тăма ӳркенет пулсан этем, аслă шкул енне туртăнма та кирлĕ мар ун, мĕншĕн тесен çавăн пек «наука çыннинчен» халăхшăн пархатар ан кĕт: ниме тăман хут çырса ларма çеç пултаруллăхĕ çитĕ!

Анчах кăçал никамăн та вĕренме кайма кирлĕ мар тени те тĕрĕсех мар пулĕ. Чи малтанах — ял халăхĕ вăл ачаранах ĕçре пиçĕхет, пурнăç тути-масине пĕлет. Тепĕр енчен, пĕр-пĕр конкретлă ĕçе пĕчĕкренех чун пек юратса ӳсекенсем те сахал мар пирĕн, çав ĕçсĕр унашкал ачасем пурăнма та пултараймаççĕ. Апла пулсан, çавăн пек ачасен çав юратнă ĕçе вĕрентекен института е университета, училищĕне е техникума кăçалах кайсан та çылăх пулас çук. Нимрен ытларах çакăнтан сыхланас пулать: юратман ĕçе вĕрентекен шкула кайса кĕме нихăçан та кирлĕ мар, питĕ ăнăçсăр япала вăл!

Хăшĕ-пĕри тата çапла та калама юратать: «Эпĕ аслă

шкула каймастăп, колхозра е заводра ĕçлĕп — мĕн тăвас-ха лайăх вĕренсе!» Çук, ачасем, ку çав тери пысăк йăнăш: лайăх вĕренни, пысăк пĕлӳпе пысăк культура кирек ăçта та, кирек хăçан та питĕ кирлĕ вăл. Ай курмасçĕ-и çавнашкал юлташсем: этем пуласлăхĕ — пысăк пĕлӳлĕх аллинче, культура аллинче!

Çавăнпа ĕнтĕ паянхи тĕп задачăна пурнăçлассишĕн — экзамена май килнĕ таран ăнăçлăрах тытса тухассишĕн — пĕтĕм тимлĕхе хурса тăрăшăр, татах калатăп: вăй патăр!

Хĕвел çине тинкерсе утăр, шăллăмсемпе йăмăкăмсем: пурнăçăн хуçи — эпир хамăр!

1957

# *Хурçă çунатлă пулăр*

(Март вĕçĕнче Хуракассинчи вăтам шкулти литкаçра вулаттарнă сăмах)

Хисеплĕ юлташăмсем, учительсемпе литкружок членĕсем, литература каçне пухăннă мĕнпур шкул ачисем.

Василий Волгинăн 20 çулне палăртас тата хăвăр литкружокăн пултарулăхĕпе паллаштарас тесе йĕркеленĕ çакă вечерта паян манăн та пулса курассăм килчĕ — пурсăра та тăванла ăшă салампа саламлас килчĕ... Ăнăçлă иртсе кайтăр сирĕн уявлă каçăр, çамрăк ăс-хакăлпа чун-чĕрере çĕнĕрен те çĕнĕ ĕмĕтсем çуратса хăвартăр!

Василий Волгин çут тĕнче курнăранпа 20 çул иртсе кайрĕ. 20 çул... Ытла та пĕчĕк вăхăт ку. Анчах та эпир паян пĕтĕм кăмăлтан сума суса асилекен поэт-комсомолец, Волгин, çавăн чухлĕ те пурăнса кураймарĕ: унăн кăвар пек хĕрӳллĕ те ирхи сывлăм пек таса чĕри — виçĕ çул каярахах тапма чарăнчĕ... Çапах та Василий Волгин

ҫинчен паянхи кун эпир хӗрхенсе-хурланса кӑна шухӑшламастпӑр, тӑван Чӑваш ҫӗрӗн кӑкри ҫинче ҫакӑн пек пултаруллӑ ача ҫуралса ӳссе сасӑ парса хӑварнишӗн савӑнатпӑр та, мӗншӗн тесен кӗске кӑна пурнӑҫӗ унӑн нимӗн йӗрри-паллисӗр ҫухалмарӗ: ҫанна таварсах ӗҫлеме ӗлкӗреймерӗ пулин те, чун-чӗрин хавалне халӑх хавалӗпе пӗрлештерме вӑй ҫитерчӗ-ҫитерчех, халӑх телейӗпе тӑван чӗлхемӗрӗн вӑй-хӑвачӗшӗн ҫунса тӑнӑ чӗри ырӑ хӗлхем акса хӑварма ӗлкӗрчӗ-ӗлкӗрчех!

Василий Волгин иксӗмӗр паллашнӑ кунсенче мӗнпурӗ те 16 ҫулта кӑначчӗ, анчах та манӑн чунӑма, манӑн чӗрем ӑҫталла тата мӗншӗн тӗмсӗлсе туртӑннине вӑл никамран та иртерех ӑнланса илчӗ, халӑх интересӗшӗн ҫунса тӑракан чӗрипе ӑнланса илчӗ. Вара эпир пӗрпӗрин аллине чӑмӑртарӑмӑр та тумхахлӑ йывӑр кӗрешӳллӗ ҫулпа юнашаррӑн та алла-аллӑн утма тупа турӑмӑр. Шел, кун пек утасси пирӗн ҫулталӑкран ытлах та тӑсӑлаймарӗ... Анчах та унӑн ялтӑравлӑ ҫутӑ сӑнарӗ манӑн ҫумӑмран нихӑҫан та хӑпмӗ, чун-чӗререн ӗмӗрне те тухмӗ. Ҫуратса ӳстернӗ халӑхӗн ырӑ кӑмӑлӗ те ӑна ӑшӑ-ӑшӑ ҫуркунне пулса ҫупӑрларӗ, малашне те ачашшӑн лӑпка-лӑпка, сума суса усрӗ: хӑйӗн ырлӑхӗпе чысӗшӗн таса кӑмӑлтан тӑрӑшса, ҫине тӑрса вӑй хунӑ ывӑлӗсемпе хӗрӗсене аннемӗр-ҫӗршыв ӗмӗрне те манмасть!..

Ҫамрӑк вӑйпа вӗресе тӑракан шӑллӑмсемпе йӑмӑксем!

Сирӗнтен эпӗ хӑшне-пӗрне ҫеҫ куҫа-куҫӑн пӗлетӗп, анчах паянхи шухӑшӑм ман сирӗн еннеллех туртӑнать, манӑн сире пурне те Волгин пек пулнине, чӑн-чӑн совет ачисем пулнине курассӑм килет. Кирек камшӑн та пӗрре ҫеҫ килекен пурнӑҫ вӑл этемлӗхшӗн усӑллӑ пултӑрччӗ, вӑл вак-тӗвек йӑпанӑврах тӗлсӗр-палсӑр сапаланса ан пӗттӗрччӗ. Кунҫула ытахаль ҫеҫ, харпӑр хӑй интересӗшӗн ҫеҫ пурӑнса ирттерни, тӗрӗссипе каласан, пурнӑҫ та мар вӑл. Пурнӑҫ тени тӗллевлӗ пултӑр, халӑхшӑн кайтӑр! Этемӗн чӑн-чӑн телейӗ — ҫавӑнта кӑна!..

Анчах халӑх ҫинчен шухӑшласах кайман ҫамрӑксем те, «ман мӗн ӗҫ!» теме юратакан ҫамрӑксем те, сахал мар-ха пирӗн — ҫакӑ вара чунтанах пӑшӑрхантарать: кӗрешӳрен пӑрӑнакан комсомолец — комсомолец-и вара вӑл, тусӑмсем?!

Теприсем тата хӑйсене хӑйсем темӗнле йӑхсӑр-хурӑнташсӑр ҫынсем пек тыткалама юратаҫҫӗ, кам ҫуратса ӳстернине те йӑпӑртах манса каяҫҫӗ, тӑван халӑх

умĕнчи ывăлла яваплăх асра та çук вĕсен: чăваш халăхĕн ырă ячĕ çĕкленет-и çĕршывра е çук-и, вĕсемшĕн пурпĕрех! Октябрь ирĕкĕпе ирĕкленнĕ халăхăмăр культурин ӳсĕмĕпе те интересленмеççĕ вĕсем... Анчах камран килĕ-ха вара халăхăмăр пуласлăхĕ — хамăртан, çамрăксенчен, килмесессĕн? Қам çĕклĕ вара çуратнă халăхăн ырă ятне пĕтĕм Совет çĕршывĕ, пĕтĕм тĕнче хисеп тумалăх хамăр çĕклемесессĕн?!

Пысăк литература та кирлĕ пире, оперăпа балет театрĕ[1] те тумалла пирĕн, чăваш кинокартинисене тепĕр хут кăларма тытăнасси те — пурнăçланма тивĕçлĕ тĕллевĕмĕр. Вăхăт çитĕ: чăваш литературипе искусстви паянхинчен темиçе хут вăйлăрах та хăватлăрах пулĕ, пĕтĕм çĕр чăмăрĕ тавра иксĕлми чечен музыка пек янăраса тăма тытăнĕ, мĕнпур ырă кăмăллă тĕнче: «Мĕскерле халăх ку, çав тери пĕчĕкскерех кунашкал пултаруллăх кăтартакан халăх?!» тесе тĕлĕнĕ, çавă вăхăт çитĕ! Анчах тăван культурăна çулсерен ытларах та ытларах чечеклентерсе пырас задача культура работникĕсен йышлăлансах пыракан отрячĕсĕр, тăван чĕлхепе тăван музыкăна ачаранах юратма вĕреннĕ кăвар чĕреллĕ çамрăксем хутшăнса пымасăр пурнăçа кĕреймĕ. Акă мĕскершĕн ĕнтĕ сирĕн шкулта литкружок чăмăртанни чунтанах савăнтарать. Паллах, литкружокра тăракансем пурте поэт е писатель пулса тăмĕç: хăшĕ колхозник е рабочи çулне суйлĕ, хăшĕ инженер е историк пулĕ, тата ыт. те. Анчах кирек хăш ĕçе суйласа илсен те, тăван чĕлхепе тăван литературăна лайăх пĕлни, вĕсем çинчен шухăшлани — яланах кирлĕ, мĕншĕн тесен тăван халăха юратасси — пур гражданинăн та пархатарлă тивĕçĕ.

Çаннăра тавăрăр та, тусăмсем, ăс-хакăлăр вăйне хăпартассишĕн çине тăрсах ĕçлеме тытăнăр: тăван чĕлхепе литературăна та тĕпче-тĕпче вĕренĕр, вырăс классикĕсемпе ытти халăхсен классикĕсене те чунăрсем çумне йышăна-йышăна хăватланăр!

Ши-и кайăр та пи-и кайăр, хурçă çунатлă пулăр!

1957

---

[1] Халĕ Шупашкарта ку театра тăваççĕ. (Пухса хатĕрлекен асăрхаттарни.)

# *Чăваш çырулăхĕн çуначĕ çирĕпленсех пытăр*

(ЧАССРĕнчи ĕçялкорсен мартăн 11-мĕшĕнче уçăлакан I съездĕнче вуласа памалли сăмах)

Юлташсем!

Хамăр районти ялкорсен канашлăвĕ мана та çак чаплă съездăн делегатне суйланипе усă курса, паян манăн хут урлă та пулин сирĕн хушшăрта пулас килчĕ, пурсăра та, тăванла ăшă салампа саламласа, çĕнĕ вăй-хал сунас килчĕ,— ирĕк парсамăр... Анăçлă та хĕрÿллĕ ирттĕр съездăмăр, тăван çырулăхăн хăватне тата çÿлерех çĕкленме пулăшаканскер пултăр съездăмăр!

Нумаях та пулмасть-ха, эпир «Коммунизм ялавĕ» хаçатăн вунă пинмĕш кĕрлевне савăнса-хĕпĕртесе чысларăмăр. Республикăри чи массăллă хаçатăмăрăн паха енĕсем çинчен, вăл чăваш ĕççыннин шухăш-кăмăлне, социализмла культурипе çырулăхне аталантарас ĕçре мĕнешкел пысăк вырăн йышăнни çинчен чылай калаçрăмăр. «Коммунизм ялавĕ» пирки те, «Советская Чувашия» тата «Çамрăк коммунист» пирки те çавăн пек ырлавлă калаçу паян та темĕн тăршшех пулма пултарĕччĕ, анчах кăмăл урăх еннелле туртăнасшăн: мĕскер çитеймест хаçатсенче, мĕскер çинчен ытларах çыртарас килет хаçатсене — çакăн пирки пăртак калаçса илесшĕн.

Социализмла ăмăрту çинчен эпир питĕ нумай калаçатпăр, ăмăртăва чăнласах йĕркелесе янă конкретлă тĕслĕхсем ытла та сахал вара. «Ăмăрту» пуçламăшĕнче мĕнле кăна пысăк обязательство илместпĕр-ши, анчах та çак ячĕшĕн çеç калаçни палли-йĕрри мĕн пурри те хут çинче тĕрленсе юлать, папка ăшне кĕрсе выртать. Мĕне пула-ха? Ăмăрту ответлăхĕ текен ăнланăва вĕтетсе ятăмăр — акă ăçта сăлтавĕ. Йышăннă обязательствăна чыслăн пурнăçласа пыракан коллективсене эпир, чăн та, час-часах аса илетпĕр, пичетре те, пухусенче те мухтатпăр, ку аван ĕнтĕ; йышăннă обязательство çине алă çеç сулаканĕсене вара манăçа хăваратпăр, питех чăрмантарса каймастпăр, пană сăмахăн ответлăхне туйтарсах тăракан атмосфера тумастпăр. Çакăнтан обязательствăна ытахаль çеç илес йăла пуçланса каять: йышăнас, пурнăçласан-пурнăçланмасан та.

Кунта хаҫатсен айӑпӗ те пӗчӗккех мар. Акӑ, калӑпӑр, тытам-ха эпӗ хамӑрӑн «Хӗрлӗ Октябрь» хаҫата, «ҫав-ҫав колхоз хӑш колхозпа ӑмӑртать?» тесе шырама тытӑнам-ха е тытам-ха эпӗ Шупашкар хаҫачӗсенчен хӑшне те пулин, «ҫав-ҫав район хӑш районпа ӑмӑртать?» тесе шырама тытӑнам-ха. Пӗр-пӗр ӑнсӑртран пичетленнӗ статьяна тӗл пултӑн пулсан — турра шӗкӗр вара, ахаллӗн эсӗ ҫулталӑкри комплектсене шӗкӗлчесе тухсан та пӗлес килнине пӗлеймӗн!.. Пирӗн район, темиҫе ҫултанпах ӗнтӗ, Куславкка районӗпе ӑмӑртать. Анчах та кам пӗлет ҫакӑн ҫинчен икӗ район тулашӗнче? Елчӗксем пӗлеҫҫӗ-и, чутайсем пӗлеҫҫӗ-и? Апла-тӑк, камсен умӗнче вӑтанас-ха пирӗн куславккасенчен юлсассӑн, камсен умӗнче мухтанас-ха куславккасенчен иртсессӗн?!

Анлӑ информацисӗр ӑмӑрту вӑл, манӑн шутпа, ӑмӑрту та мар. Ӑмӑртас-тӑк — пӗтӗм халӑх, пӗтӗм республика умӗнче ӑмӑртас пулать, пӗтӗм республика куҫӗнчен пӑхса ӗҫлес пулать!.. Ку енӗпе пире нимрен ытла сводкӑсем пулӑшма пултарӗҫ. Паллах, хальхи сводкӑсен те усси питӗ пысӑк, ҫапах та пӑртак урӑхларах тусан тата пахарах пулӗччӗ. Районсен ӗҫне-хӗлне кӑтартнӑ чух вӗсен ячӗсене республикӑра миҫемӗш вырӑн йышӑнни тӑрӑх вырнаҫтарас пулмасть, пӗр-пӗринпе ӑмӑртакан районсене юнашаррӑн вырнаҫтара-вырнаҫтара кӑтартас пулать: ӑмӑрту епле пыни хӗвел ҫинчи пек курӑнса тӑтӑр! Ахаллӗн... мӗскер ӑмӑрту ответлӑхӗ пултӑр-ха: ӑмӑртатпӑр-ӑмӑртатпӑр — ҫын куҫӗнчен пытанатпӑр!

Манӑн тата ҫавӑн пекех литературӑпа искусство пирки те калаҫса илес килет. Хаҫатсенче вӗсен пурнӑҫне ку таранччен кӑтартнинчен чылай анлӑраххӑн кӑтартасчӗ, сӑвӑ-калав та ытларах пичетлесе пырасчӗ... Пирӗн халлӗхе ятарласах культура ыйтӑвӗпе тухса тӑракан хаҫат ҫукӑ-ха (пуласса шанатпӑр!), ҫавна шута илме тивӗҫлех эпир, юлташсем. Журналсемпе кӗнекесем ҫинчен-и, художниксемпе артистсен пултарулӑхӗ ҫинчен-и, ӑсталӑх кружокӗсен ӗҫӗ-хӗлӗ ҫинчен-и — хальхи чул кӑна ҫырса тӑни ниепле те ҫырлахтараймасть. «Ялавпа» «Тӑван Атӑл» номерӗсене тишкерсе хак паракан статьясем, сӑмахран, «Коммунизм ялавӗнче» юлашки тапхӑрта темшӗн ытла та сайра курӑнкалаҫҫӗ? Журналсем лайӑхланса пыччӑр тетпӗр пулсан, вӗсен пӗр номерне те тишкермесӗр ирттерес марччӗ, ик-виҫӗ номере пӗрле илсе те пулин вӑтамран материал парса пырасчӗ, критиксемпе вулакансен сасси (общественность сасси!)

илтӗнсех тӑтӑрччӗ... Творчествӑлла организацисен кулленхи ӗҫне-хӗлне те хаҫатсем урлӑ тӗплӗнрех курас килет; искусство ҫыннисен тӗрлӗ конференцийӗсемпе канашлӑвӗсем, сӳтсе явнӑ диспутсем информацилле темиҫе йӗрке айӗнчех ҫухалас марччӗ, йышлӑ вулакансем патне туллинреххӗн ҫитесчӗ. Ку вӑл, нимӗнрех те ытларах, литературӑпа искусствӑн ӗҫне тин ҫеҫ хутшӑнма тытӑнакан ҫамрӑксем валли, вӗсен аталанӑвӗ валли кирлӗ. Чӑн ӗнтӗ, Шупашкартах пурӑнакансем, кам интересленекенӗ, ҫав пухусене хӑйсемех те ҫӳреме пултараҫҫӗ. Анчах та акӑ мӗскер-ҫке: пулас писательсемпе художниксен, пулас артистсемпе композиторсен ытларахӑшӗ районсенче, тӗп хуларан инҫетри колхозсемпе предприятисенче пурӑнаҫҫӗ!

Хаҫат-журнал ҫинчен калаҫнӑ чух, паллах, чӗлхе ҫинчен калаҫмасӑр ниепле те май килмест. Анчах кун пирки эпӗ нумаях пулмасть «Ҫамрӑк коммунистра» сӑмах хускатнӑччӗ ӗнтӗ, пӗр япаланах темиҫе хут тӳни йӗркеллӗ пулаймӗ. Ҫапах та, юлташсем, ҫакна кӗртсе хӑвармасӑр чун чӑтаймастех: «Рояль ҫинче е хуткупӑс ҫинче выляса кӑтартрӗ» тенӗ евӗрлӗрех буквализм кукрашкисенчен (ӑнӑҫсӑр жаргонсенчен!) хӑвӑртрах хӑтӑлса ҫитесчӗ, никама та пӗр чӗпкӗм те усӑ-мӗн пулас ҫук вӗсенчен!

Тӑван чӗлхене пирӗн ҫине тӑрсах вӗренес пулать, вӑйхала шеллемесӗр тӗпчес пулать, ӑна ҫырура та хӑйӗн мӗнпур ахах-мерченӗпе куҫа шартса тӑмалла тӑвас пулать. Хӑрпӑр хӑй тӗллӗн те вӗренмелле, ырми-канми тӗпчемелле, анчах шкулсенче те ку ӗҫ анлӑрах та тарӑнрах пулса пытӑрччӗ. Вунӑ ҫул пӗтернӗ ҫамрӑксенчен хӑшӗ-пӗри ултӑ-ҫичӗ уйӑхранах чӑвашла та тӗрӗс ҫырма манса кайни — кулӑшран та кулӑш, ҫав хушӑрах хытах шухӑшлаттаракан факт. Тӑван чӗлхене, Олесь Гончар каларӑшле, парта хушшинче вӗреннӗ чухнех юратма хӑнӑхтарас пулать!

Тӑван халӑхӑн ҫамрӑк ҫырулӑхне малалла аталантарас ҫынсем ҫинчен, пичет кадрӗсем ҫинчен шухӑша кайсан-тусассӑн, ҫакӑн пек кӑмӑл та ҫуралать: Шупашкарта пирӗн, юлташсем, литературӑпа журналистика училищи[1] уҫмалла мар-ши? Йышӑнасса унта вӑтам

[1] И. Н. Ульянов ячӗпе хисепленекен Чӑваш патшалӑх университетӗнче халӗ журналистика уйрӑмӗ пур. (Пухса хатӗрлекенӗ асӑрхаттарни.)

шкул пĕтернисене кăна, творчествăлла конкурспа кăна йышăнас, икĕ çул вĕренмелле тăвас, вĕрентес ĕçе, ытти преподавательсемсĕр пуçне, пысăк опытлă писательсемпе журналистсене явăçтарас: пĕтĕмĕшле пĕлĕве те анлăлаттăр вăл, çырас пултарулăха та хăпарттăр!.. Ку çав тери кирлĕ. Пурăна киле Шупашкар хаçат-журналĕ те йыш хушсах пырĕ, предприятисемпе колхозсенче те пысăк тиражлă хаçатсем ĕрчевлĕн шăтса тулĕç. Анчах камсем тытса пырĕç çав ĕçе? Практиксем çине çеç шанма пултаратпăр-и?!

Юлташсем, манăн — пĕртен-пĕр ĕмĕт: республикăри хаçатсен витĕмлĕхĕ хăватлансах пытăр! Ленинизм идейисен ăшшине пула чăн чĕрĕлнĕ чăваш çырулăхĕн çуначĕ çирĕпленсех пытăр, хурçăлансах пытăр!

1957

# *Эпир— аптрамансем...*

(Комсомолăн облаçри XXIII конференцине ярса панă çыру)

Делегат юлташсем!

Çамрăк тусăмсем!

Хамăрăн конференци ĕçе пуçăннă ятпа ирĕк парсамăр пурсăра та чăн-чăн коммунистла хĕрӳ салампа саламламашкăн, Шупашкартан аякра ларакан Октябрьски ялĕн октябрьле ăшшипе ытамламашкăн! Делегатăн чыслă та ответлă тивĕçне тӳрремĕнех пурнăçлама сирĕн хушшăра пырса вырнаçаймарăм, çумма-çуммăн лараймарăм, çакă чунăмра темĕнле кансĕрленӳ вăрататать, «ху тума тивĕçлĕ ĕçе тумастăн» текен тарăхтармăш шухăш чĕрене йĕплеме тытăнать... Айăп ан тăвăр, каçарсамăр!

Конференци... Комсомолăн облаçри конференцийĕ...

Ку вăл республикăри яш-кĕрĕмĕн пурнăçĕнче пысăка пĕлтерекен ĕç, пысăк уяв. Камăн чун-чĕришĕн партипе комсомол ĕçĕ, халăх ĕçĕ чăн-чăнах тăван ĕç пулса тăнă, çавă çак кунсенче пăлханмасăр, çĕнĕрен явăнса-ăнтăлса тухнă шухăшсемсĕр, çунатлă, вут-çулăмлă ĕмĕтсемсĕр пурăнма пултараймасть. Эпĕ те çак кунсенче, юл-

ташсем, пăлханмасăр тăма, хама хам канăçлă, лăпкă туйма тӳсĕм çитерейместĕп, шухăшăм-ĕмĕтĕм те таçта-таçта çитет, тӳпенелле пĕрхĕнет: республикăри комсомолăн ĕçĕ-хĕлĕ халиччен хинчен темиçе хут вăйлăрах та сулăмлăрах çĕкленсе кайнине курасчĕ, тăван республикăмăр хуçалăхпа культурăн хăшпĕр юпписем енĕпе вăл е ку республикăпа облаçран юлса пырассине хăвăртрах пĕтернине, пур енĕпе те малтисен ретĕнче пулнине курасчĕ!

Халĕ çеç-ха эпир, юлташсем, аслă Хĕрĕх Çула уявласа ирттертĕмĕр, çĕр чăмăрĕ çинче çĕнĕ сывлăш вĕрterme тытăннă, çĕнĕ самана пуçласа янă Октябрĕн чаплă юбилейне кăкăр тулли савăнăçпа чысларăмăр.

Социализмла революци... Октябрь...

Вăл ĕçхалăхĕшĕн, царизма пăхăнса тăнă вуншар та çĕршер халăхшăн, çĕр чăмăрĕ çинчи мĕнпур этемлĕхшĕн мĕн-мĕн илсе килнине пĕрре тытăннипех каласа та пĕтерейместĕп. Пĕр хамăр халăхшăн çеç — чăвашшăн çеç — мĕн-мĕн илсе килни çинчен шухăшласассăн та, чĕре хăй вырăнĕнчен вирхĕнсе тухас пек кăртлатма тытăнать... Мĕн курнă пулăттăмăр, Октябрь пулман пулсан? Мĕн курнă пулĕччĕ чĕлхемĕр? Хамăр та, ураран çăпата салтмасăр тенĕ пек, ларми-канми тенĕ пек ĕçленĕ çĕртех вырăнпа тертлене-тертлене, халсăрланнăçемĕн халсăрланса пырăттăмăр, Америкăри индеецсем евĕр пĕтеспăчланас патнех çитсе тухăттăмăр, чĕкеç чĕлхи пек ытарайми чипер чĕлхемĕр те, икĕ турат хушшине хĕсĕнсе ларнă саркайăк евĕр, юлашки сывлăшĕпе сывлĕччĕ, теприер ĕмĕртен вара чăваш сăмахĕ мĕне пĕлтернине те пĕртен-пĕр историксем çеç уçса пама пултарĕччĕç... Паян тесен эпир, Ленинăн хĕвел пек тĕрĕслĕхне активнĕскерсем, чăн ирĕклĕ, чăн чĕрĕлнĕ халăх, пĕртанлăх сывлăшĕпе вăй илсе хулпуççисене кар-р сарнă халăх! Апла пулсан, епле-ха ĕнтĕ ан çунччăр пирĕн çамрăк чĕресем Октябрьшĕн, Октябрь ĕçĕ-хĕлĕшĕн, вилĕмсĕр Ленинăн вилĕмсĕр ĕçĕ-хĕлĕшĕн?!

Пур халăхсемшĕн те тăванран-тăван Ильичăмăр хайласа хурçăлатнă Коммунистсен партийĕ хавхалантарса ертсе пынипе, мухтавлă Советлă Çĕршывăмăр, хăйĕн мĕнпур хуçалăхĕпе культурине хăватлăн çĕклентере-çĕклентере, шанчăклă та сулмаклă уттипе Коммунизмалла çул тытать. Çĕршывра халиччен тĕнче курман-илтмен стройкăсем пыраççĕ, çерем тырри йăтăнать, халиччен юлса пынă колхозсем пĕрин хыççăн тепри тăвалла тал-

пăнма тытăнаççĕ. Çĕршывăн сăн-сăпачĕ тĕлĕнмелле хăвăртлăхпа улшăнать, тĕлĕнмелле хăвăртлăхпа çĕнелет. Икĕ пин километр çӳллĕшне çити спутниксем — çултуссем — ярлаттарса хăпарчĕç: совет этемĕ ăсланăскерсем, вĕсем, аслă Хĕрĕх Çула саламласа, йăл-л та йăл-л кула-кула, Çĕр чăмăрĕ тавра ыткăнма тапратрĕç, пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтерсе ячĕç... Совет спутникĕсем — çултусĕсем мĕн евĕр сулмаклăхпа ярăнтарса пыраççĕ, коммунизм та планетăмăр тăрăх çавăн евĕр сулмаклăхпа утать...

КПСС XX-мĕш съезчĕн чуна çунат хушакан решенийĕсемпе кăтартăвĕсем совет халăхĕн пултаруллăхĕпе хастарлăхне çĕнĕ пусăма çĕклентерчĕç, çав шутра — ĕçре ĕмĕрне те намăс курман чăваш халăхне те. Шупашкар гидростанцийĕ, Шупашкар тинĕсĕ... Чăваш çĕршывĕн сăнне-сăпатне тепĕр темиçе çултан палласа та илеймĕпĕр!

Çакнашкал вĕри вăхăтра, самана хуранĕ вĕресе тăнă тапхăрта, тăван республикăмăр хăшпĕр ĕçсем енĕпе кайра пыни, сахал мар колхозсенче паян кун та тивĕçлĕ йĕркелĕх çукки, паллах ĕнтĕ, пире — çамрăксене — ни чыс, ни мухтав кӳмест. Мĕншĕн тесен çамрăк-кĕрĕмĕн вăйĕ-халĕ ĕçĕн ăнăçлăхне татса паракан вăй-хал, апла пулсан, ответлăх та çамрăксем çине ытларах ӳкет!..

Калас сăмахăм пирки шухăша кайнă майăн, çамрăк тусăмсем, эпĕ темĕнле шиклене-шиклене те илтĕм, халĕ те шикленкелетĕп: ăçтан пĕлес, республикăри хăшпĕр çамрăксем, тен, манăн сăмахсене ĕненмесĕртерех: «Вырăн çинче калаçса выртма пулать ăна — ĕçлесе пăхасчĕ!» — тенĕ пекрех, кĕтсе илĕç. Пĕр шутласан, чăнах та, вырăн çинче калаçса, чĕнсе-йыхăрса выртасси — чи çăмăлли те чи ансатти пек, анчах... тепĕр тесен, ку вăл йывăрринчен те йывăртараххи-и, тен... Сиксе тăраттăмччĕ те пысăк та çутă ĕçсене сăмах вăйĕпе кăна мар, чăнчăн ĕçпех, тӳрремĕнех тума тытăнайăттăм!

Хастарлă, хыт утăмлă пулăр,
Çĕршывăн хастар ачисем,
Вут кайăклăн вĕçĕр, ан юлăр,
Ан юлăр кунçул уттинчен!..

Çапла халал парса хăварнă пире, чăваш ачисене, асран кайми поэтăмăр, хăйĕн пĕтĕм кĕске пурнăçне халăхшăн хыпса-çунса ирттернĕ Çеçпĕлĕмĕр. Манмастпăрши эпир, хăшĕ-пĕри, çав чаплă, сăваплă халала, кунçулăн сулмаклă уттинчен юлса, çемçешке утăмсемпе урлă-

пирлӗ пускалама тытӑнмастпӑр-ши хӑшпӗр чухне? Пурах ҫав ун пек «ҫылӑх»... Чӑн-чӑн тӗллевлӗ пурнӑҫпа пурӑнакан, халӑх ырлӑхӗшӗн ҫунса, куллен-кунах сӑваплӑ та ҫав вӑхӑтрах паттӑр ӗҫ туса пурӑнакан нумай ҫамрӑксемпе пӗрлех, шеллӗхе, эпир кунҫул уттинчен юлнӑ, пурнӑҫ тӗллевӗпе тупсӑмне тупайман, вак-тӗвек интереспа вак-тӗвек хавaслӑхӗшӗн ҫеҫ ӗнтӗркесе пурӑнакан мӗскӗнсене те сахал мар куратпӑр ҫав. Карт, эрех, таса юратӑвӑн шӑрши-марши те килмен лапӑртанчӑк «юрату», нимӗн ҫукран нимӗр тенӗ пек харкашусем... Кашни районпа хуларах ытлӑн-ҫитлӗн мар-и вӗсем, ҫавсемпе супа-супа кунҫула сая яракансем? Пурнӑҫ-ши ӗнтӗ вӑл, ҫавӑн пек вак-тӗвек интересшӗн, вак-тӗвек йӑпанӑвшӑн кун кунлани, халӑха ырӑ кӳрекен пархатарлӑ ҫутӑ тӗллевсӗр, ҫутӑ кӗрешӳсӗр пурӑнни?! Пурнӑҫ мар! Вӑл мӗскӗнлӗх, янаварлӑх!

Авӑ эсир, юлташсем, пӑшӑл-пӑшӑл тума хатӗрленетӗр: «Делегатсем хушшинче унашкал ҫынсем ҫук, апла пулсан, мӗскер тума пирӗн умра калас ку сӑмахсене?» — теесшӗн сирӗнтен хӑшӗсем. Вӑл тӗрӗсех ӗнтӗ, делегатсем хушшинче ҫуках пулӗ унашкал лӗнчӗр-ленчӗр чунсем. Анчах та акӑ мӗскер-ҫке: тивӗҫлӗ кӗрешӳ сарӑлнӑ-и пирӗн ҫав пӑшӑрхантаракан фактсене хирӗҫ? Ҫук, тивӗҫлӗ кӗрешӳ сарӑлнӑ тесе калама май килеймест: вӑхӑтран-вӑхӑта ҫеҫ кампаниллӗ-мӗнлӗ кӗрлекелесе илетпӗр, ку вӑл куллен-кун тумалли ӗҫ иккенне манаҫа яратпӑр. ВЛКСМ обкомӗпе райкомӗсем, тӳрех каламалла, ку кӗрешӗве кирлӗ таран хакламаҫҫӗ-ха.

Уйрӑмах эрехе хирӗҫ вирлӗн кӗрешес пулать, ҫанна тавӑрсах кӗрешес пулать. Мӗншӗн тесен, эрех текен йӑлтӑркка шуйттан вӑл — пусмӑр айӗнчен хӑтӑлнӑ ҫыншӑн чи путсӗр япала, эрех вӑл — этем хурлӑхӗпе инкекӗ, тӗн сиенӗ те унӑн сиенӗпе танлашма пултараймасть-и, тен. Пӑхсамӑр-ха, юлташсем, йӗри-тавра: мӗнмӗн кӑна хӑтланмасть вӑл, эрех, тӗнчере! Мӗн-мӗн кӑна тумасть вӑл этемпе! Ӗҫри пултарулӑх чакасси, харкашасси-ҫапӑҫасси, чирлесси-сусӑрланасси, ним мар ҫӗртен вилсе выртасси е урӑх ҫынсене вӗлерсе пӑрахасси — шутласа кӑларма кӑна ӗлкӗр!.. 1954 ҫулта пӗр вӑхӑт эрехе хирӗҫ кӗрешесси чӑнахах пуҫланнӑччӗ, ҫакӑ ӗҫмен ҫынсене анчах мар, ӗҫекенсене хӑйсене те савӑнтаратчӗ: юрать сахалланчӗ-ха вӑл путсӗр, ахальшӗн хӑтӑлас та ҫук унтан,— тетчӗҫ кашни кӗтесрех «ҫӗр грамм» шаккашакка тӑнтан тухакансем. Шел, нумаях тӑсӑлмарӗ ҫав:

каллех, кашни урамра та кашни кĕтесре тенĕ пек, «закусочная» е «дежурка» текен ăнăçсăрсем уçăлса тулчĕç, çынсене вуншарăн та çĕршерĕн çăта-çăта, шампа хырăмĕсене тултарма тапратрĕç, кĕнекепе хаçат-журнал сутас-сарас ĕçе çавăн пек йĕркелесчĕ пирĕн!.. Сăмах вăйĕпе те кĕрешес пулать эрехе хирĕç, администрацилле мерăсемпе те кĕрешес пулать... Чăн-чăн наступлени пуçласа ярас пулать: ăçта çитнĕ унта «тултар мана сто!» тенисем хăлхана çĕртсе ан тăччăр! Эрехе хирĕç кĕрешни, юлташсем, коммунизмшăн кĕрешниех: эрех кĕленчи çине утланнă юланутçăсемпе коммунизма пырса кĕреймĕн. Çакна пирĕн нихăçан та манас марччĕ.

Юлташсем!

Çук, манăн паян эрехпе унăн хӳрешкисем çинчен кăна калаçассăм килмест, манăн паян комсомол активĕ пирки те пĕр-икĕ сăмах хускатас килет. Паллах, мĕнпур актив пирки мар, активăн пĕр пайĕ пирки, тивĕçсĕрех активистсен шутĕнче тăракан, хăйсен лăпкăлăхĕпе тĕлĕнтерекен çынсем пирки.

Унашкал юлташсем вĕсем эрехе те сыпмаççĕ, ытти усал ĕçпе те явăçмаççĕ, вĕсем — йĕркеллĕ, ырă çынсем. Вĕсен ĕмĕчĕ те çутă, коммунизмла пуласлăха кĕтекен ĕмĕтех пулĕ. Анчах та мĕнлерех-ши вĕсен кĕрешӳ туйăмĕ, çутă ĕмĕте хăвăртрах пурнăçа кĕртессишĕн пыракан кĕрешӳре çунса тăраслăхĕ? Пур-ши вăл, вăйлă-ши вăл?

Çавă çукки, çавă вăйсăрри пăшăрхантарать те çав.

Çутă ĕмĕт-тĕллев тытса пурăнни кăна хăй тĕллĕн нимĕнех те мар-ха. Эсĕ чăнласах комсомолец пулсан, чăнласах этем ырлăхĕ çинчен шухăшлатăн пулсан, ĕмĕттĕллеве ăна нихăçан та, нимĕнле условире те хавшаман чăн-чăн кĕрешӳпе, пурнăçри кирек-мĕнле йывăрлăха та сирсе ывăтса пыракан вут-çулăмлă кĕрешӳпе çыхăнтарас пулать.

Қалăпăр, комсомол райкомĕ е парти райкомĕ активиста пĕр-пĕр ĕç хушать. Ăна асăннă юлташ пĕр кăлтăксăр, йĕркеллĕ те шăп хушнă вăхăтра туса ирттерет, тепĕр майлă каласан — лăт та лăтах пурнăçлать. Чыс та мухтав! Анчах та, çав конкретлă ĕçсĕр пуçне, вăл урăх нимĕн те курмасть, нимĕн те илтмест. Хăйĕн куçĕ умĕнчех, хăлхи çумĕнчех темĕн чухлĕ кăлтăк, темĕн чухлĕ киревсĕрлĕхпе ирсĕрлĕх, вăл вара — шăпăртах. Унăн чунĕ çав тери лăпкă, çав тери канăçлă. Часах пăлхантараймăн, çилĕпе тултарса кĕрешĕве çĕклентереймĕн!

— Мĕнле чĕрӳ чăтать-ха санăн чĕнмесĕр, мĕншĕн хаçат урлă та пулин кĕрешĕве тухмастăн? — ыйтатăн вара çавăн пек çынран.— Хамăр алăпа тумасан, кам аллипе тăвăпăр, кам килсе янтăласса кĕтĕпĕр?..

Анчах вăл тутине темлерех чалăштарать те çав тери лăпкă сассипе çакăн пек лаплаттарать:

— Мĕн тăвас çынна çиллентерсе, хамăн ĕçĕме пĕлсе пултăр... Хаçат çине çырмасăр та халь тăнтан илеççĕ: хăшĕ те пулин çырса кăларать те, тӳрех мана шухăшлаççĕ — эсĕ çырнă та, эсĕ çырнă, теççĕ.

Мăнтарăн этемĕ! Çын тăвакан ĕçшĕн те инкек тӳсме тивет иккен! Хамăрăн ӳт-тир пĕтĕм халăх ĕçĕнчен нумай çывăхарах иккен!.. Анчах комсомолла чун-чĕре-и ĕнтĕ çавă, юлташсем, коммунистла чĕре-и? Ку вăл кĕрешӳçĕ-этем мар, ку вăл — хăйĕн канлĕхне çухатасран чĕтресе пурăнакан, «ах, турах, темĕскер сиксе ан тухтăрах» тесе пурăнакан мещен!

Быть коммунистом —
значит, дерзать,
думать,
хотеть,
сметь!..

Революци ĕçĕшĕн пĕтĕм пултаруллăхне, пĕтĕм вăйхалне панă В. В. Маяковскин çак сăмахĕсем коммунистсене кăна мар, комсомолецсене те тӳрремĕнех тивекен сăмахсем. Яланах çавăн пек хĕрӳллĕ те канăçсăр пулма, пурнăçра тĕл пулакан кăлтăксемпе киревсĕрлĕхсене хирĕç ним чарăнми-лăпланми кĕрешме, яланах малалла тинкерсе утма, çĕннине шырама, халăх ĕçĕшĕн, ленинизм ĕçĕшĕн чунсенчи мĕнпур вăй-хала пама тивĕçлĕ те ĕнтĕ эпир. Çавăн пек вĕрентет те пире ленинла тăван Партийĕмĕр.

Çеçпĕл Мишши калашле:

Ман çунатлă вутлă чунăм
Сĕн çĕре чĕнен чĕре
Кĕрешӳ вăйне анчах
Кăмăллать çак тĕнчере.

Акă мĕнле пулмалла чăн-чăн комсомолецăн, чăн-чăн этемĕн!

Н. Островский калашле: «Только вперед, только на линию огня!» Акă мĕнле пулмалла чăн-чăн комсомолецăн, чăн-чăн этемĕн!..

Çамрăк авторсене ӳсме пулăшас ĕç çине те комсомол организацийĕсен уйрăмах тимлĕ пăхас пулать, ку — вĕсен пархатарлă тивĕçĕ. Çакна эпир пурте ăнланатпăр, час-часах асăнатпăр, анчах та темшĕн-çке вăл ĕçе обком ĕçĕ пек кăна йышăнатпăр, райкомсемпе хула комитечĕсен тивĕçĕ çинчен аса илместпĕр. Обком вара ку анлă ĕçе хăй вăйĕпе, хăй аппарачĕпе кăна кирлĕ пек тарăннăн илсе пыма пултараймĕ, вăл ăна хăйĕн вырăнти органĕсем урлă, райкомсемпе хула комитечĕсем урлă кăна тума пултарĕ. Мĕншĕн тесен тин çеç литература ĕçне пуçăнакан çамрăксене пулăшса-хавхалантарса пырасси вăл — вăхăтран вăхăта тумалли мероприяти мар, вăл тăтăш та куллен-кун туса пымалли ĕç, мĕншĕн тесен тин çеç литература ĕçне пуçăнакан çамрăксем вĕсем республикăн тĕп хулинче кăна пурăнмаççĕ, вĕсен анлăрах масси — районсемпе хуласенче, шкулсемпе предприятисенче. Унта вĕсем ытларах шăтаççĕ, ĕçлессе те вĕсемпе унта ытларах ĕçлес пулать!

Пирĕн хамăрăн Октябрь районĕнче ку енĕпе ĕç авантарах тăрать: ВЛКСМ райкомĕн секретарĕсем (Анисимова юлташ та, Андреев юлташ та) çамрăк авторсен коллективĕнчен уйрăлса пурăнмаççĕ, пулăшусăр тăратса хăвармаççĕ. Çакăн çинчен кăна ĕмĕтленетпĕр: малашне çав интересленӳ, çав пулăшу тарăнрах та конкретлăрах пулса пытăрччĕ — уйрăм авторсен творчествăлла ӳсĕмне те тĕплĕнрех сăнасчĕ, шкулсенчи литкружоксемпе те ытларах интересленесчĕ... Анчах мĕнле тăрать-ха çак ĕç ытти районсенче? Вулатăп-вулатăп та юлташсен çырăвĕсене: хăшпĕр райкомсем ку ĕç çине чăтма-тӳсме çук тӳрккес пăхаççĕ!..

Делегат юлташсем! Тантăшсем, шăллăмсемпе йăмăксем!

Этемшĕн чи хакли вăл —
Пурнăç.
Пĕрре кăна **вăл**
Пурин те.
Тăрлавсăр ан çухалтăр унăн
Виçесĕр пĕчĕк пайĕ те.

Пĕтĕм кунçулăмăра, çамрăк чĕремĕрсен пĕтĕм вăйхалне Октябрĕн çутăран-çутă та чысларан-чыслă ĕçĕшĕн, этем телейĕпе ырлăхĕшĕн парар, Советлă Çĕршывăмăрăн хăвачĕпе мухтавĕшĕн, хамăра çуратса ӳстернĕ, чăн чĕрĕлнĕ чăваш халăхĕн экономикипе культурин çĕнĕ çĕкленĕвĕшĕн парар!

Кăвар чĕреллĕ поэтăмăр — Çеçпĕлĕмĕр — йыхравне кашниех чун çумне илер, кунçул уттипе шайма-шай утар, хастарлă, хыт утăмлă пулар, Чăваш комсомолĕн ырă ятне аслă Çĕршывăмăр умĕнче те, пĕтĕм тĕнче умĕнче те — чыслăн упрар, татах та çӳлерех йăтар!

Эпир — аптрамансем!

1957

# *Ырă çул пултăр, ачасем!*

Шкулсенчи литература кружокĕсен пĕлтерĕшĕ, вĕсен ĕçĕ хĕрӳллĕн те кал-каллăн пулса пынин пĕлтерĕшĕ — анлăран та анлă, пысăкран та пысăк. Ку вăл хамăрăн, Октябре пула чăн чĕрĕлнĕ халăхăн литературипе культурине малалла аталантарас ĕçшĕн те çав тери кирлĕ, ку вăл воспитани ĕçĕшĕн те çав тери сулăмлă. Пурнăç çулĕ çине шавласа та кĕрлесе тухма хатĕрленекен çап-çамрăк ăру — шкулсенче. Апла пулсан, тăван литературăн пуласлăхри хăвачĕ те шкулсенчи литкружоксем витĕр тухакан «кăвар чĕреллĕ чăваш ачисенчен» килĕ: кружоксем мĕн чухлĕ йышлăрах, вăйлăрах пулĕç, тăван литературăн пуласлăхри юхăмĕ те çавăн чухлĕ вăйлăрах, çавăн чухлĕ кĕрлевлĕрех пулĕ!

Çамрăк талантсем хăвăрт та хăватлăн çунат сарасси вĕсем мĕнле çемьере çуралса ӳснинчен те нумай килет: пысăк культурăллă ашшĕ-амăшĕ çумĕнче ачисем те культура енне иртерех туртăнма тытăнаççĕ, поэзилле вăрану та вĕсен иртерех пулса иртет. Илер-ха, тĕслĕхрен, Пушкина, Лермонтова. Вĕсем мĕн пĕчĕкренех пысăк пĕлӳллĕ, литературăпа искусствăна чунтан хисеплекен-савакан хурăнташ-тăван хушшинче аталанса ӳснĕ, çавăнпа ĕнтĕ поэзипе шухăшлав та вĕсен ача чухнех вăраннă, пултарулăх хăвачĕ çав сăлтавран нумай килнĕ. Пирĕн вара, чăвашсен, патша саманинчи нацилле пусмăра пула, пысăка вĕреннĕ çынсем питĕ сайра пулнă, литературăпа искусствăна куллен-кун сума суса пурăнакан культурăлла чăваш çемйисем пăч-пач кăна курăнкаланă. Чăвашсен хальхи паллă поэчĕсемпе писателĕ-

сем пурте пекех хут пӗлнӗ-пӗлмен килйышсенче ҫуралса ӳснӗ, литературӑпа искусство мӗн иккенне вӗсем ҫитӗнеспе тин астивме пуҫланӑ, кӑн-кан пӑхкалама, шухӑш шухӑшлама ҫитӗнеспе тин тапратнӑ, ҫакӑ, паллах, вӗсен пултарулӑхне вӑй илме кансӗрленех ӗнтӗ... Халӗ пирӗн тӑван литературӑпа искусствӑна сума сӑван ҫемьесем йышлӑ. Ҫапах та тата ытларах пултарас килет. Акӑ мӗн пирки шкулсенчи литкружоксем пире кирлӗрен те кирлӗ, вӗсен пӗлтерӗшӗ — пысӑкран та пысӑк!

Паллах, литкружока ҫӳрекен ачасем пурӑна киле пурте профессионал-писатель пулӗҫ тесе пӗрре те ӗмӗт тытмастпӑр эпир. Чылайӑшӗ колхозник е рабочи, агроном е врач, инженер е учитель, ученӑй е вӗҫевҫӗ пулса тӑрӗҫ, анчах та хӑйсене илемлӗх туйӑмӗ, эстетикӑлла туйӑм явӑҫтарнӑ литература кружокне вӗсем яланах ырӑпа аса илӗҫ!

Районти хӑшпӗр шкулсенчи учительсен коллективӗсем ҫакна аванах ӑнланнӑ, чӑваш литкружокӗсем йӗркелес ӗҫе хӑйсен пархатарлӑ тивӗҫӗ вырӑнне йышӑннӑ. Ку енӗпе, уйрӑмах, Хуракасси вӑтам шкулне асӑнни вырӑнлӑ. Кунта ҫак ӗҫе чӑваш литератури вӗрентекен И. Михайлов юлташ кӑна мар, ытти хӑшпӗр учительсем те кирлӗ пек ырлаҫҫӗ, хӑйсем те пулӑшса тӑраҫҫӗ. Ҫавӑнпа ӗнтӗ кунта литература журналӗ те кашни чӗрӗкре тухать, литература каҫӗсемпе викторинӑсем те тӑтӑшах пулаҫҫӗ... Райцентрти вӑтам шкулта вара ҫавӑн майлӑ кружок 1953 ҫултанпа ӗҫлет, кунта та, тӑватӑ уйӑхра пӗрре, журнал тухать. Чӑрӑш Туҫапа Энтри Пасарӗнчи ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулсенче те кружоксем чылайранпа ӗҫлеҫҫӗ. Нумаях пулмасть Ҫӗрӗккасси шкулӗнче тепӗр кружок шӑтса тухрӗ, хӑйӗн малтанхи журналне кӑларчӗ (кружок руководителӗ — районти литпӗрлешӗвӗн членӗ И. Туҫасем). Шӗнерпуҫӗнчи И. Я. Яковлев ячӗпе тӑракан вӑтам шкул вӑрах вӑхӑт пӑшӑрхантарса пурӑннӑччӗ, ҫамрӑк авторсен сасси кунта вӑрах вӑхӑт илтӗнменччӗ. Халӗ вара чӑваш литература кружокӗ кунта та ӗҫле пуҫларӗ, пӗрре хускалнӑ пархатарлӑ ӗҫ лайӑхлансах пытӑрччӗ ҫеҫ!..

Анчах ҫакӑ пысӑк пӗлтерӗшлӗ ӗҫе ку таранччене хакламан шкул коллективӗсем те ҫук мар-ха. Уйрӑмах пире Ҫатракасси вӑтам шкулӗнчи шӑплӑх тӗлӗнтерет: иккӗмӗш ҫул ӗнтӗ кунта кружок хут ҫинче кӑна пурӑнать! Анчах учительсен коллективне ҫакӑ пӗрре те пӑшӑрхантармасть пулас.

Çитес çуркунне, çĕршыв типсен, районти çамрăк авторсен 4-мĕш канашлăвĕ пулать. Шкул дирекцийĕсен çав канашлăва уйăрса ямалли делегатсем пирки халĕрехех шухăшлама тытăнасчĕ!..

Паянхи страницăра хăшпĕр литкружок членĕсен темиçе произведенийĕ пичетленет. Паллах, вĕсенче çитменлĕхсем, вăйсăр енсем сахал мар ĕнтĕ, çамрăк авторсен ăсталăха хăпартассишĕн нумай ĕçлемелле-ха: нумай вĕренмелле, нумай вуламалла, нумай шухăшламалла. Анчах вĕсем шанчăк паракан халăх иккенни халех сисĕнет ĕнтĕ. Çавăнпа та вĕсене сăвă-калав çырас пултарулăха хăпартса пырассишĕн çанна тавăрсах ĕçлеме сĕнес килет...

Ырă çул пултăр, ачасем!

1957 ç.

# *Пурнăçăн тупсăмĕ...*

Хисеплĕ Юрий!

«Çамрăк коммуниста» çырса янă пăшăрхануллă-аптăравлă çырăвна вуласа тухрăм та эпĕ тарăн шухăша кайрăм... Шăллăма ятланă пек ятлас-хăтăрас та килчĕ сана манăн, телейсĕр апăршана шелленĕ пек шеллесхĕрхенес те килчĕ. Мĕншĕн тесен хамăрăн çакă саманара (Ленин идейисен ырлăхне астивсе хавхаланнă саманара) кичеммĕн анасласа, вăй-хала ниçта хума пĕлеймесĕр ахлатса пурăнакан ыră-сывă та вăйпитти çамрăка эпĕ ăнланма та пултараймастăп; мĕншĕн тесен пысăк та çутă ĕмĕт-тĕллевпе ăванмасăр, кĕрешӳ вутĕнче шăранмасăр пурăнакан этем ман ăшчикĕмре яланах хĕрхенӳ çеç хускатать, чăн-чăн телей мĕн иккенне пачах та ăнланман мĕскĕнĕн курăнать... Тĕрĕссипе илсен, сана çупăрласа тăракан çав кичемлĕх те вăл, Юрий, пурнăçра пысăк тĕллев çуккинчен, пысăк кĕрешӳ çуккинчен килсе тухнă япала кăна.

«Кичем вăл, пурнăç, кĕрешӳ çук чух...» — тенĕ, ка-

наçлах тупайман енне, Лермонтов; «Этем пуласси — кĕрешÿçĕ пуласси»,— тенĕ пысăк шухăшсен ытамĕнчи Гĕте; «Чĕр çын вăл кĕрешет! Çут ĕмĕтшĕн чунне йалт хуракан çеç тивĕçлĕ илтме чĕр çын ятне!» — тенĕ вĕрекен чунлă романтик Гюго; «Чунра çук-тăк кăвар — асап çеç, пурнăç мар!» — тенĕ тăван казах халăхне телей кÿрессишĕн пĕтĕм хавалне панă Абай; «Кĕрешÿ вăйне анчах кăмăллать ман вутлă чунăм»; — тенĕ хамăрăн Çеçпĕл Мишши; «Эй, кĕрешÿ телейĕ!» — тенĕ Данкăнни пек чĕрелле Горький...

Ан шутла, тăванăм, çакă сăмахсем вĕсем ытахальтен персе янăскерсем мар, вĕсене халăх ырлăхĕшĕн хыпса çунакан кăмăл-туртăм калаттарнă, пурнăç пирки тарăн шухăша кайни калаттарнă. Иртнĕ вунă çул та ытларах вăхăтăн тăршшĕнче эпĕ çав сăмахсен таса та хăватлă тĕрĕслĕхне пĕтĕм чĕре тымарĕпе ĕнентĕм. Сахал мар шухăшларăм, ĕнентĕм...

Пурнăçа халăхшăн, унăн телейĕшĕн парас ĕмĕтĕм манăн питĕ ир, мăя хĕрлĕ галстук çыхса çÿренĕ çулсенчех, тĕвĕлленнĕччĕ. Анчах та малтанхи вăхăтра эп «пысăк ĕмĕтлĕ, кĕрешÿллĕ пурнăç вăл — этемĕн тивĕçĕ» тесе шухăшлаттăмччĕ, ун пек пурнăç вăл этемĕн телейĕ те тесе шухăшласах пăхмастăмччĕ. Кунашкал тарăн шухăш патне пырса тухиччен малтан çав телее хамăн астивсе курмалла пулнă-мĕн!

Пархатарлă пысăк ĕмĕт-тĕллевпе çунатланса, çунăхса пурăнман пурнăç вăл, кĕрешÿсĕр пурнăç вăл, манăн шутăмпа, пурнăç та мар, кун кунлани кăна (хырăм туттипе вак-тĕвек йăпанушăн çеç пурăнма ăна тĕрлĕрен тилĕсемпе мулкачсем те аванах пултараççĕ; пăлханусăр та канлĕ, çĕршенÿллĕ пурнăçа ăна кăкласа ывăтма ĕлкĕреймен тункатасем те пултараççĕ!). Хăйĕн кунçулне халăх кунçулĕпе, пĕтĕм этемлĕх кунçулĕпе çыхăнтарса пĕр туса хуман этем вăл (темĕн пек чаплă сывлăхлă пулсан та, пурлăхпа юратăвăн ырлăхĕ ăна темĕн пек ачашлать пулсан та), пат татса калатăп, Юрий, çурма телейлĕ çын çеç. Ун пек çыннăн телейĕ вăл — çав тери ансăркка телей, унашкал телейĕн кÿллинче ни чăмма май çук, ни ишме: вăйлăрах çил вĕрсе иртĕ те, типсе те ларĕ кÿлĕ! Çавăнпа ĕнтĕ, ун пек этем кунçулĕнче инкек-мĕн сиксе тухас пулсан, пĕтрĕ вара пурнăç: текех вăл этем хĕвеле те, нимĕне те асăрхамасть, хăй инкекĕсĕр пуçне нимĕне те курмасть, чĕринче унăн — хуп-хура трагеди...

Пĕрер пилĕк çул каярах-ха вăл, лайăх астăватăп, манăн пĕчĕк чăлана, майĕпен утса, утмăлалла сулăннă пĕр хĕрарăм кĕнĕччĕ. Сăнĕ салхуллăччĕ, çав кунхи çилтăманлăрах çанталăкпа шăйма-шайлăччĕ. «Такам кӳрентернĕ пулмалла... те хаçат çине çыртарасшăн?!» — йăлана кĕнĕ хăнăхупа шухăшласа илтĕм эпĕ. Анчах вăл пачах та хамăр енчи çын пулмарĕ-мĕн, Сĕнтĕр енчисеммĕн: аслă ывăлĕ пирĕн ялта ĕçлесе пурăнать, ун патне хăнана килнĕ.

— Ман хамăн та сан пек выртакан ывăл пурччĕ те... ывăл пур та...— темĕншĕн такăнса илсе каларĕ вăл.— Кĕрсе курас килчĕ сана... Ятламăн-и?..

Ывăлĕ унăн, манпа тантăшскер, вăтам шкултан чиперех вĕренсе тухнă пулнă-мĕн, анчах Хусанти пĕр институтра вĕреннĕ чухне икĕ урине те паралич çапса хуçнă. Аста профессор-тухтăрсем те пулăшу парайман ăна, яланлăхах вырăн çине тăлланса ӳкнĕ. Кĕçех киле таврăннă, манăнни пек пурнăç пуçланса кайнă...

Ывăлĕ çав вăхăтра мĕнле кăмăлпа, мĕн-мĕн интереспе пурăнни çинчен эпĕ пĕр-икĕ хутчен те ыйтса пĕлме тапăнса пăхрăм, усси пулмарĕ — кинемей мана нимĕнех те шарламарĕ: темĕнле кансĕрлене-кансĕрлене, калаçăва çаплах айккинелле пăрса пычĕ. Тухса кайнă чух, чĕтрекен аллине парса, çапла каласа хучĕ:

— Хальхи пекех хаваслă пул, ачам... Пĕртте выртакан çын пек мар эс...

Çак сăмахсем мана шухăша ячĕç, кинемей чĕринче ыраттаракан вăрттăнлăх пуррине систерчĕç. Анчах мĕнле вăрттăнлăх, тавçăрса илме пултараймарăм... Темиçе кун иртсен кăна унăн аслă ывăлĕпе ĕçлекен пĕр юлташран эпĕ çакна пĕлтĕм (вара йăлтах ăнлантăм): кинемейĕн урасăр юлнă ывăлĕ çав вăхăт тĕлне чĕрĕ пулман иккен, пĕр-икĕ çул выртнă хыççăн... перĕннĕ те вилнĕ иккен!

Кинемее чунтанах хĕрхентĕм эп. Анчах та (чĕресĕр тесе ан кала мана, Юрий!) хăйне, çав палламан мĕскĕн тантăша, хĕрхенме пĕлеймерĕм. Унтан та ытларах, темĕнле аван мар пулса кайрĕ мана уншăн, намăс пулса кайрĕ... «Йывăрлăхран хăраса ӳкнĕ дезертир!» — шухăшларăм эпĕ, шăла çыртса. Совет çыннин ятне те, комсомолец ятне те çĕртнĕ вăл.

Мĕн пирки çавнашкал пессимизм лачакине путса ларнă пулать-ха асăннă юлташ, мĕн пирки çакă пĕртенпĕр çутă тĕнче уншăн ытлашши пулса тăнă?

Вăл çынпа эпĕ нихăçан та курнăçман, пуплемен пулин те, пĕр иккĕленсе тăмасăр калатăп: питĕ пĕчĕк, питĕ ансăркка пулнă унăн пурнăç интересĕ, хăйĕн ӳчĕпе чĕринчен аякках хăпайман пулнă унăн пурнăç тĕллевĕпе тупсăмĕ. Хăйĕн «личнăй» телейсĕрлĕхĕ çинчен шухăшланисĕр пуçне, тек нимĕн çинчен те шухăшламан вăл. Тĕнчери халăхсен пурнăçĕ, социализм ĕçĕн аталанăвĕ, советлă çĕрĕмĕр епле утăмсемпе утни, тăван Чăваш республикин хуçалăхпа культурăри ырă ячĕ мĕнле çĕкленсе пыни, тăван ялĕпе колхозĕнчи пурнăç епле шайра пулни шухăша яман ăна çаксем пĕри те, ни савăнтарман, ни тарăхтарман... Общество пурнăçĕпе çынсен ăраскалĕ хăйшĕн пурпĕрех, «личнăй» пурнăç тенĕскерĕ вара арканнă пулсан, чăнах та, мĕнле ырлăх, мĕнле телей çупăрласа тăтăр-ха этеме? Ăçтан-ха нăшиклетме-нăйкăшма тапратас мар кунта, ăçтан-ха чĕрӳне ан пырса кĕтĕр пессимизм?!

Е акă тепĕр тĕслĕх сана, Юрий.

Аякра, чылай пысăк вырăнта, пĕр тантăш-хурăнташăм ĕçлесе пурăнать ман. Çавă, отпуска килсен часчасах кĕрекенскер, хĕрĕнкĕрех пуçпа пĕрреччен ман умра çапла çавăрттарса хучĕ:

— Шуйттан эсĕ, Альпăрт... Эпĕ пулсан — кончал, пĕтнĕ: шап! кăна çамкаран, и — все! Е ĕçке ярăннă пулăттăм... Чăтса пулас çукчĕ...

Ку сăмахсем мана нимĕн чухлĕ те тĕлĕнтермерĕç, мĕншĕн тесен маншăн вĕсем кĕтмен япала пулмарĕç. Кунçул шăпи ăнсăртран çапла хуçас пулсан, çак хурăнташăн пĕтĕм телейĕ сӳнсе ларасса, вăл Сĕнтĕр ачи пекех пессимизм ытамне çакланасса эпĕ тахçанах, хăй уçса памасăрах аван туяттăм... Çынни вăл ырă çын, никама та усал тăвас çук. Ĕçлессе те вăл, пĕлетĕп, усал мар ĕçлет: аслăраххисем мĕн хушнине йĕркеллех, вăхăтрах тăвать. Аслăраххисем хушнипе анчах çав, намăс курас ан пултăр тенипе, служба картлашки тăрăх аялалла кустарса «çусăртарах» пурнăçа лекмелле ан пултăр тенипе анчах çав, хăйĕн чунĕ хистенĕ пирки мар. Хистемест ăна çурма мещенле ĕнтĕрке пуçланă чунĕ, çук унăн малалла туртакан канăçсăр, романтикăлла туйăм! Никама та усал туман ырăкăмăллăхĕ те унăн — хăйшĕн темĕн аван мар сиксе тухасран шикленни кăна, обывателле ырăкăмăллăх кăна. Лайăх çынна çеç мар, усал çынна та нихçан усал тумасть вăл: çул çинче тĕл пулакан тумхаха, тапса вăркăнтарас вырăнне, меллĕн кăна

айккинчен пăрăнса иртет вăл («манăн ĕç çук!»)... Хăйĕн кунçулне халăх кунçулĕпе, тĕнче кунçулĕпе пĕтĕçтерсе пĕр кунçул туса хурайман хурăнташăм, пурнăç тĕллевĕпе тупсăмĕ унăн — хăйпе те çемйипе кăна çыхăннă, ытла та ансăррăн та ăшăххăн, мĕскĕннĕн çыхăннă!..

«Да-а, чăтмалла вĕт этемĕн...», «Турă чăтăм патăрах, ачам, тӳсĕм патăрах...»

Çакăн евĕрлĕ хĕрхенӳллĕ сăмахсене те эпĕ, Юрий, сахал мар илтетĕп. Анчах та (курнăçланма пăхать ку тесе ан шухăшла!) тӳрех калатăп: кулăшла туйăнаççĕ мана унашкал чăтăм çитерме хистекен ахлатусем. Мучисемпе кинемейсем çапла калаçнă чух, эпĕ татах та ăнланма килĕшетĕп-ха (вĕсем урăх сывлăшра çитĕннĕ); çав «тӳсĕм çиттĕрех» юрра хамăр саманара, совет шкулĕнче ӳссе çын пулнă юлташсем тăсма тапратнине вара эпĕ пачах та ăнланаймастăп.

Мĕнле чăтăм-тӳсĕм пирки калаçаççĕ, мĕне çĕнтерме кирлĕ вăл?

...Акă ĕнтĕ вунвиçĕ çул ытла вырăнпа выртатăп эпĕ. Инкеке çакланнă Павел Корчагин малтанхи тапхăрта иккĕленнĕ пулсан, хăй умне: «Пурăнмалла-и, çук-и»,— текен ыйту лартса пăхнă пулсан, манăн (мĕн пĕчĕкрен Корчагин кăварĕпе авăрланнăскерĕн) умма унашкал ыйту кăларса лартасси чи йывăр самантсенче те пачах пулмарĕ. Тата пулма та пултарайман вăл.

Мĕн пирки? Мĕншĕн тесен, чир-чĕр ылханĕ вунçиччĕрех урараи ӳкерчĕ пулин те, хама эпĕ нихăçан та хĕвел курăнми телейсĕррĕн туйман, сĕм-хура трагеди ытамне кĕрсе ӳкнĕ тесе шутламан. Çутçанталăкăн, пурнăçăн илĕртӳллĕ вылявĕ маншăн çав-çавах сарлакан та туллин чӳхенсе хумханнă, тата (шантарсах калатăп) малашне те, мĕн чĕре тапма чарăниччenех, çав вăй-хăватпах чӳхенсе хумханĕ, хĕвелĕн кулли çав илемпех чуна ачашлĕ... Хăшпĕр иккĕленчĕк ăспуçсем, тен, ĕненмеăнланма та пултараймĕç, Юрий, анчах та манăн пурнăçăм вăл — пĕрре те хамăн ансăр пурнăçăм кăна мар, хамăн пӳ-çийĕмĕн, хамăн ӳтĕмĕн пурнăçĕ кăна мар. Çĕр чăмăрĕ çинче пулса иртекен ĕçсем, этемлĕх ăраскалĕ, ачаранах пĕтĕм чунăма çатăрласа тытнă коммунизм, хама çуратса çитĕнтернĕ чăвашăн чечекленсех пыракан чĕлхипе литератури, унăн искусстви, çывăхри юлташăмсен телейĕпе инкекĕ — акă вăл, тĕпрен илсессĕн, манăн шухăш-кăмăла вĕçĕмсĕр пăлхантарса тăракан вăй, манăн савăнăçпа хуйхăм-суйхăм, манăн пурнăçăм!

Çуллахи кунсене эпĕ, кăнтăрла та, çĕрле те кашни çулах пӳрт çумĕнчи пахчара ирттереттĕм (пĕлтĕр çеç, сывлăх начартарах пулнă пирки, çав ырлăха курайма-рăм). Чăвашсем вăййа епле пысăка хуни паллă ĕнтĕ. Пирĕн ялти çамрăксем те çавах: ăшăттăр та, çерем кă-на типсе çиттĕр — кайрĕ вара ытарайми вăййăмăррăн сасси Энĕш тăрăх! Вăййи те час-часах хамăр тĕлтех, манран вун-вуникĕ утăмрах пухăнатчĕ. Кĕрлетчĕ кăна мĕн ачаран юратнă тăван тавралăхăм... Сĕнтĕр енчи мĕс-кĕн тантăшăм та, пиччĕшĕн юлташĕ каланă тăрăх, çул-лахи кунсене ман евĕрех пахчара ирттернĕ пулнă-мĕн. Унăн хăлхинче те, манăнни пекех, çĕр хутах вăйă сасси янăранă пуль. Мĕнле кăмăлпа йышăннă-ши вăл çавăн пек каçсене, телейлĕ яш-кĕрĕмĕн хаваслă вăййи-куллипе юрă-ташшине, хаваслă туй-çуйне? Пĕлместĕп. Анчах темĕншĕн мана... савăнса-çунатланса мар, кĕвĕçсе-кан-сĕрленсе йышăннă пек туйăнать вăл. Маншăн вара вун-тăххăрта чухне те унашкал каçсем вĕсем, пĕр ирттер-месĕр калатăп, пĕтĕм ăшчике тыткăна илекен асамлă каçсем пулса янăратчĕç. Çамрăксен савăнăçлă вăййи-куллипе юрри-ташши манăн чĕрене пĕтĕм чăваш халă-хĕн, пĕтĕм совет халăхĕн иксĕлми хавасĕ евĕррĕн кап-ланса пырса кĕретчĕç те, эпĕ каçса кайса, темĕнле ырлăх сăпки çинче ярăннă пек реххетленсе тăнласа выртаттăм (хам кăна мар, тулли уйăх та çав картинăна тĕлĕннипе хытса кайса сăнанă пек курăнатчĕ). Çырас-сăвăлас хас-тарлăх та çавăн пек каçсенче çĕнĕ вăйпа çĕкленсе каят-чĕ («Эх, аван-çке каçĕ...», «Чăваш вăййи» сăвăсене шă-пах çавнашкал каçсенче çырнă эпĕ), çыврса каясса та тĕлĕнмелле лăпкăн та канăçлăн çыврса каяттăм... Мал-танхи пĕр-икĕ çул комсомол райкомĕнче ĕçлекен юлташ-семпе килти тăвансем темиçе хутчен те вăййа урăх çĕре, аяккарах вырăна куçарттарасси çинчен калаçма пăхрĕç: «Вырт кунта чăтса, чунна ыраттарса!» — тетчĕç. Анчах та ун пек сĕнĕве эпĕ йышăнмастăм çеç мар, вăл мана чăн-ласах тĕлĕнтеретчĕ, кӳрентеретчĕ: мĕне чăтасси çинчен, мĕнле чун ыратăвĕ çинчен калаçаççĕ — ăнланма пулта-раймастăм. Çынсен хавасĕ — манăн хавас, манăн савă-нăç; çынсен хавасне курнипе кӳлешсе-тарăхса пурăнас пулсан,— эпĕ хама этем вырăнне те картмăттăм!

Паллах, «личнăй» текен пурнăç инкеклĕ пулса тухни те этемшĕн — нимĕне тăман ĕç мар ĕнтĕ, Юрий (уйрă-мах, çамрăклăх çулĕсенче — пурнăç çуркунниÿĕ текен тапхăрта!). Анчах та çĕр çинче санăн чунна темĕн те

илĕртет пулсан, çывăх çыннусен кунçулĕ, халăхăн, пĕтĕм тĕнчен кунçулĕ хăвăн кунçулу пулса тăнă пулсан, пурнăçра эсĕ мĕнле те пулин идейăна, тĕллеве парăнмалли́пех парăннă пулсан, çав «личнăй» инкекӳн пĕлтерĕшĕ вара çав тери пĕчĕкленсе юлать, асăрханми пулать. Пурăнан пурнăçăнти интерессен анлăшĕ ун чухне, мĕнле калас, вĕçĕ-хĕррисĕр те кăн-кăваккăн йăлтăртатса тăракан тӳпе пек, хăвна çеç пырса çапăннă инкек вара — çав тӳпе тăрăх ишекен пĕчĕкçеççĕ кăна тĕксĕм пĕлĕт пек. Ăçтан-ха ĕнтĕ хупăрласа хурайтăр вăл, пĕчĕкçеççĕ пĕлĕт татки, хĕвелĕн куллине? Çут тĕнчен ытарайми илемне сӳнтерсе лартма — ăçтан пултарайтăр?!

— Э-эх, кураймарăн эс, ача, телее...— хашлатаççĕ вара хăш чухне ман умра телей мĕн иккенне питех те ансăррăн ăнкаракан, нихăçан та «мĕн вăл — пурнăç?», «мĕнле пурăнса ирттермелле ăна?» текен пысăк ыйтусем лартса аппаланман хăшпĕр çăмăлçах тантăшсем. Эпĕ пур — ăшăмра кулкаласа выртатăп, хăйсене шеллетĕп. Мĕншĕн тесен эпĕ хама-хам (ĕнен мана!) вĕсенчен темиçе хут телейлĕрех тесе шутлатăп: çакă çĕр çинчи интерессем, чун-чĕрене кăчăк туртса, илĕртсе тăракан ĕçсемпе тĕллевсем — вĕсенчен темиçе хут йышлăрах та анлăрах ман, апла пулсан, чăнласах савăнмалли е чăнласах тарăхмалли сăлтавсем те манăн — вĕсеннинчен темиçе хут йышлă, темиçе хут анлă... Пĕлесчĕ, ăнланасчĕ санăн — мĕн тери пăлханса та халланса сăнаса пурăнаттăм эпĕ (халĕ те сăнаса пурăнатăп эпĕ) Китайпа Вьетнамри тата Египетри революцисен кĕрлевне, хамăр çĕршывра çĕнĕ заводсемпе шахтăсем, çĕнĕ ГЭСсем ĕçе кĕнине, С. Я. Яковлев ертсе пыракан «Çăлтăр» пек мухтавлă колхозсем чăлтăртатса çĕкленнине, этем алли тунă спутниксем çула тухнине, чăваш ăс-хакăлĕн Аптраманĕсемпе Кĕлпукĕсем тĕнче илемĕн тӳпинелле хăпарнине тата ытти çавнашкал темтепĕре! Пĕлесчĕ, ăнланасчĕ санăн, мĕн тери пăлханса та пăшăрханса сăнаса пурăнаттăм эпĕ (халĕ те сăнаса пурăнатăп эпĕ) Корейăпа Гватемалăри тата Иранри тискер ĕçсене, хамăр çĕршыври ялхуçалăхĕнче нумай вăхăт хушши кирлĕ пек йĕрке пулманнине, тăван колхозăмри ĕçсем уксах-чăлахла кармакланнине... тата ытти çавнашкал темтепĕре! Савăнатăн та эс, тарăхатăн та — хыпса кăна çунса тăратăн: те пур унта санăн «личнăй» инкекӳ, те çук — ун çинчен шухăшлама та вăхăт тупаймастăн...

Хăшпĕр чухне çеç, вăйпитти çамрăксене ăшă кăмăл-

лă ăмсанупа ăмсанса тунсăхлăн хашлаттарса сывласа яратăн вара: «Мĕншĕн çав аслă ĕçсене эпĕ хам та тӳрремĕнех хутшăнма пултараймастăп-ши?» — тетĕн. Тата, юлашки çулсенче, вĕтĕр-шакăр чирсем вĕççĕр-хĕрсĕр çулăхнă май çырни-çырми йăваланса выртма тивнĕ пирки, чун-чĕрери ĕмĕтсен вуннăмĕш пайне те пурнăçа кĕртсе пыма вăй-хал çитерейменпирки, çав «личнăй» инкеке ирĕксĕрех аса илетĕн, ылханса-вырханса аса илетĕн... Анчах та çакă вăл пачах урăх кансĕрленӳ, пачах урăх трагеди.

Куратăп, Юрий, куратăп: çилленесшĕн эс мана, ятласшăн: «Мĕншĕн апла каламалла-ха ман пирки сăмах пынă чух? Çутă ĕмĕт тытмасăр пурăнмастăп-çке эпĕ!» — теесшĕн эс [1].

# *Пирĕн ĕç, пирĕн ĕмĕт*

(«Энĕш» журналăн 1 № валли)

Хисеплĕ вулакансем!

Эсир паян хăвăрăн ĕçпе пиçĕхнĕ аллăрсене пирĕн «Энĕшĕн» пĕрремĕш номерне тытатăр... Мĕнле ĕмĕт, мĕнле тĕллев пуçăнтарчĕ-ха пире çакă ĕçе, мĕне пула шăтса тухрĕ-ха журналăмăр?

«Хĕрлĕ Октябрь» хаçатăн редакцийĕ çумĕнче чăмăртаннă В. Волгин ячĕпе хисепленсе тăракан литература пĕрлешĕвĕ кăçалхи июль уйăхĕнче 5 çул тултарать. Пысăках вăхăт мар, юбилейне те пысăк юбилей теме çук, анчах эпир çак кунсенче литпĕрлешӳ шăтса тухнă сар хĕвеллĕ июль кунне те, çав пĕрлешĕве çунат парассишĕн нумай вăй хунă В. Андреев редактора та ăшă-ăшă кăмăлпа тав тăватпăр. В. Волгин та, хамăрăн коллектив ӳсĕмĕшĕн пĕтĕм çамрăк чунне парса пурăннăскер, пирĕн умра — яланах çутă сăнарлă. Мĕншĕн тесен литпĕрлешӳ туса йĕркелени пархатарлă ĕç пулчĕ; мĕншĕн тесен литпĕрлешӳ çакă 5 çул хушшинче пайтах çамрăка аталанса

[1] Ку çыру вĕçленмен. Ăна автор хăçан тата кам патне çырни халлĕхе паллă мар. (Пухса хатĕрлекен асăрхаттарни.)

вăй илме пулăшрĕ. 1953 çулччен райхаçатра пăч-пăч пичетленме пултаракан авторсем мĕнпурĕ те 3 çын кăна пулнă пулсан, халĕ ун евĕрлисен хисепĕ 27 çынна çитрĕ. Вĕсенчен вунна яхăн Шупашкарти пичетре те курăнма пуçларĕç.

Халĕ «Хĕрлĕ Октябрь» хаçатăмăр (хамăрăн малтанхи сăпкамăр) та пирĕншĕн тăвăртарах пулма тытăнчĕ. Шăпах çавна шута илнĕрен ĕнтĕ тата литпĕрлешĕвĕн ĕçне вăйлатнăçемĕн вăйлатса пырас ĕмĕтпе пурăннăран ĕнтĕ çуралчĕ те пирĕн çакă «Энĕш» журналăмăр.

Пирĕн ĕмĕт-туртăм — литпĕрлешĕври çамрăк авторсен ĕмĕчĕ-туртăмĕ... Вĕçĕ те çуккă унăн, хĕррийĕ те çуккă ун!

Энĕш тавралăхĕ — талантсем йышлă пулнипе мĕн ĕлĕкех паларса тăнă тавралăх. Хăйĕн ĕçĕпе тĕнчене тĕлĕнтерни аслă синолог[1] Н. Я. Бичурин — Шĕнерпуç урамĕсенче выляса ӳснĕ чăваш вăл. Тăван поэзире чи малтанхи вирлĕ сăмах каланă М. Ф. Федоров, «Арçури» авторĕ — Хурапха çынни. Кунтах, Энĕш тăрăхĕнчех, хамăрăн малтанхи писательница М. Д. Трубина çуралса ӳснĕ, хăйĕн пархатарлă пысăк ĕçне те вăл тăван Куснарĕнчех туса тăнă. Кунтах, ытарайми илемлĕ Кутемер ялĕнче, чăваш халăхĕн чаплă ывăлĕсенчен пĕри П. Н. Осипов çут тĕнчене килнĕ, хăйĕн кивелми «Айтарне» Энĕш шывĕ пек шăнкăрти чĕлхемĕрпе эрешлесе халăха пиллеме вăй илнĕ. Кунтах, Хурамал Туçа ялĕнче, тăван çырулăха аталантарассишĕн нумай вăй хунă писатель-журналист, иртнĕ вăрçăра паттăрла вилĕмпе вилнĕ И. Викторов çуралнă, революцилле кĕрешĕвĕ те унăн Хурамалтах пуçланнă. Кивĕ Тутайкассипе Чăрăш Туçара çуралса ӳснĕ Василий Çаваçпа Григорий Савкай та вăрçăчченхи тапхăрта чылаях витĕмлĕ ятсем пулнă, тен, малашне те (тепĕр хут хĕмленсе!) сахал мар паха произведенипе савăнтарма пултарĕç-ха — çыннисем ватах мар...

Çапла, Энĕш тăрăхĕ талантсем енĕпе нихăçан та чухăн пулман, вĕсене вăл пĕрин хыççăн тепĕрне çуратсах, ĕрчетсех тăнă. Анчах та ӳлĕмрен, килес вăхăтсенче, тăван литературăшăн ĕçлекен талантсен ĕрчевлĕхĕ тата вăйлăрах та тата хăватлăрах пултăрччĕ: тăван тавралăх вĕсене, кăвар чĕреллĕ чăваш ачисене, йышлăран-

[1] Китай чĕлхипе культурине тĕпчекен тени пулать. (Пухса хатĕрлекен асăрхаттарни.)

йышлă çуратса тăтăрччĕ,— акă пирĕн ĕмĕтĕмĕр, акă пирĕн тĕллевĕмĕр!

Çав ĕмĕт-тĕллев пурнăçланса пырас ĕçре — «Энĕш» журналăн пĕлтерĕшĕ уйрăмах пысăк пулмалла та ĕнтĕ. Журнал районти çамрăк авторсем çырнă сăвă-калава пухса пыракан хатĕр çеç пулса ан тăтăр, вăл çамрăксен ăсталăхĕпе тавракурăмне хăпартма пулăшакан хĕрӳ те сулмак сасăллă трибуна пулса тăтăр,— ытти тăванла халăхсемпе пĕрле коммунизм патнелле пыракан чăн чĕрĕлнĕ чăваш халăхĕн литературипе искусствине çĕклессишĕн чăнласах кĕрешекен трибуна пулса тăтăр! Поэзипе проза кăна мар пултăр журналта,— драматурги те, тишкерӳпе библиографи те сасă паччăр, сатирăпа кулăш та ахăлтаттăр, пурнăçпа тан пыракан çивĕч публицистика та хĕлхем сирпĕттĕр! Çамрăк художниксемпе фотографсем валли те сарлака вырăн тупăнтăр...

Чăваш çĕршывĕн кăкăрне лăпкаса та вăйă кĕртсе юхакан Атăл-аттемĕр — çĕршер те пиншер Энĕшсем хутшăннипе иксĕлми тулăх та иксĕлми хăватлă. «Тăван Атăлăн» пуласлăхри тулăхĕпе хăвачĕ те çавăн пекех «Энĕшсен» тулăхĕпе хăватĕнчен килĕ: çамрăк авторсен тĕрлĕ коллективĕсем мĕн чухлĕ вăйлăраххăн ĕçлĕç, пĕтĕм чăваш литератури те çавăн чухлĕ вăйлăраххăн çĕкленсе аталанĕ. Литература пуласлăхĕ — çамрăксенче!

Яланах çурхи тулăхпа хумханса йăлтăртаттăр пирĕн «Энĕшĕмĕр», яланах çурхи кĕрлевпе кĕрлетĕр... «Чăваш ачи, сассуна пар!»

1958

# *Тăван литературăн пуласлăхĕ*

(Районти çамрăк авторсен семинарĕнче вулаттарма çырни)

Хисеплĕ шкул ачисем!
Шăллăмсем!
Йăмăкăмсем!

Хăвăрăн иккĕмĕш семинарăра пухăннă ятпа пурсăра та сире хĕрӳллĕ ăшă салампа саламлатăп, семинара пы-

сăк активлăхпа ирттерме ырӑ сунатăп, çĕнĕ хастарлăх чĕртмелле пултăр сирĕн чунăрта çакă семинар!

Ăнăçлă иртет-и семинар, ăнăçсăр-и, халех калама çук ĕнтĕ. Анчах темĕн пек ăнăçлă иртес пулсассăн та, вăл сирĕн пултарулăх епле пулассине хăех татса параймĕ, пултарулăхăр епле пулассине татса параканĕ вăл — эсир хăвăрах. Этем хăй тытăннă ĕçе сахал юратать пулсан, ырми-канми ĕçлеме, ырми-канми вĕренме чăтăм çитерейместь пулсан, унран, паллах, нимĕнле консультаци те, нимĕнле семинар та поэт е писатель туса хураймĕ. Сирĕн ӳсĕм — пĕтĕмпех хăвăр аллăрта. Çакă чăнлăха сирĕн ялан асра тытни кирлĕ: çыравçă пулас ĕç — йывăртан та йывăр ĕç.

Ытларах вулăр, нумай шухăшлăр. Тăван халăхăн ытарайми чĕлхипе фольклорне тĕплĕн тишкерĕр, юратăр; чăвашăн тата вырăсăн чапа тухнă поэчĕсемпе писателĕсен произведенийĕсене хăвăрăн яланхи тусăрсем туса хурăр, вĕсенчен вĕренĕр; «Ялав», «Тăван Атăл» журналсене пĕр номер сиктермесĕр вуласа тăрăр (уйрăмах тишкерӳллĕ-критикăлла статьясене тимлĕн «шĕкĕлчĕр»). Журналсене хăвăр кăна çырăнни те çителĕксĕр, вĕсене хăвăр юлташсем ытларах çырăнччăр тесе те хытă тăрăшас пулать, мĕншĕн тесен чăваш кĕнеки-журналĕ халăх хушшине анлăн сарăлмарĕ пулсан, тăван чĕлхепе литература хăват илсех пырасса ан кĕт.

Хăшпĕр ачасем хаçат вуласа тăрасси çине урлăрах пăхаççĕ. Анчах та хаçат вăл — чи пысăк университет, чи аслă шкул. Ҫам та кам хаçата пăч-пач тыткалать, унăн пĕлĕвĕпе тавракурăмĕ нихăçан та анлă пулаймасть, унашкал пĕлӳпе тавракурăм вăл вулакансене ăс пама кăна мар, этеме хăйне пурăнма та ансăр!

Тăван литературăн пуласлăхĕ, ачасем, çуллен ӳссе пыракан ăрура, сирĕнте. Хытă шухăшлăр, Ленин хĕвелне пула ирĕке тухнă тăван халăхăн литературипе искусствине малтан малалла чечеклентерсе пырас ĕмĕтпе хĕмленсе çунатланăр! Çавă вара сире иксĕлми хăват парса тăрĕ, пултарулăхăр та, халăх калашле, ши! кайĕ, пи! кайĕ.

«Чăваш ачи, сассуна пар!» — тенĕ пире Çеçпĕл Мишши. «Ан юлăр кунçул уттинчен!» — тенĕ пире Çеçпĕл Мишши. Ҫăвар чĕреллĕ поэтăмăр йыхравне ĕмĕрех чунăрта упраса усрăр, çав кăмăл-туйăмпа хавхаланса пурăнăр!

1958

# *Умра — хĕвел...*

Юлташсем! Делегатсемпе хисеплĕ хăнасем!

Съезда пухăннă ятпа пурсăра та сире пĕтĕм таса, пĕтĕм хĕрӳ кăмăлтан саламлатăп, съезд ĕçĕнче вĕресе тăракан хастарлăх, пысăкран пысăк ăнăçлăх сунатăп!

Çак самантра сирĕн хушăра пулас килен туйăмăм çинчен калама сăмах та тупаймастăп...

Съезд... Чăваш писателĕсен пиллĕкмĕш съезчĕ... Мĕн чухлĕ пăлхану пирĕнте çакă кунсенче, мĕн чухлĕ кăварлă шухăш, кăварлă ĕмĕт: мĕнлерех шайра-çĕкленӳре иртсе кайĕ съезд, мĕн парса-парнелесе хăварĕ вăл пирĕн аталанушăн, умри кунçулăмăршăн? Мĕнлерех утăмсемпе утмалла тăвĕ вăл малашне тăван литературăмăра, çунат сарсах пыракан пĕтĕм тăван культурăмăра? Мĕн чухлĕ пăлхану, кăварлă шухăш-ĕмĕт? Мĕн чухлĕ каласа, сӳтсе явас кăмăл-туртăнăç! Анчах пурин çинчен те пĕр харăсах каласса пĕтереймĕн, çавăнпа эпĕ халĕ — хăшпĕр темиçе ыйту пирки çеç чарăнса тăрасшăн.

Нумаях та пулмасть эпĕ, юлташсем, мари халăхĕн прозине пуçарса яракансенчен пĕри пулнă М. Шкетанăн «Эренгер» ятлă романне, чăвашла пичетленнĕскере, чунтан хавхаланса вуласа тухрăм. Романăн юлашки сыпăкĕсенче ытлашширех васкаса çырни сисĕнет пулин те, вăл, пĕтĕмĕшпе илсен, хӳхĕм те паха произведени: унра — художествăлла пысăк тĕрĕслĕх, художествăлла пысăк хăват. Вулатăн-вулатăн та «Эренгера», санăн куçу умне тăванла мари халăхĕн 20-мĕш çулсенчи пурнăçĕ, унăн ял куштанĕсене тата нэпмансене хирĕç пынă хаяр кĕрешĕвĕ, кунçула социализмла çĕнетсе улăштарассишĕн пынă кĕрешĕвĕ яр-уççăн тухса тăрать. Хамăрпала мĕн авалтан кӳршĕллĕ пурăнакан, хурлăха та, телее те ялан çурмалла пайласа-уйăрса ĕмĕр ĕмĕрлекен халăха хăйне те ытларах, анлăрах ăнланма тытăнатăн; вара вăл, çакă халăх хамăрпа тус пулма юратакан халăх, хăвшăн тата та çывăхраххăн, тата та тăванраххăн туйăнса каять...

Пархатарлă ĕç тунă Чăвашгосиздат М. Шкетанăн «Эренгерне» хамăр чĕлхепе пичетлесе кăларса. Романа чăвашла куçарнă В. Рзайăн ĕçне те ырлас çеç пулать. Тӳрех каламалла, тăрăшса ĕçленĕ вăл: ăнăçлă, селĕм

куçарнă... Куçарнă произведенин пахалăхне, нимĕнрен ытларах, куçаруçăн слог теекен мелĕ епле пулни, вăл предложенисемпе пуплевсене епле йĕркелени татса парать. Шăпах çавă лайăх та ĕнтĕ В. Рзайăн: вăл куçарнă «Эренгера» вуланă чухне кĕнеке куçарнăскер иккенне мана-мана каятăн — романа тӳрех чăвашла çырнă пек, вăл оригинал пек туйăнать!

Çапах та, сăмах халĕ манăн — В. Рзайăн куçару ăсталăхĕ пирки мар. Урăххи шухăшлаттарать мана. М. Шкетанăн романĕ чăваш вулаканĕсем патне çитрĕ: питех те аван ку, М. Казаков сăввисемпе А. Волковăн «Ксенийĕпе» тата ытти мари авторĕсен темиçе произведенийĕпе паллашма пултартăмăр — питех те аван ку... К. Ивановăн «Нарспийĕ» марилле (турилле те, анатрилле те) калаçма тапратрĕ — питех те ырă ку; Н. Айзманăн «Кай, кай Ивана» комедийĕ тата темиçе чăваш авторĕн хăшпĕр произведенийĕ Йошкар-Олана пырса тухрĕç — питех те ырă ку. Çакăншăн эпир куçаракансене те, хапăлласа йышăннă куракансемпе вулакансене те пур таса кăмăлтан тавтапуç калатпăр!

Анчах... çителĕклĕ-ши кунашкал ансăркка хутшăну пирĕншĕн, туслăх юханшывĕ çумĕнче çума-çумăн пурăнакан икĕ халăхшăн? Ытла та çителĕксĕр!

Пирĕн тăванла туслă çыхăну мĕн авалтан пырать, терĕмĕр. Халĕ çав çыхăну вăйланнăçемĕн вăйланать: эпир Атăл урлă паха вăрман касма, институтсене вĕренме, заводсене ĕçлеме çӳретпĕр; марисем пирĕн пата — вĕренме, ĕçлеме, пасарсенче ăна-кăна сутма-илме çӳреççĕ. Юлашки вăхăтра, ав, пĕр-пĕрин ĕç опычĕпе паллашма тесе те анлăнах çӳреме пуçларăмăр. Çапла вара, икĕ халăхăн ĕççыннийĕсем хушшинчи çыхăну чăннипех те вăйлă. Анчах культурăлла-литературăлла çыхăнăва илес-тĕк, шеллĕхе, вăл çавă шайран нумай-нумай юлса пырать. Пĕр-пĕрин произведенийĕсене те сахал куçаратпăр (тӳрех оригиналтан куçарасси çинчен вара калаçма та именетпĕр пулас!), пĕр-пĕрин патне культура каçĕсем ирттерме те çӳременпе пĕрех, хаçат-журналта та пĕр-пĕрин ĕлĕкхипе хальхи пурнăçĕ çинчен питĕ сахал çыратпăр. Пĕр шутлатăн та, пит-куç пĕçерсе каять: эпир, пĕр ытамри кӳршĕсем, пĕр-пĕрин çĕрĕ-шывĕ çинчен, культури çинчен таçти-таçти Чили е Бразили çинчен пĕлнинчен нумай сахалтарах пĕлетпĕр!

Вăхăт мар-ши пире, марипе чăвашăн культура деятелĕсене, çакăн пирки чăнласах шухăша каймашкăн?!

Вăхăт мар-ши пире, Шупашкар кĕперне хывасса кĕтмесĕрех, Атăл урлă кĕсле кĕввипе чĕнтĕрленĕ çутă кĕпер — икĕ культура туслăхĕн кĕперĕ — хывмашкăн?!

Халăхăн литературипе искусстви, унăн пĕтĕм культури аталансах, вăйлансах пытăр тесен, юлташсем, творчество ыйтăвĕсем çинчен тăтăшрах калаçни, тăтăшрах дискуссилле сӳтсе явусем ирттерни кирлĕ. Литература, театр, музыка, живопись ĕçĕсемпе интересленекен çамрăксене консультацисемпе канаш-сĕнӳ парасси те хальхинчен вунă хут ытларах пулса пыма тивĕçлĕ. Творчествăлла союзсемпе ытти пур тĕрлĕ культура учрежденисен кулленхи пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ те яланах халăхăн куçĕ умĕнче пултăрччĕ, — кĕске информацисем урлă çеç мар, публицист вут-хĕмĕпе çырнă анлă корреспонденцисем урлă курăнса тăтăрччĕ.

Анчах та çавăн пек тума — чăвашла тухса тăракан ятарлă хаçат, культура хаçачĕ кирлĕ. Çавă çитмест те ĕнтĕ пире. Писательсемпе журналистсен, историксемпе чĕлхеçĕсен, композиторсемпе артистсен, художниксемпе архитекторсен, учительсемпе библиотекарьсен пĕрлешнĕ пĕр хаçачĕ вара пулма тивĕçех пек те...

Юлташсем! Союз правленийĕн отчечĕпе паллашма тивеймерĕ мана. Çавăнпа ун пирки нимĕнех те калаймăп... Правлени ĕçĕнче, Талвир юлташăн ĕçĕнче, кăлтăксем çук мар пулĕ, этем унсăр пулмасть, теççĕ. Анчах та унччен ертсе пырупа танлаштарсан, çак отчетлă тапхăрти ĕçсем-хĕлсем савăнтарчĕç. Тăван литературăра хальхи евĕр хуськалу пулнине эпир астумастпăр, çамрăк авторсем хальхи пек йышлăн кĕшĕлтетсе ешернине пуçласа куратпăр. «Ку вăл правленирен килнĕ япала мар», — тесе калама нимĕнле сăлтав та çук. Тăван литература сасси пĕтĕм Совет çĕрĕ тăрăх илтĕнмелле тăвассишĕн те Талвир сахал мар вăй хучĕ, тав ăна çавăншăн!

Юлташсем! Çĕр çулхи лаштра юмансен кĕрнеклĕ ушкăнĕ çитĕнсе ларнă сăртлăх хыçĕнчен Октябрьте çĕкленнĕ Çутă Хĕвел çӳлтен-çӳле хăпарать, — çĕнĕ чăваш литературипе искусствин, çĕнĕ чăваш культурин Хĕвелĕ хăпарать. Халлĕхе вăл çӳлтех мар-ха, юманлăхăн кăтрашки тăрринчен нумаях та уйрăлайман-ха, анчах унăн ылттăн пайăркисем ĕнтĕ такамăн куçне те курăнма тытăнаççĕ (юриех суккăра перекенсем пирки калаçмă-

пăр!), такамăн чунне те ачашлама тытăнаççĕ. Мĕншĕн тесен Хĕвелĕ те ăшă, ытарайми илемлĕ, вăл ярăнса ишекен тӳпи те кăн-кăвак, тап-таса. Чăн та, хушăран-хушăран тĕксĕм пĕлĕт таткисем те сиксе тухкалаççĕ-ха, Хĕвел çине çӳхешке мĕлке каркаласа хăвараççĕ-ха, анчах та çĕнĕ Хĕвелĕн ылттăн шевли вĕсене «пĕр чиксе шăтарса» илет те витĕрех вирхĕне-вирхĕне тухать, йăл-йăл выляса, ĕçлĕ халăха савăнтарса-лăпкаса кулать...

«Умра — Хĕвел», ахальтен мар çапла каласа шантарса хăварнă-тăр çав пирĕн Çеçпĕл! Умра — Хĕвел, тӳпенелле хăпаракан хĕвел... Çанна тавăрар-и апла пулсассăн, тăвансем, чунăмăрсене екки ярса ĕçлер-и: тата хытăрах, тата вăйлăрах çиçкĕнтерсе ялтăратăр Хĕвелĕмĕр — тăван искусствăмăр, тăван культурăмăр! Пĕтĕм миллион çурăллă чăваш халăхĕ мухтанса хĕпĕртемелĕх, çут тĕнчери мĕнпур ырă кăмăллă этем хисеплесе тав тумалăх çĕнтерсе ялтăратăр!

1958

# *Митта Ваçлейĕн пурнăçĕпе пултарулăхĕ*

(Аллă çул тултарнă май)

Юлташсем! Аллă çулталăк... Ытла та пĕчĕк вăхăт вăл, аллă çулталăк. Çĕр çинче чи вăрăм вăхăт пуранакан этемĕн ĕмĕрĕ те питĕ кĕске тесе пăшăрханатпăр, анчах та аллă çул çав ĕмĕрпе кăна виçсессĕн те çурри çеç. Вăйпитти вăхăт мар-и вара çав вăхăт чипер йĕркеллĕ-сывă çыншăн? Пурнас-мĕн кăкăр тулли, çутçанталăк илемĕпе киленес, хăв юратнă халăхушăн, хăв парăннă ĕçӳшĕн çанна тавăрса, пĕтĕм чуна парса ĕçлес!

Эпир халĕ ăшшăн чыслама тесе пухăннă поэтăмăр — Митта Ваçлейĕ — хăйĕн çак аллă çул юбилейĕ тĕлне те чĕр-халлĕн утса тухаймарĕ: тепĕр чаплă юрăçăмăр Илья Тукташ евĕрех, аллă çул тултарасси çур çул пек юлнă чух çĕре кĕчĕ, тарăн шухăшлă та ăмăрткайăкăнни пек

çивчĕ куçĕ ĕмĕрлĕхех хупăнчĕ, халăхшăн çеç тапса пурăннă вут-çулăмлă чĕри ĕмĕрлĕхех шăпланчĕ... Митта Васлейĕ пурнăçран уйрăлса кайни çинчен çуллахи ытарайми илемлĕ кун янăраса кайнă хыпар — пĕтĕм чăваш ĕççыннишĕн (вулакансемшĕн те, çыракансемшĕн те) чăннипех те усал хыпар, чĕресене куççулĕпе тăвăнтаракан хыпар пулчĕ. Мĕншĕн тесен, çеçке çурсаларакан чăваш поэзийĕн садĕнче вăл — ытарайми улмуççиччĕ... Анчах, çапла пулин те, паянхи çакă каçа эпир салхуллăхурлăхлă кăмăлпа пухăнмарăмăр, çакă каçа эпир чăнласах та савăнăçлă-хĕпĕртӳллĕ, çунатлă кăмăлпа пуçтарăнтăмăр, мĕншĕн тесен, шăп аллă çул каялла Пăла шывĕ тăрăхĕнче Васлей ятлă пĕчĕк чăваш çут тĕнчене килни тин çеç тымарланма тытăннă тăван литературăпа тăван культурăшăн пысăкран та пысăк пархатар пулнă!

Митта Васлейĕ (Василий Егорович Митта) 1908 çулхи мартăн 5-мĕшĕнче хамăр республикăна кĕрекен хальхи Первомайски районĕн центрĕнче, Аслă Арапуç ялĕнче, çуралнă. Миттасен килйышĕ, таврари ытти пин-пин килйышсем евĕрех, патша саманин ылханлă пусмăрне тӳссе пурăнакан чухăнран-чухăн килйыш пулнă. Ашшĕ те, амăшĕ те вулама-çырма пачах пĕлмен. Ачаранах вĕренӳшĕн касăлнă пулин те, пурнăç хĕнлĕхĕ вĕсене шкул алăкĕ витĕр кĕрсе тухма май паман, кĕнеке урлă килекен ăс-хакăлăн ырлăхне активме çул уçман. Çакăн пек нушаллă килйышра ӳссе çитĕнни, ачаллах ĕçе кӳлĕнни, тарпа тăварланнă ыраш çăкрин тути-масине хăй ĕнсипе тӳссе курни пулас поэта ĕççыннин чунне-чĕрине çамрăклах тарăннăн ăнланса илме пулăшнă, халăхăн паянхи тата ыранхи кунçулĕ пирки шухăша кайма хистенĕ, хăйĕн пурнăçне ĕçхалăх ырлăхĕшĕн ирĕке тухнă тăван çырулăхшăн парас кăмăл-туртăм çуратнă. Ку енĕпе аталанмашкăн, тата, ăна çакă та пысăк май панă: 12—13 çулхи Васлей çумĕнче Илле ятлă аслă пиччĕшĕ пулнă. Вăл, 1918 çултанпах большевиксен ретĕнче тăраканскер, граждан вăрçин активлă участникĕ пулнă, кайран та хăйĕн пурнăçне тăван Совет çĕрĕшĕнех панă — Тăван çĕршывăн аслă вăрçинче, Отечественнăй вăрçăра, вилнĕ. Шăпах çав коммунистăн вăйăмне туйса ӳснĕ те ĕнтĕ çамрăк Митта.

Вунтăватă çула çитсен, 1922 çулта, пулас поэт комсомола кĕнĕ, пĕтĕм çамрăк чун-хавалĕпе çамрăксен союзĕн ĕçĕнче хĕмленме тытăннă. Литературăна мĕн ачаран юратнă, пуçламăш шкулта вĕреннĕ чухнех Пушкинпа

Гоголь кӗнекисене каҫса кайса вулană, уйрăмах килĕштерен сăвăсене пăхмасăр калама вĕреннĕ. Тăван поэзин ытарайми илемлĕ те вилĕмсĕр произведенийĕсемпе («Арçурипе», «Нарспипе») паллашнă хыççăн вара Васçилей пуçĕнче хăйĕн вăйне виçсе пăхма хĕтĕртсе тăракан çунатлă шухăш тапранать: «Ун пек кĕнекесене çынсемех çыраççĕ иккен, чăвашсен хăйсен те унашкал сăвăçсем пур иккен,— шухăшлать яш ача,— тен, эпĕ те, вĕренсен-вĕренсен, çырма пултарăп?..» Вунултă çул тултарсан вăл Ульяновск хулинчи Чăвашпедтехникумне вĕренме ăсанать, анчах пушă алăпа мар: çумĕнче ĕнтĕ унăн — хăй çырнă сăвăсен чылаях хулăн тетрачĕ.

Хăй вăл, çав тапхăрти поэтсенчен, ытларах Александр Безымянскипе Александр Жаров сăввисене кăмăллană, çырасса та вĕсене майлăрах çырма тăрăшнă, пăртакран — Владимир Маяковские хапăллама тытăннă. Сергей Есенин сăввисене те вăл чунтанах юратнă... Педтехникум пĕтернĕ хыççăн, Митта темиçе çул хушши ачасене вĕрентет, унтан Патăръел районĕнчи «Октябрь ялавĕ» хаçатăн ответлă секретарĕнче ĕçлеме тытăнать. Çав вăхăтрах Шупашкарта тухакан «Сунтал», «Хатĕр пул», «Ĕçхĕрарăмĕ» журналсенче, «Трактор» альманахра, хаçатсенче хăйĕн çĕнĕрен-çĕнĕ сăввисемпе поэмисене пичетлесе тăрать. Ывăна пĕлмесĕр вĕресе тăракан çамрăк чун-чĕреллĕ поэт (халăх хушшинчи обществăлла ĕçе яланах питĕ активлăн хутшăнса пурăннăскер) хамăрăн аслă партипе мухтавлă комсомол çинчен, социализмла чăваш ялĕсем епле улшăнса, çĕнелсе пыни çинчен, пĕрлешӳллĕ ĕçре чăн ырлăх çулĕ çине тухакан ĕç хресченĕсем çинчен, тăван чăваш культури ӳссех, чечекленсех пыни çинчен илемлĕ те сулмаклă произведенисем, чуна килентерекен лирикăлла сăвăсем шăрать.

Пĕтĕм вулакан куçĕ умĕнчех ӳссе-хăватланса пыракан сăвăç кĕçех Шупашкара куçать. Чăваш радиовещанийĕн ĕçне пуçарса яракансенчен пĕри пулать, вăхăтне те, вăйне те шеллемесĕр, çĕнĕрен те çĕнĕ произведени çырать, вырăсларан та нумай куçарать. Ĕçленĕ хушăрах Мускаври Максим Горький ячĕпе тăракан литература институтĕнче хăй тĕллĕн (заочно) вĕренме пуçăнать, тăван çырулăхшăн май килнĕ таран ытларах туса хăварассишĕн касăлакан çунатлă чун малалла та малалла ăнтăлать.

1937 çул тĕлне поэтăн «Кăмăл» ятлă сăвăсен сбор-

нике, «Хавасла ӗҫ» ятлă очерксен сборникӗ, ӳсрăсларан куҫарнă поэмăсемпе прозăлла произведенисем (А. С. Пушкинăн «Борис Годуновӗ», М. Горькин «Фома Гордеевӗ», Н. Островскин «Тăвăлпа ҫуралнисем») пичетлене-пичетлене тухаҫҫӗ. Поэтăн вунҫичӗ ҫулталăка яхăнах ҫуралса ӳснӗ ҫӗршывӗнчен татăлса пурăнма тивет. Ҫапах та поэт хăйӗн ҫутă ӗмӗчӗсене сапаласа ҫилпе вӗҫтерсе ямасть, чун-чӗрине тарăхупа лӳшкентермест, вӗтетсе пӗтермест. Тӗлӗнмелле ăшă кăмăлӗ те ун малтанхиллех упранать; вилӗмсӗр Ленинăн вилӗмсӗр ӗҫне парăнса пурăнасси те, тăван литература ҫӗкленӗвӗшӗн каҫăхса кайса ҫунасси те — малтанхи евӗрех чӗрӗ те сывă; тӗрӗслӗх ҫӗнтерессе вăл тем пек йывăр самантсенче те иксӗлми шанăҫпа шанать. Алла тытар-ха, акă, поэтăн «Кăмăлтан» кӗнекине, «Тайăр» поэмăран» ятлă ярăм тӗлне уҫар та, «Икӗ ҫыру» тенӗ сăвва шыраса тупар:

Эп таврăнăп йăвашшăн та хаяррăн,
Ҫӗршыв туй-ҫу тапратнă чух.
Хавхалануллă такмаксем хайларăм,
Туй намăсне ярассăм ҫук.

Ҫапла, кӗрӳ килессине ан манăр,
Е ҫур ҫӗрпе, е кăнтăрла...
Салам сире!
Аякри тăванăр
Вăй-кил кӳртме таврăнмалла!..

Ҫак йӗркесене поэт сивӗ кăмăлпа ҫырса хуман. Вӗсенче Тайăр Тимкки чунӗ кăна мар, вӗсенчех Митта поэтăн хăйӗн чунӗ те, унăн ялан чӗрере упраннă шанчăкӗ те!

Митта сасси ҫӗнӗ хăватпа янăрама тапратрӗ. Сывлăхӗ хавшаккине пăхмасăр, вăхăтне те, вăйне те шеллемесӗр, поэт «Тăван Атăлăн» ответлă секретарӗнче ӗҫлеме тытăнать (халиччен 4—5 уйăх кая юлса тухнă альманаха вăхăтра тухмалла тăвассишӗн пысăк вăй хурать), «Кăмăлтан» ятлă кӗнекине хатӗрлесе кăларать, ҫӗнӗ сăвăсемпе статьясем ҫырать, Лев Толстойăн «Вăрҫăпа мир» романне куҫарассипе ӗҫлет, ҫамрăк авторсене пулăшать.

Қанăҫ тени мӗн иккенне пӗлме те шутламан кăвар чӗреллӗ этем, вăл пысăкран та пысăк ӗмӗтсемпе ҫунатланса пурăнасшăнччӗ, каҫса кайса ӗҫлесшӗнччӗ. Анчах

та чĕри... чĕри ĕнтĕ хавшасах çитнĕ пулнă-мĕн, çунатлă ĕмĕтсене пурнăçа кĕртме чĕрин нимĕнле вăй та юлманмĕн. Иртнĕ çулхи июнĕн 10-мĕшĕнче чаплă поэт, тăван чĕлхемĕрĕн асамлă ăсти — çутă тĕнчерен яланлăхах уйрăлса кайрĕ...

Ана хăй çуралса ӳснĕ ялта пытарнă.

Митта Ваçлейĕ литература ĕçĕпе нумай вăхăтах ĕçлеймерĕ, çырав ĕçне вунпилĕк çултан ытла параймарĕ. Апла пулин те, тăван çырулăхшăн, пĕтĕм чăваш халăхĕшĕн, унăн пуласлăхри кунçулĕшĕн вăл калама та çук нумай туса хăварчĕ. Унăн йышлă сăввисемпе поэмисем, «Хаваслă ĕç» ятлă кĕнекери очерксем, критикăлла статйисем çамрăк чăваш литературин ылттăн фондне ĕмĕрлĕхех кĕрсе юлчĕç. Поэт вырăсларан тата ытти чĕлхесенчен куçарнă произведенисене илес пулсассăн, вĕсем пĕтĕм куçараканшăн ырă тĕслĕх. Мĕне тăрать, сăмахран, 1930 çулта çĕнелсе пыракан чĕрĕ пурнăçăн çулĕпе утнă чух колхозсем туни çинчен çырнă «Хулăм сас» поэма, мĕне тăраççĕ юлашки çулсенче çырнă «Тайăр» поэмăн сыпăкĕсем е тата пĕчĕкçеççĕ «Атăл юрри»! Мĕнлерех янăрать чăвашла (оригиналтан юлмасăр янăрать!) Пушкин çырнă «Пĕлӳçĕ Олег çинчен хывнă юрă», мĕнлерех янăраççĕ Муса Джалильпе Сайфи Кудаш сăввисем!

Анчах та Митта Ваçлейĕ пирĕншĕн хут çине юлнă асамлă хăвачĕпе кăна мар хаклă. Вăл пирĕншĕн хăйĕн чăн-чăнах этемле сăнарĕпе, хăйне кулленхи пурнăçра, çемьере тата юлташсем хушшинче епле тыткаланипе те чунтанах хаклă. Ахальтен мар ĕнтĕ, поэт вилнĕ хыççăн пичетленнĕ некрологра, писательсен Союзĕн правленийĕ çакăн пек сăмахсем каланăччĕ: «Эпир, хамăрăн хаклă юлташăмăра çывăх пĕлекенсем, унăн çутă сăнне, пысăк ăсталăхне, таса чĕрине, ăша́ чунне, пирĕнпе яланах чи çывăх тус пулнине нихçан та манмастпăр. Пĕтĕм халăх юратса вулакан «Атăл» поэминче:

> Атăл, Атăл, çĕршывăн илемĕ,
> Хумлăн-хумлăн сикет умăмра.
> Камăн чунĕ пăхсассăн киленмĕ,
> Кам çӳçенмĕ çак аслă вăйран!

тенĕ пекех, поэт та пирĕн умра яланах илемлĕччĕ, чуна килентермелле калаçатчĕ, литературăшăн хыпса-çунса тăратчĕ...»

Çак сăмахсем айне паллă писательсем хăйсем кăна мар, унпа паллашса курма тӳр килнĕ кирек хăш çын та пĕр турткаланмасăрах ал пусма пултарĕ...

«Килентермелле калаçатчĕ, литературăшăн хыпсаçунса тăратчĕ...» Килентермелле çеç-и, тĕлĕнтермелле калаçатчĕ, унăн пуян та çăл шывĕ пек шăнкăр-шăнкăр чĕлхи каçăхтарса яратчĕ! Вунçичĕ çул хушши Чăвашра пулман хыççăн чăвашла çавăн пек чĕлхепе калаçма — тăван чĕлхепе тăван çырулăх çинчен татти-сыпписĕр шухăшласа пуръăннă пысăк патриот çеç вăй çитерне!..

Манăн умăмра çак самант Стихван Шавли çырнă «Юлташа асăнса» статьян алçырăвĕ. Статйи халлĕхе пичетленсе тухма ĕлкĕреймен-ха, автор ăна юлташла вуласа пăхма çеç ярса панăччĕ. Апла пулин те, çав статьян уйрăм сыпăкĕсене эпĕ паянах цитата вырăнне илесшĕн, мĕншĕн тесен Шавли вĕсене Митта пирки питех те витĕмлĕ каланă. Акă: «Митта Ваçлейĕ литературăна килчĕ те... сасартăках кайрĕ те. Пурнăç алăкне вăл хăй хыççăн лăпкăн-лăпкăн хупрĕ, шартлаттарса хупмарĕ. Тикĕс пулмарĕ унăн шăпи, ыттисем пек пĕр тикĕс çырса пурăнма май килмерĕ ăна...

Митта хăйне уйрăм поэт, ыттисемпе (хăш-пĕринпе!) арпаштарма хĕн ăна, унăн хăйĕн сасси пур — хăюллă сасă. Митта штампран-схемăран ирĕк, куршанак пек çыпçăнмасть вăл ун çумне... Митта оригиналлă поэт, хăй евĕрлĕ поэт... Чун-чĕрене çĕклентерсе яракан, пĕçертсе илсе шухăша хускатакан, çав хушăрах «хулăн саспа» малалла чĕнекен, малалла йыхăракан чăн-чăн поэтла сасă хамăр поэзире хам ĕмĕрте эп иккĕмĕш хут кăна илтетĕп пулмалла-ха. Малтан илтнĕ сасă, пирвайхи хут çунатлантарнă сасă — Çеçпĕл Мишшин сассиччĕ... Вăл тăван чĕлхен хăвачĕпе мухтавне питĕ хытă ĕненетчĕ. Темĕнле çеçпĕлле вăйпа, фанатизм таран ĕненетчĕ. Чĕлхе тасалăхĕ уншăн темрен те малтаччĕ. Çапла, земляк сăмах вырăнне янташ сăмах, Отечественнăй Аслă вăрçă термин вырăнне Тăван çĕршывăн аслă вăрçи ятлă термин кĕртме сĕннĕччĕ. Çав сăмахсем халь пурнăçа кĕрсе пыраççĕ. Тепĕр чухне вăл пĕкке ытлашширех те аватчĕ пулĕ те, анчах унăн туртăмĕ, унăн кăмăлĕ тĕрĕс пулнă, вăхăтлă пулнă. Вăл тăван поэзие пĕтĕм чунчĕрепе юрататчĕ, лайăх сăвă-поэмăшăн чăннипех савăнма, япăх япалашăн хурланма-тарăхма пĕлетчĕ. Чăн-чăн поэзие вăл хăй поэт пулнăран кăна мар, пысăк чунлă, тарăн чунлă çын пулнăран питĕ хытă юрататчĕ.

Ирĕкри пурнăçшăн нумай тунсăхланăскер, вăл пурнăçпа çынсем çине çав тери савăнса, ача пек хĕпĕртесе, таса куçпа тинкерсе пăхатчĕ. Журнал редакцине аннă чух е киле таврăннă чух вăл Шупашкарăн тĕп урамĕпе хула пуçлăхĕ пек, хула мэрĕ пек утса пыратчĕ. Кашни çĕнĕ çурт, асфальт витĕнекен урамăн кашни пусăмĕ унăн чĕринче праçник туйăмĕ çурататчĕç. Çуртсене илемлетнĕ çĕрте чăваш орнаменчĕ — тĕрри çуккишĕн, учрежденисемпе магазинсен ячĕсене вырăслипе юнашарах тăван чĕлхепе çырманшăн, чăвашла лозунгсемпе плакатсем сахаллишĕн вара Митта Ваçлейĕ чăннипех пăшăрханатчĕ, чăвашсен тĕп хулинче ун чăвашлăха ытларах курас килетчĕ...» — çапла аса илсе çырать Стихван Шавли.

Çеçпĕл теетпĕр, Çеçпĕл Мишши теетпĕр. Çав кăвар чĕреллĕ поэт-большевик çинчен шухăша кайсассăн-тусассăн, умма ирĕксĕрех Митта Ваçлейĕн çутă сăнарĕ тухса тăрать. Вăл та хĕвеллĕ пуласлăхшăн Çеçпĕл Мишши пекех çунса пурăнатчĕ, вăл та хамăра çуратнă халăха Çеçпĕл Мишши пекех ывăлла туйăмпа юрататчĕ...

Виличчен пăртак çеç маларах, хăйĕн мĕн пурĕ те тăватă йĕркерен анчах тăракан сăввинче, Митта çакăн пек шухăша кайса çырнăччĕ:

Ан тив, хисеп те чыс та ан курам,
Пин юррăмран пĕри кăна упрантăр.
Ăна тăван ыр кăмăлпа юрлатăр,
Вара ман канлĕ пулĕччĕ тăпрам.

Çăмăл пултăр санăн тăпру, канлă пултăр ыйăху, Василий Егорович! Пин юррунтан пĕрине кăна мар, çĕршер юрруна савса та хисеп туса юрлĕç миллионлă тăванусем, аслă Ленинăн çутă вĕрентĕвĕ тĕппипех çĕнтерессишĕн, тăван чăваш литературипе культури тата вăйлăнрах чечекленессишĕн эсĕ чĕннĕ пек, эсĕ йыхравланă пек кĕрешĕç! Тăван литературăра Митта хывнă тӳрĕ те сарлака сукмак, курăк айне пулса, куçран çухалмĕ, такăрланнăçемĕн такăрлансах пырĕ!

1958.

## ТУПМАЛЛИ

«Эп халӑхшӑн хал пухрӑм...» *Умсӑмах* . . 5

### Сӑвӑсемпе юрӑсем

**Тӗнче илемӗ**
«Шӑпчӑксем! Шӑпчӑксем!.. Ҫсхи лӑпкӑ садра...» . . . . . . . 18
Тӑван чӗлхене . . . . . . —
Ҫсхи концерт . . . . . . 20
Ҫурхи вӑйӑ, ҫурхи сӑн, кӗрхи тулӑх . —
Чӑваш вӑййи . . . . . . . 21
Палламан вулакана . . . . . 23
Пӗрле ӳснӗ тантӑшӑма . . . . 24
Композитор-тусӑма . . . . . 26
«Тӳпере яланах хӗвел мар-тӑр...» . . 27
**«Энӗш енчисем» поэмӑран**
Уйӑх хӑпарсан . . . . . . 28
Эх, аван-ҫке каҫӗ!.. . . . . . 30
Жнейка хыҫҫӑн . . . . . . 31
Пӗрремӗш рейс . . . . . . 32
Тӑри юрлать... . . . . . . 33
Вырмара . . . . . . . . 34
Сывпуллашу курки . . . . . 35
Евгень дневникӗнчен . . . . . 37
**Ӑсатман ҫырусем**
Ман аллӑмра чие ҫырли... . . . . 40
«Хавхалантар мана, тӑван! Хавхалантар...» . . . . . . . . . 41
Чечексем . . . . . . . . 42
Сыв пултӑр харсӑрлӑх! . . . . 43
Чун ялан ҫуралнӑ ҫӗршывра ман . 44
Ҫавар чӗре . . . . . . . —
Ҫӗрӗпех, таттисӗр... . . . . . 46
Пӗлесчӗ сан! . . . . . . . 48
**Ӗмӗтӗмсем, ӗмӗтӗмсем**
Ҫулпуҫӑмӑра . . . . . . . 49
Ӗмӗтӗмсем, ӗмӗтӗмсем... . . . . 50
Экспромт . . . . . . . . 51
Поэзири тантӑшӑма . . . . . 52
Б. Ҫ. Бабич профессора . . . . —
Тавсси, Украина! . . . . . . 53
Энӗш хӗрринче . . . . . . 54
«Шанманнисем, ан тив, ан шанччӑр...» 55
Ҫомсомола . . . . . . . . 56
Николай Островские . . . . . 57
Чӑваш университечӗ . . . . . —
Соната . . . . . . . . . 58

### Статьясем, ҫырусем

Хыт утӑмлӑ пулар! . . . . . 60
Ҫӗрешӳсӗр пурнӑҫа эпӗ ӑнланма та пултараймастӑп . . . . . . 62

Аша çумăр хыççăнхи хунавсем . . 65
Тăван литературăна халăх хушшине сарасси . . . . . . . . 68
Аякри çурçĕрте... . . . . . . 78
«Мускав çулĕ» . . . . . . 80
«Тăван Атăл» альманахăн çĕнĕ номерĕ 83
Пурнăç хуçи — эпир хамăр . . . 86
Хурçă çунатлă пулăр . . . . . 88
Чăваш çырулăхĕн çуначĕ çирĕпленсех пытăр . . . . . . . . . 91
Эпир — аптрамансем... . . . . . 94
Ырă çул пултăр, ачасем! . . . . 101
Пурнăçăн тупсăмĕ... . . . . . 103
Пирĕн ĕç, пирĕн ĕмĕт . . . . . 110
Тăван литературăн пуласлăхĕ . . 112
Умра — хĕвел... . . . . . . 114
Митта Ваçлейĕн пурнăçĕпе пултарулăхĕ . . . . . . . . . 117

Для старшего школьного возраста

*АЛЬБЕРТ ГЕОРГИЕВИЧ ҪАНАШ*

СОЛОВЬИ, СЛУШАЯ ВАС...

(Думы и мечты)

Избранные произведения

На чувашском языке

Зав. редакцией *В. О. Максимов*

Редактор *А. Я. Еруcланов*
Художник *В. А. Смирнов*
Художественный редактор *А. А. Афиногенов*
Технический редактор *В. П. Окина*
Ҫорректор *Л. А. Иванова*

Сдано в набор 28/VI-1977 г. Подписано к печати 20/III-1978 г. НТ 17033. Формат 84×108/32. Бумага типографская 2. Физ. печ. л. 4,0. Усл. печ. л. 6,72. Учетно-изд. л. 6,12. Заказ № 3340. Тираж 2000 экз. Цена 20 коп.

Чувашское книжное издательство,
Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Управления по делам издательств, полиграфии, книжной торговли Совета Министров Чувашской АССР.
Чебоксары, Ҫанашское шоссе, 13.

**Канаш А. Г.**

Шăпчăксем, эп сире ятлесе... Суйласа илнисем. Чăвашиздат, Ш., 1978 ç.

128 стр.

Ку кĕнекене поэтăн, сăввисемсĕр пуçне, прозăпа çырнă япалисем те кĕнĕ. Уйрăммăнах унăн статйисемпе çырăвĕсем интереслĕ. Çакă кĕнекене çĕнĕ пахалăх парать.

**ЧĂВАШИЗДАТ ЮЛАШКИ ВĂХĂТРА ÇАК КĚНЕКЕСЕНЕ ПИЧЕТЛЕСЕ КĂЛАРЧĚ:**

**В. Эйтип.** «Туслăх кăшăлĕ». Хакĕ 15 пус.

**С. Аслан.** «Ешĕл хунав пурнăçăм». Хакĕ 54 пус.

**В. Игнатьев.** «Кăнтăр çеçпĕлĕ». Хакĕ 77 пус.

**Коллектив.** «Кăйкăр». Хакĕ 56 пус.

**А. Артемьев.** «Çăкăр хакĕ». Хакĕ 85 пус.

**В. Давыдов-Анатри.** «Шурăмпуç хăпарсан». Хакĕ 1 т. 40 пус.

**П. Хусанкай.** «Пин-пин чĕре». Хакĕ 1 т. 38 пус.

**П. Осипов.** «Пиччĕшĕпе шăллĕ». Хакĕ 1 т. 60 пус.

**А. Емельянов.** «Шыв типнĕ çул». Хакĕ 1 т. 30 пус.

**В. Паймен.** «Тантăшăмсем». Хакĕ 1 т. 20 пус.

**С. Шуртаков.** «Çаврăннă юрату». Хакĕ 45 пус.

**Х. Агивер.** «Юрату сăмсахĕ». Хакĕ 25 пус.

20 коп.

51934